*Кибеч*

# НАМĂС ÇУРЧĔ

## Повесть

Таланов Владимир диплом ĕçне компьютерпа пичетлесе пĕтернĕ хыççăн йăнăшсем çук-ши тесе тепĕр хут пăхса тухрĕ те аллисене çӳлелле çĕклесе карăнса илчĕ. Çакна çырас тесе ăçта кăна çитмен пуль, кампа кăна калаçса пăхман пуль. Çулне вара çамрăк тĕпчевçе Чечеков доцент кăтартса пычĕ. Темине те çавă сĕннипех суйласа илнĕччĕ ĕнтĕ: «Ф. С. Морсков – чăвашсен паллă купци». Тӳрех каламалла, çак проблемăпа çырнă пĕрремĕш ĕç. Унччен кун пек тема пирки сăмах та уçма юраман. Партбюро та сыхласах тăнă. Енчен те хыпар обкома çитсен, чăт вара. Юрать-ха, самани кăштах улшăнчĕ. Кирлĕ тема суйласа ил те ĕçле.

Ирĕклĕх тапхăрĕ тетпĕр те-ха, анчах пур çĕрте те пĕр пек мар çав. Библиотекăсенчи кĕнекесем пирки нимле чăрмав та сисĕнмерĕ. Пăхса тухас тенисене пурне те тупса пачĕç. Архивра вара аплах мар.

Чăнах та, 1917 çулччenхи хутсенче Филимон Семенович Морсков ячĕ чылай çĕрте тĕл пулать. Йĕркеллĕ те тирпейлĕ çынах иккен Морсков купца, веçех çырса пынă – ăçтан мĕнле тавар илнине те, çурт лартнă чух мĕнле тăкак тӳснине те, çулталăк хушшинче мĕнле тупăш илнине те, хула хыснине мĕн чухлĕ налук тӳленине те... Кунтах акă хулари паллă çынсен ячĕсене çырнă хут. Ф. С. Морсков та пур. Мĕнле ĕçпе паллă купцасен ретне кĕме пултарнă-ха çакă чăннипех те пултаруллă çын? Чăвашсем туса илекен таварпах тесен те юрать. Вăл халăхран хăмла, урпа тата çăмарта пухса ытти хуласене ăсатнă, Петербург таранах. Шупашкарта икĕ çурт тытнă: пĕри урпапа хăмла упрамалли, тепринче хăйсем пурăннă, аялти хутра апатçимĕç лавкки тытнă. Сăра сутакан уйрăм та пулнă. Ĕçсем йĕркеллех пынă. Пăтăрмахĕ вара 1917 çултан пуçланса кайнă. Çакна лайăххрах пĕлес тесе Таланов кунти ВЧК фондне пăхас терĕ. Анчах унти ĕçсене памарĕç. Парти обкомĕн архивĕнче те çаплах, ниме тăман хутсене кăна илсе тухса пачĕç. Чи кирлисене ыйтсан «юрамасть» терĕç. Мĕнле-ха капла? Мĕншĕн пытарса усрамалла-ха вĕсене? Мĕншĕн-ха тĕпчевçĕсене чăн сăмах калама чăрмантармалла? Ыйту хыççăн ыйту сике-сике тухать. Юрать-ха çамрăк тĕпчевçĕ çумĕнче наука ертӳçи пур.

Пĕртен-пĕр парти пуç пулса тăнă режим арканнă хыççăн коммунистсем питĕ хăраса ӳкнĕ иккен. Хăйсене суд тăвас

хӑрушлӑх пуррине сиссе ӗнтӗ. Ҫавӑнпа та архиври хутсем вӗсемшӗн чи хӑрушӑ компромат шутланнӑ. Апла-тӑк, архив ӗҫне хӑйсен аллине илмелле. Ҫӑнах та, архивра унччен парти обкомне ертсе пынӑ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ иккен. Мӗнле документсене кӑтартма юранипе юраманнине ҫавсем татса параҫҫӗ.

Ҫапах та Таланов парӑнма шутламарӗ, урӑхларах ҫул ҫине ӳкрӗ, кӗнеке палатине кайса тахҫанхи хаҫатсене пӑхса тухрӗ. Халӑх тӑшманӗ тесе купцасен пурлӑхне туртса илни ҫинчен савӑнса ҫырнисем чылай тупӑнчӗҫ. Ф. С. Морсков пирки ҫырни те пур. Ун кил-ҫурчӗпе лавкки хула совечӗ аллине 1919 ҫулхи кӗркунне куҫнӑ иккен. Морсковсем ҫинчен урӑх пӗлтерни ҫук. Вара Таланов Шупашкарта ҫуралса ӳснӗ ватӑ ҫынсене шырама пуҫларӗ. Йӑнӑшмарӗ, «Морсков лавкки» тенине илтнисем те пур, анчах Филимон Семенович хулана хӑш ялтан килнине пӗлекен тупӑнмарӗ. Юрать-ха, пӗр ватӑ вырӑс хӗрарӑмӗ Морсковсен вуник-вунвиҫ ҫулалла ҫитнӗ Варя ятлӑ хӗрачапа пӗчӗк арҫын ача пурччӗ тесе пӗлтерчӗ. Мӗн тумалла-ха? Чим-ха, ача ҫурални ҫинчен ҫырнӑ хутсене шырамалла мар-и? Анчах ӑҫта? Чиркӳре? Ҫук, малтан ЗАГСа кайса пӑхмалла пуль. Тепӗр кунах ҫавӑнта вӗҫтерчӗ. Ҫӑнах та, чиркӳре ҫырса пынисем аванах упранса юлнӑ, вулама та меллӗ, почерк та хитре. Шырама вара ҫӑмӑл пулмарӗ, Морсков хӗрӗ хӑш ҫулта ҫуралнине пӗлменни чӑрмав кӳчӗ. Ку ҫеҫ те мар-ха, Шупашкар чиркӳсемпе пуян пулнӑ иккен, вуннӑран та ытла. Хули пысӑках та мар, пилӗк пин ҫынран кӑна. Мӗншӗн ҫавӑн чухлӗ чиркӳ кирлӗ-ши вара?

Ҫамрӑк ӑрӑвӑн пӗлменни нумай ҫав. Ӗлӗкхи виҫепе пӑхсан чиркӳ нумайӑшӗ хула пуяннине кӑтартнӑ. Ма тесен кашни вӑйлӑ ҫемье, ратне уйрӑм чиркӗве ҫӳреме юратнӑ, ӑна тытса тӑма укҫи-тенкине хӗрхенмен.

ЗАГСри сарӑхса кайнӑ хулӑн кӗнекесенче виҫӗ кун шыранӑ хыҫҫӑн Морскова Варвара ячӗ тупӑнчӗ. Вӑл ҫурални тата ӑна шыва кӗртни ҫинчен Благовещени чиркӗвӗнче ҫырса хунӑ. Ашшӗ ӑҫта ҫурални те паллӑ. Ҫакна ҫамрӑк тӗпчевҫӗшӗн самай ӑнӑҫлӑ ӗҫ тесен те юрать. Шырав пӑчланса лармарӗ, хӗпӗртеме те сӑлтав пур. Питӗ тимлӗ пӑхнипе ывӑннӑ куҫра ҫакӑнти сӑмахсем ӑҫта якатса илемлетнӗ алмаз пекех ҫиҫсе илчӗҫ.

Чечековпа канашласа пӑхнӑ хыҫҫӑн Таланов пулас купца ҫуралса ӳснӗ яла вӗҫтерчӗ. Ҫитсенех, те автобус чарӑнӑвӗнчен инҫе мартан, тӳрех тӑхӑр ҫул вӗренмелли шкула кӗчӗ. Ҫурчӗ аптрамасть, кирпӗчрен тунӑскерех. Директорӗ ҫук,

районти канашлура тет. Юрать-ха завуч вырăнтах. Анчах Морсковсем пирки нимех те калаймарĕ, вăл хăй ку ялсем мар иккен. «Чим-ха, пирĕн кунта музей пур. Ăна тытса пыракан учитель ку ялсемех», – терĕ те коридора тухрĕ.

Шкул вăл кашнинщĕнех ĕмĕрлĕхе асра юлакан вырăн, ачалăх сăпки. Çав çулсене ниепле те манма çук, пурте куç умĕнче: учительсем те, пĕр класра вĕренсе ӳснĕ ачасем те, тăхтав вăхăтĕнче вылянисем те, кăштах айăпа кĕрсен учительскине чĕнсе кĕртнисем те... Пĕррехинче Таланов та çакланнăччĕ виççĕмĕш класра чухне. Пысăк тăхтава тухнăччĕ кăна шкул алăкĕ умĕнче Кампур лара парать, ирхине ăсатса янă хыççăн киле кайман та пулас. Хăй тусне курсанах хĕпĕртенипе хӳрине вылятса илчĕ те сиккелеме тытăнчĕ, вылясшăн ĕнтĕ. Патак таткине айккинелле вăркăнтарсан чупса каять те çăварне хыпса илсе килсе парать. Çапла Улатимĕрпе икĕ юлташĕ патака пере-пере шкул пахчи патне çитнине асăрхаман та. Ак тамаша, Кампур сасартăк пахчаналла вĕрсе чупрĕ, çав самантрах уялла мулкач тапса сикрĕ. Йытă хыççăн ачасем те – çавăнталлах, тарăн юра ишсех. Çапла чылайччен чупса çӳрерĕç, Кампур мулкача тытаймарĕ. Çаврăнса çитнĕ тĕле юлашки урок та пуçланнă. Класс алăкĕ патне пырса тăнăччĕ кăна, юрлă-пăрлă ачасене завуч асăрхарĕ, тен, кĕтсех тăнă. Урок вĕçленичченех учительскинче пуçа чиксе тăма тиврĕ...

Каярах вара ытти ачасем кусене «сунарçăсем» тесе чĕнме тытăнчĕç. Сăмаххи усалскер мар пулсан та тарăхтаратчĕ. «Мулкач хӳрине кăтартрĕ-и?» – тесен пушшех.

Акă леш хĕрарăм килчĕ те Таланова пĕрле кайма ыйтрĕ.

Музей валли уйрăм пӳлĕм панă. Ĕлĕкхи савăт-сапа, кĕпе-тумтир, ĕç хатĕрĕсем, ялти паллă çынсен сăнӳкерчĕкĕсем... Таланов тимлĕнрех сăнаса пăхрĕ. Кама кăна аса илмен пуль – кунти совет влаçне çирĕплетекенсем, малтанхи колхоз председателĕсем, вăрçăра пуçне хунисемпе халĕ те пурăнакан ветерансем, наукăра, ӳнер ĕçĕнче палăрнă çынсем, спортсменсем... Морсков хушаматли вара пĕр çын та çук.

– Морсков тенине илтнĕччĕ-ха. Анчах тăванĕсем пирки уçăмлăн калама пултараймастăп, – терĕ учитель. – Халăх тăшманĕ тесе ялтан кăларса янă тенине те илтнĕччĕ. Çакă вăл тахçанах пулнă ĕнтĕ.

– Ялти чи ватă çынпа калаçса пăхма май çук-ши? Тен, шурсухалсем пĕлеççĕ.

– Шурсухалсем... Арçынсем нумай пурăнаймаççĕ çав. Чи ваттисем кунта пурте тенĕ пекех хĕрарăмсем.

– Хĕрарăм мĕнрен япăх тата. Чи ваттипе калаçса пăхасчĕ...

– Юрать эппин, кайрăмăр, – сĕнчĕ учитель. – Арăмăн кукамăшĕ патне кĕрсе пăхар-ха. Тен, çавă пĕлет, тăхăрвунна çывхарнăскер.

Шыракан тупатех теççĕ çав. Чăнах та Морсковăн хĕрĕ, ăна кунта Варук аппа теççĕ, юнашар ялти ваттисен çуртĕнче пурăнать иккен. Таланов çак ырă хыпаршăн пурне те тав турĕ те кунтан инçех мар вырнаçнă яла çул тытрĕ. Те хĕпĕртенине пула часах çитнĕ пек туйăнчĕ.

Акă умра ваттисен çурчĕ. Мăнтăр пĕренесенчен тунăскер. Йĕри-тавра карта тытнă. Улма йывăççисемпе йăрансем те пур. Килти майлах пурăнаççĕ иккен кунта. Ачаран хăнăхнă çĕр ĕçĕпе аппаланса чуна пусарма та май пур. Алăк патĕнче сак çинче ларакан икĕ карчăка сывлăх сунса Варук аппа пирки ыйтсан вăл хăй пӳлĕмĕнчех пулнине пĕлтерчĕç.

Койка çинче тумтирне хывмасăрах пĕр пĕчĕк карчăк хуçланса выртать.

– Варук аппа, сана курма килтĕм, – терĕ Таланов. – Мĕнле пурăнатăн?

– Кам пултăн çак эсĕ, паллаймарăм-ха, – лăпкăн сасă пачĕ лешĕ тăрса ларса.

– Каçар мана, çывăрма памарăм пулас.

– Çывăрма мар-ха... Сахăр чирĕпе аптратăп-çке. Выртса илмесен утмалăх та вăй çук. Кам ачи пултăн çак эсĕ?

Таланов хăйпе паллаштарчĕ, мĕншĕн килнине пĕлтерчĕ. Вара вĕсем килкартине тухрĕç те меллĕрех вырăн тупса чылайччен калаçса ларчĕç.

Варук аппа каласа панинчен çакă паллă пулчĕ.

Морсков хушамат вĕсен аслашшĕнчен пуçланса кайнă иккен. Лешĕ Балтика тинĕсĕнчи флотра çичĕ çул хушши хĕсметре тăнă. Кайран пĕр-икĕ çул çав тăрăхрах суту-илӳ флотĕнче те ĕçлесе пăхнă. Ансăртран урине амантнине пула яла таврăнма тивнĕ. Сумлă матрос малтан Ивановпа çӳренĕскер, киле Морсков хушаматпа килсе çитет. Укçи те пулнă курăнать. Авланать, кăштах çĕр те туянать, çăкăрлă-тăварлă пурнăçпа пурăнма пуçлать. Майĕпен хăй ĕçне йĕркелесе ярать: çил арманĕ лартать, хăмла пухса Чулхулана ăсатассине йĕркелет.

Çын вăл пур çĕрте те çынах ĕнтĕ. Шухăшлавĕсем те пĕр майлах. Лондонра е Шупашкар тăрăхĕнче пурăнать-и, пысăк завод хуçи е вулăс шайĕнчи усламçă – яланах хăй пуçарса янă ĕç пирки шутлать. Ăна пуласлăх канăç памасть. Сывлăх чакни сисĕнме пуçласан пушшех шухăша каять. Морсков Çеменĕн те

сăлтавĕ пулнах çав. Малтанхи ачисем иккĕшĕ те хĕр çуралнă. Ывăл çуккишĕн пăшăрханнă, арăмне те час-часах ӳпкелешсе илнĕ. Ун пекки арçынсен пулкалать çав. Виççĕмĕш ачине вара чăннипех те кĕтнĕ парне тесен те юрать. Филимон çуралать, Морсков матросăн чи пысăк савăнăçĕ.

– Пирĕн асатте питĕ ĕçчен çын пулнă, аттене пĕчĕклех хăй çумĕнче тытма тăрăшнă, каччă шутне кĕрсен хăй тельняшкине тăхăнтарнă та матрос пурнăçĕнчи йăласемпе паллаштарнă, шывра лайăх ишме, мунча кĕнĕ чухне юр çине туха-туха выртма, икĕ пăт пуканне çавăрттарса вылятма хăнăхтарнă. Вулама, çырма, уйрăмах шутлама вĕрентĕр тесе аттене шкула панă. Аванах вĕренсе пынă. Икĕ каслă шкула пĕтерсен аттен малалла кайма та çул уçăлнă. Анчах асатте ярасшăн пулман. Çамрăклах авлантарнă та суту-илӳ ĕçне явăçтарма тытăннă. Асатте çамрăк çемьене Шупашкарта çурт илсе парать. Эпĕ вара хулара çуралнă. Каярах атте хăй вăйĕпех икĕ хутлă чул çурт лартать. Лавкка та пулнă пирĕн. Анчах самана улшăнсан веçех туртса илчĕç. Каллех асатте патне яла кайма тиврĕ. Чи хăрушши вара выçлăх çулĕ пулчĕ. Вăл вăхăта хальхи пекех астăватăп. Пур çĕрте те ыйткалакансем çӳретчĕç, кашни кун вилĕ пытаратчĕç. Эпир питех аптраманха. Асатте кĕлечĕ пушах марччĕ, аттен те кăштах укçа пулнă курăнать. Анчах пĕрре çапла вулăсран лашасемпе пычĕç те веçех тиесе тухса кайрĕç. Аттепе асатте хирĕç тăма пикенсен чутах персе пăрахатчĕç. Эпир те кĕлмĕçе тăрса юлтăмăр. Тепĕр темиçе кунтан асатте пире: «Ачамсем, сывă юлас тесен сирĕн кунтан тухса каймалла», – терĕ. Ăçталла каймаллине те палăртса хунă иккен. Тепĕр куннех вăл пире тăватсăмăра Шупашкар пристанне лашапа леçсе ячĕ. Хусанта Урал еннелле каякан поезд çине лартăмăр. Унта та вагонран вагона аллисене тăснă выçă çынсем çӳреççĕ. Атă-пушмака, тумтире, сават-сапана çăкăрпа ылмаштарма сĕнекенсем те пур. Сĕрме купăс каласа юрлакан чăвашпа ывăл ачине курсан вара аттепе анне чăтаймарĕç пулас, кăштах укçа тата çăкăр татки пачĕç. Унтанпа вăхăт нумай иртнĕ ĕнтĕ, анчах çав тĕксĕм сăнлă кăтра çӳçлĕ ача халĕ те куçăм умĕнче. Уйрăмах ман аннем панă çăкăра мĕнле çини асра юлчĕ. Халĕ ав хăшĕпĕрисем пурнăç япăх тесе пуплешеççĕ. Выçлăх мĕнлине курасчĕ вĕсен.

– Вăл çапла пуль-те-ха, Варук аппа, хальхи пурнăç виçи вăл урăхларах çав. Ун чухне эсир ытти çĕршыв çыннисем мĕнлерех пурăннине пачах та пĕлмен. Пуçлăхсем сире эсир чи пуяннисем, чи телейлисем тесе улталаса усранă. Халĕ вара

хӗвеланӑҫнелле пӑхсан та, хӗвелтухӑҫнелле пӑхсан та халӑхсем хамӑртан лайӑхрах пурӑннине куратпӑр. Ҫавӑ питӗ пӑшӑрхантарать пире. Унччен пӗрле пулнӑ финнсем те пиртен иртсе кайрӗҫ вӗт, – терӗ Таланов. – Кашни ӑрӑвӑн ҫавӑн пек нуша витӗр тухса ҫитӗнмелле мар ӗнтӗ.

– Эпир курнине текех никам та ан куртӑрччӗ... Ача чухнехи пирки ӑҫта ҫитнӗччӗ-ха эпӗ...

– Поездпа кайни ҫинчен...

– Ҫапла, ҫапла. Тепӗр кунне ирхине пӑхатпӑр та, ак тамаша, ҫӑкӑр тултарнӑ кутамкка та, типӗтнӗ какай хутаҫҫи те ҫук. Ҫаратнӑ пире. Атте ниҫта кайса кӗреймест. Юнашар ларса пыракансенчен ыйтса пӗлме тӑрӑшрӗ, нимех те калаймарӗҫ. Те чӑнах та пурте ҫывӑрса кайнӑ пулнӑ, те хӑранипе шарламарӗҫ. Вара атте ҫынсен миххисене тӗрӗслеме пуҫларӗ. Пӗрисем хӑйсен ирӗкӗпех уҫа-уҫа кӑтартрӗҫ. Хирӗҫ тӑракансем те тупӑнчӗҫ. Анчах атте вӗсен япалисене вӑйпах турта-турта илсе тӗрӗслерӗ. Лайӑх тумланнӑ вӑйлӑ ҫынран кӑштах хӑрарӗҫ те пулас. Нимӗн те тупӑнмарӗ. Юрать-ха, атте укҫана тӗплӗ пытарса хунӑ. Вӑрӑсенчен юлнӑ ҫимӗҫ пӗтсен атте кашни чарӑнурах тухса мӗн те пулин илкелесе кӗме тӑрӑшрӗ. Ҫапла майӗпен Янаула ҫитсен анса юлтӑмӑр. «Аслаҫу каланӑ тӑрӑх ҫакӑнта тӑвансем пулмалла», – терӗ атте. Лешӗ адресне те ҫырса панӑ иккен. Урамне те, ҫуртне те часах тупрӑмӑр. Савӑнӑҫӗ вара пысӑках пулмарӗ. Ваттисем кӑна пурӑнаҫҫӗ. Ывӑлӗсем Ҫӗпӗре Абакан тӑрӑхне тухса кайнӑ тет. Лешсем унтан ҫырса пӗлтернине ӗненсен ҫӑкӑрлӑ-тӑварлӑ, выльӑхчӗрлӗхлӗ пурӑнаҫҫӗ иккен. Ҫырӑвӗсенчи хӑш-пӗр вырӑнсене атте сасӑпах вуласа пачӗ. Сасартӑк шӑллӑм чирлесе ӳкрӗ. Хырӑмӗнчен тытса йӑваланса макӑратчӗ. Атте ҫине тӑнипе тухтӑрсем те килсе пӑхрӗҫ. Ҫӑлаймарӗҫ. Ҫавӑнтах пытарса хӑварма тиврӗ. Вара тухса кайрӑмӑр. Питӗ хӗнпе, выҫӑллӑтутӑллӑ пурнӑҫпа Абакана ҫитрӗмӗр. Тӑвансене те шыраса тупрӑмӑр. Минусинскран инҫех те мар. Авалтанпах хакассем пурӑнакан вырӑн, казаксем те – тахҫантанпах.

Чӑнах та, кунта ҫынсем выҫлӑх пирки нимех те пӗлмеҫҫӗ. Пуян вӗсем. Выльӑх нумай усраҫҫӗ. Кунти чухлӗ лаша, ӗне, сурӑх нихӑҫан та курманччӗ. Ӑшӑ ҫӑм паракан качака та усраҫҫӗ, хурт-хӑмӑр тытаҫҫӗ. Анчах кунта та канӑҫ пулмарӗ. Ялсем тӑрӑх леш продотряд текеннисем ҫӳреме тытӑнчӗҫ. Кӗлетри тырра тата ытти япаласене, лашасене иле-иле каятчӗҫ, ҫынсене хӑваласа кайсах ним тӳлевсӗр вӑрман кастаратчӗҫ.

Пӗрре ҫапла ирхине вӑрансан арҫынсем килте ҫуккине асӑрхарӑм. Ялта та сахаллӑн тӑрса юлнӑ. «Атте ӑҫта вара?» –

тесе ыйтсан анне шăппăн: «Вăрмана партизансем патне кайнă», – терĕ. Тепĕр темиçе кунтан партизансене шыракансем персе çитрĕç. Ял çыннисене урама хăваласа тухрĕç те партизансем ăçтине кăтартма ыйтрĕç. Пĕри те нимĕн те каламарĕ. Сутăнчăксем пулмарĕç. Вара вĕсен командирĕ, Хайдар-Голик ятлăскер, ниçта кайса кĕрейменнипе вунă çынна суйласа илчĕ те хăй аллипе пере-пере вĕлерчĕ. Çавсен шутĕнче ман анне те пулчĕ, – тесе Варук аппа куçĕсене саппун аркипе шăла-шăла илчĕ те пĕр вăхăт хушши ним шарламасăр ларчĕ.

Хайдар-Голик тесенех Таланов пуçĕнче те хирĕçӳ тапранса кайрĕ. Мĕншĕнни паллă ĕнтĕ. Çамрăк Варука тăлăха хăварнă çын вăл, урăхла каласан, Аркадий Петрович Гайдар писатель пулать. Мĕнле мухтавлă сăмахсем каламастчĕç пуль ун пирки шкулта. Кĕнекисене те вуланă. Анчах вăл мĕнлерех çын иккенне пĕлмен. Халĕ кăна тĕрĕссине çырма пуçларĕç. Тинех Таланова пĕчĕкренех канăç паман ыйту çине хуравлама май килчĕ. «Мĕнле-ха вунулттăри Аркадий Голиков нимле ятарлă шкул пĕтермесĕрех полк командирĕ пулма пултарнă-ха?» – шутлатчĕ вăл унччен.

Сăлтавсăр нимĕн те пулса иртмест иккен. Аркаша Голиковпа та çаплах пулнă ĕнтĕ. Самай чăрсăрскер темле майпа чăн-чăн револьвер тупнă та пĕрле вĕренекен шкул ачисене хăратса çӳренĕ. Аслисем çав хăрушă япалана пама ыйтсан Аркаша килĕшмен. Вара лешсем вăйпа тытса илме шутлаççĕ. Тытăсса каяççĕ. Çав хушăра маузер персе ярать. Юрать-ха, пуля айккинелле каймасть, урайне тивет. Амăшĕ çине тăнипе вунтăватă çулхи Аркадий ЧОН текен отряда лекет. «Части особого назначения» тени пулать ĕнтĕ. Контрреволюципе кĕрешме тесе тунăскер. Çакăнта çакланнишĕн Голиков çав тери хĕпĕртет. Ма тесен кунта çынна ним суд тумасăрах персе пăрахма пулать иккен. Çамрăклах нерв чирĕпе аптраканскер, ахальтен мар ĕнтĕ вăл хăй ӳтне лезвипе каса-каса суранлатнă, çак ĕçе пысăк хаваспах туса пынă. Тамбов тăрăхĕнче, кăнтăрта çĕмĕрттерсе çӳренĕ, ăсталăхне туптанă. Кам çынсене тискеррĕн пере-пере вĕлернĕ, çавна командира лартнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вунсаккăрти Голикова Красноярскри ЧОНа пулăшма яраççĕ. Çакă вара уншăн çăрттана кӳлле янă пекех пулнă. Пĕтĕм Хакасси чĕтреме тытăнать.

Унччен кунти ĕçсем, чăнах та, пит чаплах пыман. Чылай çĕрте продотрядсем пухнă тырра партизансем каялла туртса илнĕ те халăха валеçсе панă. Тен, çавна пулах кунта пурăнакан хакассемпе казаксем партизансене пулăшса тăнă, ăçта пытаннине кăтартман. Голиков хăй çыннисемпе ялтан-яла

çӳренӗ чухне хакассем: «Хайдар-Голик килет! Сыхланăр, пытанăр!» – тесе кăшкăрнă. Пулас писатель хакасла пӗртенпӗр «хайдар» (ăçталла) сăмаха кăна вӗреннӗ. Ăçталла каймаллине пӗлме ӗнтӗ. Гайдар суя хушамат çавăнтан тухса кайнă та.

– Пӗччен мӗнле пурăнкаларăн вара?

– Тăвансем пулăшнипе ӗнтӗ. Унти çынсем кунтисемпе танлаштарсан туслăрах та пек туйăнаççӗ.

– Аçу вара мӗнле?

– Малтанхи вăхăтра тӗттӗм каçсенче вăрттăн килкелесе каятчӗ. Кайран çухалчӗ. Çапăçура вилнӗ терӗç. Инçетри сӗм вăрманта пытарса хăварнă ăна.

– Филимон Семенович çинчен калакан хутсем е сăнӳкерчӗксем упранса юлман-и вара?

– Ун чухне ытларах пуçа çăлса хăварасси çинчен шутланă. Эпӗ Филимон Морсков хӗрӗ пулнине пӗлсен-и? Иванова хушаматпа çӳренӗ эпӗ. Юлашки хут тӗл пулнă чух атте мана пӗр хут листи тыттарчӗ те: «Çакна пытарса упраса хăвар. Хăçан та пулсан вуласа пăхӗç те пире ăнланӗç», – терӗ.

– Мӗнле хут вара вăл?

– Хăрушă хут. Çак тарана çити никама та кăтартман.

– Мӗн çинчен вара вăл? Хăв вуласа пăхнă-и?

– Темиçе хутчен те вуланă. Паллах, пытарса хунă самантсенче.

– Кăтартма пултараймăн-ши, Варук аппа.

– Ах, çак чӗлхене... Темме каларăм-çке, – вăрçса илчӗ хăйне ватă хӗрарăм. – Пуçăм та шӗвелчӗ пулас. Ухмах эпӗ.

– Апла мар ӗнтӗ. Çав хут пирки никама та шарламăп. Сăмах паратăп.

– Çук, çук. Пӗлсен мана çакăнтан ыранах кăларса ярӗç. Халӗ ав совет влаçӗ мана та вырăн пачӗ, апат та çитереççӗ.

– Варук аппа, халь влаç улшăннă вӗт. Калаçнăшăн çынна хупмаççӗ. Коммунистсенчен те хăрама кирлӗ мар. «Çак хута хăçан та пулин вуласа пăхӗç», – тесе Филимон Семенович хăй каласа хăварчӗ терӗн мар-и-ха.

– Вăл çапла та-ха. Анчах вăхăчӗ çитрӗ-ши?

– Çитмесӗр вара. Унтанпа çитмӗл çул та иртнӗ вӗт. Хăв та ваттисен шутӗнче. Мӗн хăраса тăмалли пур. Каларăм вӗт халь никама та хӗсӗрлемеççӗ тесе.

– Юрӗ эппин. Хам вилсен тата вулакан та тупăнмӗ, – тесе Варук аппа пăта çинче çакăнса тăракан кивӗрех сукна пиншака илчӗ те Таланова тыттарчӗ. – Шал енчи саплăка куратăн-и?

– Куратăп.

– Çавна сÿтсе уç. Хамран пулас çук. Куç япăх курать. Сахăр чирĕ çиет.

Таланов йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Анчах çĕçĕ таврашĕ асăрхамарĕ. Çиппине татас тесе шăлпа çыртса пăхрĕ.

– Ав çавăнта, кантăк сакки çинче, хачă пулмаллаччĕ, – терĕ Варук аппа.

Таланов пĕтĕмпех сÿтсе тăмарĕ. Пÿрнисемпе хыпаласа темиçе хуçлатса чикнĕ хут таткине туртса кăларчĕ. Сарăхса кайнăскерне васкамасăр саркаласа пăхрĕ. Самай пысăкскерех иккен. Хура чернилпа çырнă. Хуçлатнă вырăнсенчи сасă паллисем çухалнă пулсан та вулама пулать. Акă мĕн çырнă унта:

Пĕтĕм халăха!

Совет влаçĕ партизансене калама çук хăрушă хаярлăхпа хăратас тесе çĕнĕлле мелсемпе усă курма тытăнчĕ. Влаç партизансен тăванĕсене тыта-тыта персе пăрахать. Эпир яланах жидсемпе коммунистсен влаçĕ хăйюллă, çав хушăрах вăйсăр тесе шутланă. Эпир яланах çак влаç халăха ултавпа хаярлăхсăр тата юн тăкнисĕр пуçне нимĕн те пама пултарайманнине уççăнах пĕлсе тăнă. Çапах та правительство хаяр çынсенчен тăрать пулсан та ăс-тăн тĕлĕшĕнчен сывă çынсенченех пуль тенĕ. Халĕ ĕнтĕ çакна калама çук. Паянхи влаç мĕн тунине курсан унта ăс-тăн енчен сывă çынсемех ĕçлеççĕ теме хĕн. Аслисен ĕçĕсемшĕн пĕчĕк ачасене явап тыттарас шухăш психика тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ çын пуçĕнче çуралас çук. Влаç партизансен тăванĕсене çичĕ çулхи ачасенчен пуçласах арестлет. Хĕрĕх çулхи арçын ĕçĕшĕн çичĕ çулхи ачана айăплас шухăш йĕркеллĕ çын пуçне нихăçан та пырса кĕрес çук. Влаç вара ним айăпсăр ачасене вĕлерет. Çак совет влаçĕ тăвакан ĕçрен тискерри урăх нимĕн те пулас çук.

Гражданcем, сире ухмаха ернĕ идиотсем ертсе пынине, сирĕн пурнăç урса кайнă çынсен аллинче пулнине хăвăрах куратăр ĕнтĕ. Енчен те вĕсем паян пире пĕтерессишĕн вăй хураççĕ пулсан, ыран вара черет сирĕн пата та çитĕ. Çăлăнса юлас тетĕр пулсан сирĕн алла пăшал тытмалла та пирĕн пата пымалла. Эпир, шурă партизансем, юн юхтарассине сивĕлетпĕр, усал совет влаçне тавăрас тесе вĕсен çулĕпе каяс теместпĕр. Ухмаха тухнă ашшĕсем çын юнне тăкма юратнăшăн коммунистсен ачисене тĕкĕнместпĕр. Хамăр кĕрешĕве эпир пĕтĕмпех коммунистсене хирĕç кăна туса пыратпăр.

Вĕсене эпир политикăри тăшман тесе кăна мар, Раççей тăшманĕ, пĕтĕм халăх тăшманĕ тесе пере-пере вĕлеретпĕр.

Совет влаçĕ çынсене шурă партизансем вĕсем халăха сиен кӳрекенсем тесе ĕнентересшĕн. Влаç вырăнти вак халăхсене пăшал тыттарса партизансемпе çапăçакан отрядсем йĕркелет. Халăх юнне тинĕс пек юхтарнă коммунистсем халĕ халăх хыçне пытанасшăн. Çапла майпа халăх умĕнчи яваплăхран пăрăнасшăн.

Партизансем халăхшăн çапăçаççĕ. Вĕсем коммунистсем пуçарса янă хăрушă ĕçсене, çынсене персе пăрахассине, пурлăха çаратассине, продразверсткăна пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ. Çавăнпа та партизансене хирĕç алă çĕклени вăл халăха хирĕç тăниех пулать.

Хĕрлĕармеецсем, сире чĕнсе калатăп, коммунистсене пăрахăр та партизансем патне килĕр, халăхшăн çапăçăр.

*Соловьев есаул, 1922 çул.*

Таланов ним шарламасăр тепĕр хут пăхса тухрĕ.

– Ку Соловьев текенни кам-ши вара?

– Партизансен командирĕ шăпах çавă пулнă та ĕнтĕ.

– Варук аппа, ман çак хута Шупашкара кайса ӳкерсе илмелле. Пĕр-ик кунлăха параймăр-ши? Тавăрса пама турăш умĕнче тупа тăватăп, – терĕ Таланов.

– Питĕ кирлĕ пулсан ил эппин... Камран илнине каламасан, тавăрса памасан та юрĕ.

Мĕн тери савăнăç! Тĕпчев ĕçне пĕлмен çын çакна нихăçан та ăнланса илеес çук. Тепĕр чух пĕр пĕчĕк хут таткиех калама çук пысăк пулăшу парать. Халĕ ĕнтĕ диплом ĕçĕн пахалăхĕ пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулас çук. Çулталăк хушши тăрăшса ĕçлени уссăр пулмарĕ. Паллах, Таланов хăй те самаях улшăнса пычĕ. Семинарсенче те хăюллăрах калаçма тытăнчĕ, кивĕлле вĕрентекен профессорсемпе тавлашма та хăюллăх çитерчĕ. Чечековран тĕслĕх илсе пырать ĕнтĕ. Лешĕ вара чылай ыйтусене пач çĕнĕлле çутатса пама тăрăшать. Хальхи тапхăр çынни тейĕпĕр. Тен, çавна пула Таланов çырнă диплом ĕçĕ ыттисемпе танлаштарсан самай урăхларах пулса тухрĕ?

Пур япалан та йĕрки пур теççĕ вĕт. Диплом хӳтĕленĕ çĕрте те çаплах ĕнтĕ. Студент çырса пĕтернĕ хыççăн наука ертӳçи заключени çырать те диплом ĕçне кафедрăна тăратать. Унтан ăна рецензентсене параççĕ. Ку çеç те мар-ха, каярах çав ĕçе студентăн комисси умĕнче хӳтĕлемелле. Мĕнле паллă лартассине çавсем татса параççĕ.

Талановпа çапла пулса иртрĕ. Пурте йĕркеллехчĕ, рецен-

зентсем те аванах çырса панăччĕ, анчах такăнтаракан тупăнчĕ. Кафедра пуçлăхĕ Калашкин профессор çине тăчĕ. Ăна совет влаçĕ пуçлансан Морсковсене Çĕпĕре янине ытлашши тĕплĕ çырса кăтартни килĕшмен иккен.

– Енчен те калаçу купца ĕçĕ пирки пырать пулсан, ытларах суту-илӳ мелĕсене уçса памаллаччĕ, мĕнле тавар тата ăна ăçтан турттарнине кăтартмалла. Кунта вара ытларах Морсков пурлăхне туртса илсе ăна хĕстерни çинче чарăнса тăнă. Дипломник çырнине ĕненсен большевиксем япăх çынсем иккен. Кунпа ниепле те килĕшме çук, – терĕ профессор.

– Ман шутпа, суту-илӳ ĕçне, экономикăна политикăран уйăрма çук. Вунçиччĕмĕш çул хыççăнхи йывăрлăхсем, уйрăмах çăкăр-тăварлă Украинăри выçлăхсем, пĕтĕмпех большевиксен политикине пула сиксе тухнă пулăмсем, – хуравларĕ Таланов дипломник. – Хуть те мĕнле политикăра та экономика тĕллевĕ пур. Анчах çакă вăл пурне те курăнмасть. Тепĕр чухне политиксем хăйсем те асăрхаймаççĕ, ĕçĕ ăçта илсе тухассине те ăнкартаймаççĕ. Калăпăр, купцасене, пуянрах хресченсене класс тăшманĕ тесе çапса хуçасси большевиксен тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулни пирки кунта ларакансен иккĕленӳ çуккă пуль тетĕп. Çакна вĕсем хавхалансах тунă. Философ каланă пек, таканари шывĕпе пĕрле ачине тухса сирпĕтнĕ. Ачи вара пурлăх тытăмĕ, экономика. Çавна пулах паянхи куна çити те ура çине тăраймастпăр вĕт-ха.

«Маттур, Таланов. Шухăшлаври диалектика мелне аванах ярса илнĕ иккен. Теори тĕлĕшĕнчен те аптрамастăн», – ырласа илчĕ Чечеков ăшĕнче хăй дипломникĕ çине ăшшăн пăхса.

– Хальхи çамрăксем эсир яланах унчченхи пурнăçа хурлатăр. Большевиксемсĕр хăвăртан аслă пĕлӳ илесси те пулас çукчĕ, – чарăнмарĕ кафедра пуçлăхĕ.

– Каçарăр та, тĕп ыйтуран пăрăнас марччĕ, – асăрхаттарчĕ Чечеков. – Ман шутпа дипломник планпа палăртнă ыйтусене йĕркеллех уçса панă. Рецензентсем те çаплах çыраççĕ, паянхи куншăн питĕ актуаллă тема теççĕ.

– Хисеплĕ профессор тунă асăрхаттару вăл диплом теминчен пит инçех тăмасть, – пуçларĕ тепри, хăйне Калашкин ĕçе илнĕ пенсионер. – Парти пĕлтерĕшне пĕчĕклетмелле мар. Вăл ертсе пынипех ĕнтĕ революци тунă, иртнĕ вăрçăра та çĕнтернĕ.

– Каçарăр та, çапла тӳрремĕн каланипе килĕшме пултараймастăп. Тимлĕнрех пăхсан урăххине те курма пулать,– терĕ Таланов. – Тен, вун çиччĕмĕш çулта нимĕçсене кутран

тапса кăларса янă-тăк, хĕрĕх пĕрремĕш çулхи вăрçă пулмастчĕ те. «Салтаксем, пăшалсене пăрахăр! Раççей вăрçăра парăнтăр!» – тесе кăшкăракансем шăпах большевиксем иккенне халĕ пурне те паллă ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене власть кирлĕ пулнă. Большевизм вăл чи малтан власть – пурлăх туртса илмелли, хăйсене хирĕçле шухăшлакансене пĕтермелли аппарат. Раççейре ăслă та пултаруллă çынсем яланах пулнă. Анчах вĕсене ĕçлеме паман. Филимон Семенович Морсков шăпах çавсенчен пĕри. Пурлăхне те туртса илнĕ, йăхне те çапса хуçнă.

– Çын вăйĕпе пуйнă вăл, эксплуататор, – каласа хучĕ Калашкин профессор.

– Каçарăр та, социализм вăхăтĕнче вара пусмăрласа ĕçлеттерес йăла пулман-им тата? Морсков купца хăй патĕнче ĕçлекенсене йĕркеллех тӳлесе тăнă, кил-çурт лартнă чух пулăшу панă. Колхозниксем ав вуншар çул хушши ним тӳлевсĕр ĕçлесе пурăннă. Ку вара мĕне пĕлтерет?

– Вĕсем çĕршывшăн ĕçленĕ, – хуравларĕ Калашкин майли.

– Апла пулсан большевиксен влаçĕ те эксплуататор. Миллион çынна тӳлевсĕр ĕçлеттернĕ. Тĕрмесене те çавăнпах йышлантарса янă, – парăнма шутламарĕ Таланов.

– Атьăр-ха, ĕç çинчен калаçар, – пăрса яма пикенчĕ калаçăва Чечеков.

Пĕри чăнах та Морсковсен çурчĕсем пирки тĕплĕнрех ыйтса пĕлме тăрăшрĕ. Дипломник вара хаваслансах каласа пачĕ. Шупашкарта пĕр çурчĕ упранса юлнă иккен. Теприне Атăла пĕвеленĕ чухне динамитпа сирпĕтсе янă. Çав вырăнта халь залив. Питĕ хĕнпе сирпĕтнĕ тет. Икĕ хутлă чул çурт айне динамит хунă та шнурне чĕртсе янă. Вăйлă взрыв маччипе кантăксене илсе перет, анчах хулăн стенисем çаплипех ларса юлаççĕ. Пилĕк кунтан тин ватса пĕтереççĕ. Ун чух вара хулара çав çурта тунă чухне кирпĕчсем пĕр-пĕринпе лайăх çыпçăнччăр тесе Морсков хушнипе раствора чăх çăмарти те янă текен сăмах çӳретчĕ. Тен, чăнах та çаплах. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл аркатакансене парăнасшăн пулман.

– Нивушлĕ çав илемлĕ çуртсене сыхласа хăварма май килмен. Атăл шывне çӳллĕ дамбăпа пӳлсе лартнă пулсан, тен, кивĕ хула та упранса юлатчĕ, – вĕçлерĕ сăмахне дипломник.

– Калама кăна çăмăл. Ун чухнехи йĕркесене пĕлесчĕ, мускаврисем сирпĕтме хушсан сирпĕтмелле пулнă, – кăштах хута кĕчĕ пĕри. – Кунтисем вĕсем нимле ыйтăва та

хӑйсем тӗллӗн татса пама пултарайман, марионеткӑсем кӑна шутланнӑ.

– Аркадий Петрович Гайдар пирки ҫырни те ун авторитетне чакарас шутпа тунӑ ӗҫ пек курӑнать, – тӑрӑнчӗ каллех Калашкин тусӗ. – Миллионшар ача ун кӗнекисене вуласа чӑн-чӑн патриот пулса ӳснӗ. Дипломник вара ӑна ҫын вӗлерекен пек кӑтартма тӑрӑшни куҫкӗретех.

– Коммунистсен вӗсен яланах икӗ моральпе пурӑнас йӑла ҫирӗп. Гайдар та ҫавах. Юнлӑ алӑпах калавсем ҫырнӑ. Унта вара ырӑ ҫын пек курӑнма тӑрӑшнӑ. Гайдара ӑна хакассем хушшинче паян кун та усалпа кӑна асӑнаҫҫӗ, халӑх тӑшманӗ ырӑнне хурсах, – терӗ Таланов.

– Диплом ӗҫӗнче усӑ курнӑ Соловьев есаул хучӗ пирки те иккӗленӳ пур. Ӑҫтан тупнӑ-ха ӑна? Мӗншӗн архивне кӑтартман? – каллех сас пачӗ Калашкин профессор.

Талановӑн вара Варук аппаран илнӗ хута кӑтартма тиврӗ. Кам панине шарламарӗ. «Енчен те оригинал пирки иккӗленетӗр пулсан, экспертизӑна ярса тӗрӗслесе пӑхӑр эппин. Пӗр-пӗр хута хӑҫан ҫырнине пӗлесси паян пит йывӑр ӗҫех пулас ҫук», – сӗнчӗ дипломник.

Ҫапла вара комисси членӗсем студент тухсан та лӑпланаймарӗҫ, чылайччен тавлашса ларчӗҫ. Чечеков рецензентсен сӗнӗвӗсене шута илсе «пиллӗк» лартма сӗнчӗ. Анчах Калашкин майлисем хирӗҫ пулчӗҫ, ыйтӑва сасӑласа татса пама сӗнчӗҫ. «Виҫҫӗ» кӑна лартса пачӗҫ. Чечеков тарӑхнипе ним каламасӑр тухса кайрӗ. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, чӑтмалла. Киввинче хаярлӑх нумай. Тепӗр чухне вӑл ҫӗннине, ҫамрӑккине хӑйпе пӗрле тупӑка илсе кайма та хатӗр. Апла пулин те пирӗн герой пуҫне усмарӗ, пӗр пуҫӑннӑ ӗҫе малалла тӑсма шутларӗ. Паллах, Чечеков доцентпа канашласа пӑхмасӑр мар ӗнтӗ. Пӗрре пуҫра ырӑн тупнӑ шухӑш аса илтерсех тӑрать ҫав. Таланов каллех Варук аппа патне кайрӗ. Ку хутӗнче вара вӑл ытларах Ҫӗпӗрти пурнӑҫ пирки ыйтса пӗлме тӑрӑшрӗ.

Партизансене парӑнтарсан чекистсем кашни ҫынна тӗрӗслесе тухнӑ. Варвара Иванова Морсков партизан хӗрӗ пулнине пӗлсен вара ҫак ҫамрӑкӑн пуласлӑхӗ ӗмӗрлӗхех пӑчланса ларнӑ. Вӗренме каясси пирки калаҫу та пулма пултарайман. Ӗҫе те вӑрман каснӑ ҫӗре е торф кӑларма кӑна илнӗ. Каярах вара пӗтӗм пурнӑҫӗ колхоз ферминче иртнӗ. Пӗччен пулнине кура ҫавӑнтах выртса тӑнӑ. Хулана кайма та, тӑван яла тавӑрӑнма та ирӗк пулман. Ссылкӑра пурӑннӑ ӗнтӗ. Ватлӑхра кӑна ҫавӑрӑнса ҫитнӗ. Кунта та савӑнӑҫӗ пит пысӑках пулман.

Колхоз тунă вăхăтра аслашшĕпе асламăшне кулаксем тесе килтен хăваласа янă. Ултă кĕтеслĕ пӳрчĕ халĕ те ял варринче ларать. Малтан унта ял совечĕ пулнă, халĕ вара – библиотека. Кĕлетсене колхоз валли куçарса кайнă. Морсков Çеменпе арăмĕ ватлăхне мунча пек пĕчĕк çуртра пурăнса ирттернĕ.

– Асатте вара туя тытса кашни кунах хăй лартнă çил арманне пăхса килетчĕ тет, ял варринчи пӳрчĕ тавра утса çавăрăнатчĕ тет.

– Чунĕ ыратнă ĕнтĕ унăн... Апла эппин эсĕ килнĕ çĕре аслаçу килĕ хупăннă иккен. Ăçта пурăнкаларăн вара?

– Тăвансем, атте аппăшĕн ачисем лайăх пулчĕç. Çавсем пăхрĕç. Халĕ вара кунта.

– Варук аппа, Çĕпĕртен килнĕ хыççăн Шупашкарта пулнă-и вара эсĕ?

– Çук, пулман. Çӳрейместĕп çав, урасем сураççĕ. Куç та япăх курать.

– Енчен те хăвăр пурăннă çурта курсан палласа илĕттĕн-ши?

– Палламасăр. Анчах вăл çуртсене çĕмĕрсе пĕтернĕ теççĕ вĕт. Кивĕ хула пĕтнĕ тет.

– Сирĕн çурт упранса юлнă.

– Хăшĕ вара?

– Леш, çӳллĕрех вырăнта лараканни. Енчен те çав çурта хăвна тавăрса парас пулсан?..

– Кирлĕ мара ан калаç-ха. Кам патăр ăна? Парсассăн та мĕн тăвăп-ха эпĕ унпа.

– Варук аппа, итле мана. Вара, тен, Шупашкара куçма май килĕ. Ăстарах тухтăрсем пулăшнипе сывлăхна та тӳрлетĕпĕр. Акă сан ятупа заявлени çырса хатĕрлерĕм. Алă пус çакăнта, – терĕ Таланов Варук аппа умне хутпа ручка хурса.

– Мĕн пирки вара ку?

– Аçу çуртне тавăрса пама ыйтса ĕнтĕ. Атя-ха, тытăнса пăхар. Алă кăна пусмалла. Ыттине веçех хам тăрăшăп.

– Юрĕ эппин, – тесе Варук аппа чĕтрекен аллипе «Иванова» тесе çырса хучĕ.

– Мĕншĕн Морскова мар вара, – ыйтрĕ Таланов.

– Паспорт çинче çапла.

– Апла пулсан çавăнтах юнашар тире лартса «Морскова» тесе çыр-ха.

– Ку хушамата çырманни çитмĕл çул та çитет пуль. Çырам эппин, – терĕ ватă хĕрарăм кăштах хĕпĕртенĕ туйăмпа.

Юратнă ашшĕн хушамачĕ вĕт-ха. Хăй вăхăтĕнче Шупашкарта «Морсков лавкки» тесен пĕлмен çын та пулман.

Тĕп хулана таврăнсан Таланов малтан архива çитрĕ, Морсков купцан пурлăхне патшалăх аллине илни çинчен пĕлтерекен актăн копине тутарчĕ. Варвара Филимоновна Иванова-Морскова пирки иккĕленӳ тавращĕ ан пултăр тесе загсран хут илчĕ. Халĕ тата тепĕр шикленӳллĕ самант сиксе тухрĕ. Енчен те Филимон Семенович реабилитаци тунисен шутĕнче пулмасан заявление илмесен те пултараççĕ. Кун пирки вара юстици министерствинче кăна пĕлеççĕ. Çавăнта çитмелле. Ку ĕçпе республика прокурорĕн çумĕ ĕçлет иккен. Кашни кунах йышăнмасть. Икĕ кунтан ун патне лекме май килчĕ. Таса ятне тавăрнисен шутĕнче Морсков хушамачĕ те пур иккен. Халĕ вара заявление ăçта кайса памалла-ха? Таланов архивран илнĕ хут çине тепĕр хут тимлĕнрех пăхса илчĕ. Конфискаци комиссине уездри депутатсен совечĕ ячĕпе тунă иккен. Апла пулсан хула советне тăратмалла. Çапла турĕ те.

Заявлени йышăнакан хĕрарăм çак хутсене курсан тĕлĕнсех кайрĕ. «Çирĕм çула яхăн ĕçлетĕп, кун пеккине пĕрремĕш хут куратăп», – терĕ. Икĕ çĕре шăнкăравласа канашласа пăхрĕ те çапах илсе юлчĕ. «Хуравне çырупа ярса паратпăр», – терĕ. Таланов вара хăй адресне парса хăварчĕ.

Пĕрремĕш утăмне тунă ĕнтĕ. Халĕ вара малалли пирки шутламалла: «Енчен те Варук аппаран ыйтса пĕлмелли е унпа пĕрле пĕр-пĕр чиновник патне кĕрсе тухмалли тупăнсан... Каллех яла кайма тивет-ши вара? Тен, хăйне илсе килмелле те республика больницине вырнаçтарса кăштах çăмăллăх памалла. Паллă врачсем ĕçлеççĕ вĕт-ха. Унтан вăхăтлăха хамăр патăрта усрасан та юрать. Анне чарас çук».

Чăнах та, ку таранччен амăшĕпе ывăлĕ хушшинче пĕрне-пĕри ăнланманни пулманччĕ-ха. Халĕ те çаплах. Тимĕркке каласа панине итленĕ хыççăн хуйхи-суйхине пайтах чăтса ирттернĕ Елена Ивановна ывăлĕпе килĕшрĕ. Владимир Таланов вара çăмăл машина тупса Варук аппа патне вĕçтерчĕ...

* * *

Чăваш шăпи темшĕн çапла-çке-ха, пурин те нуша витĕр тухмалла. Пурнăçне майлаштарса çитернĕ тĕле вăйсем те чакаççĕ, сывлăх та хуçăлать. Хĕсĕк пурнăçа пулах ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕ ачисене пысăк пулăшу параймасть. Тепĕр чух тата ачи-пăчи йышли те чăрмав кӳрет.

Тимĕркке ашшĕ çемьере тăваттăмĕш ача пулнă. Пĕртен-

пĕр ывăл. Ыттисем пурте хĕрсем. Вăл авланнă тĕле пĕри качча кайнă. Иккĕшĕ килтех пурăннă. Ватă хĕр шутĕнче тесен те юрать. Ĕлĕкхи йăлапа ывăлĕн ашшĕ килĕнчех пурăнмалла. Кăмака умĕ те, кĕлет уççи те майĕпен ун арăмĕн аллине куçмалла. Анчах килте хĕрарăм нумай чухне кин шăпи йăлана лараймасть. Çакна упăшки те асăрханă ĕнтĕ. Ахальтен мар тепĕр чухне тавлашусем сике-сике тухнă. Арăмĕ ача амăшĕ пулма хатĕрленнине пĕлсен ăна çăмăллăх парас тесе килкартине пĕчĕк пӳрт лартма шутлать. Вăрман кăларма тытăнаççĕ. Анчах пĕренисене турттарса килнĕ чухне авари пулать. Прицеп уçăлса каять те пĕренесем ишĕлсе анаççĕ. Çӳлте ларса пынă упăшки аяла пулса вилмеллех аманать. Çапла вара пирĕн герой çураличченех ашшĕсĕр тăрса юлать.

Ывăлĕ хăй тĕллĕн апат çиме хăнăхса çитсен Лена Шупашкара тухса кайрĕ, стройкăна вырнаçрĕ. Ятарлă пĕлӳсĕр çыннăн шăпи çапларах ĕнтĕ. Ăна ытларах хура ĕç тивет. Юрать-ха, чăваш ĕçрен хăрамасть, уяса тăмасть – тытать те тăвать. Общежити те пачĕç. Пĕр пӳлĕмре виççĕн. Иккĕшĕ хĕрупраççем. Каччисем те пыркаласа çӳреççĕ. Юрать-ха, питĕ каçа юличчен ларма ирĕк памаççĕ. Вахтер аса илтерсех тăрать. Вăл хушнине итлемесен тепĕр чух лешмене кĕртмесен те пултарать. Пăхăнма тиветех çав.

Лена вара кашни канмалли кунах яла çӳрерĕ. Ывăлне курас килет. Çавă пуçран тухмасть. Çамрăк хĕрарăма арçын е каччă куç хывасси пулатех çав. Килĕштернине палăртакансем те çук мар. Анчах ывăл сăнарĕ туйăма вылявлă яма памасть. Çавна ура çине тăратмалла, çын тумалла.Стройкăра пурте тенĕ пекех чăвашсем ĕçлеççĕ. Пуçлăхĕсем кăна вырăссем. Бухгалтеринчисем те çавсемех. Ытти ĕç вара чăвашла шăкăлшăкăл калаçсах пулса пырать. Штукатурсем патĕнче ав юрлани те илтĕнет. Ма юрлас мар, хисеплĕреххисен шутĕнче вĕсем, укçине те лайăхрах илеççĕ. Лена вĕсене кăштах ăмсанать те. Кунĕпех кирпĕч е раствор йăтнипех çырлахмалла мар ĕнтĕ. Мĕн те пулин шутласа тупмаллах.

Пĕрре çапла Лена штукатурсем мĕнлерех ĕçленине чылайччен пăхса тăчĕ те маçтăр патне кайрĕ, хăй шухăшне пĕлтерчĕ. Ун штукатур ĕçне вĕренес килет. Лешĕ кун пирки аслисемпе калаçса пăхма пулчĕ. Хăй сăмахне тытрĕ. Кĕçех ăна вĕренме ячĕç. Икĕ уйăха яхăн вĕренӳ комбинатне çӳрерĕ. Тăрăшрĕ. Экзамен тытнă хыççăн свидетельство пачĕç. Çакă вăл ялтан килнĕ хĕрарăмшăн самай пысăк çитĕнӳ, хăй тĕллĕн тунă хăюллă утăм. Кĕçех хваттер черетне тăчĕ. Шанчăкĕ пысăках мар-та-ха, пĕр вунă çултан, тен, май килĕ. Тĕлĕнмелле япала,

хваттер пайланӑ чухне ҫуртне тӑвакансем пачах та хисепре мар иккен. Вӗсенчен чылайӑшӗ вӗт хӑмаран тунӑ пӗчӗк пӳртре кӑна пурӑнать. Лена пӗрисем патӗнче хӑнара та пулса курчӗ. Хӗвелтухӑҫ поселокӗнче ҫавӑн пек ял пур, хӑйсем ӑна Шанхай теҫҫӗ.

Тултан пӑхма пӳрчӗ пӗртте илемлӗ мар, шалта вара йӗркеллех. Хӗрарӑм ӑсталӑхне кура ӗнтӗ. Тӗрӗсем те, чечексем те пур. Телевизор та пӑхаҫҫӗ. Ялти пекех кӑмака хутса ӑшӑтаҫҫӗ. Апатне газпа пӗҫереҫҫӗ. Пурӑнма пулать, хула пуҫлӑхне пуҫ таймасӑрах. «Енчен те ҫакӑн пек пӳрт тупӑнсан ывӑлӑма та илсе килнӗ пулӑттӑм, – шутласа илчӗ Лена. – Тен, манӑн та тапалашса пӑхмалла мар-ши?»

Хӑй ӗмӗтне пӗлтерсен пӗрле ӗҫлекенсем те пулӑшма сӑмах пачӗҫ. Хатӗрленӳ ӗҫӗ пуҫланчӗ. Мӗн кирлине пурне те тупса пӗтерсен тин тытӑнмалла иккен. Вырӑнӗ пирки... Малтан Шанхайри авторитетсемпе калаҫса татӑлмалла иккен. Паллах, ахаль мар. Сӗрмелле. Типӗ кашӑк тутана хырать теҫҫӗ вӗт.

Ҫине тӑраканӗ вара бригадир пулчӗ, Ленӑран пӗр ҫичсакӑр ҫул аслӑрах арҫын. Лавккаран мӗн-мӗн илмеллине ҫырса пачӗ. Хӑмипе кирпӗчне, вӗтӗ турпаспа пӑчкӑ кӗрпине укҫасӑрах тупма май килчӗ. Бригадирсем, прорабсем ӑҫта мӗн пуррине пӗлеҫҫӗ вӗсем. Акӑ юнашар ҫурта туса пӗтерсен йӗритавра тытнӑ хӳмене сӳтрӗҫ те хӑмисене Ленӑна пачӗҫ. Ҫапла майӗпен тупнӑ япалисене пулас кӳршӗсем патне кая-кая хума тиврӗ. Чи пысӑк тӗлӗнтермӗш вара урӑххи пулчӗ. Пӳртпе ҫенӗке пӗр кунта туса лартрӗҫ, кӑмакине те хутса пӑхрӗҫ. Йӗри-тавра карта тытрӗҫ, йӑрансем тумалӑх ҫӗр те тупӑнчӗ. Кил хуҫишӗн ҫакӑ юмахри пекех туйӑнчӗ. Мӗнле-ха капла, паянтан хӑй аллипе уҫса кӗмелли йӑва пур. Самай пысӑкскерех. Шыв пирки кӑна йывӑртарах, тарӑн ҫырмаран ӑсаҫҫӗ иккен. Ытти... Ҫынсем чӑтнине чӑтма пулать ӗнтӗ.

Паллах, ӗҫлекен ҫынсене пӑхма та пӗлмелле. Юрласа ташласах тухса кайрӗҫ. Бригадир вара уйрӑлас умӗн: «Пулӑшу кирлӗ пулсан систер», – терӗ.

Ак тамаша, ырӑ хыпар та часах сарӑлать иккен. Хӑнана пырас текен арҫынсем тупӑнма пуҫларӗҫ. Ҫемьеллисем те йӑлӑнаҫҫӗ. Чӗнмесӗрех пырса кӗрекенсем те тупӑнчӗҫ. Питӗ тӗлӗнмелле ҫынсем иккен вӗсем арҫынсем. Кашнин хӑйне майлӑ тӗллев. Пӗри ав, общежитинче пурӑнаканскер, хӑйне валли йӑва шырать пулас. Сӑнран та, ӳтрен те паман, тумӗ те япӑх, укҫаран та хӗсӗк – хӑй вара пӗрле пурӑнасси пирки пуплешет. Ячӗ кӑна арҫын ӗнтӗ. Ҫемьешӗн усӑллӑ ҫын пулассӑн туйӑнмасть. Тепри тата ялта пӗчӗк ача пурри ҫинчен

пӗлсенех пӑрӑнчӗ, кӗрсе тухма пӑрахрӗ. Пӗччен ӗҫме хӑнӑхман тесе эрех йӑтса килекенсем те тупӑнчӗҫ. Хуҫалӑхра пулӑшма хатӗррисем те пулчӗҫ, вутӑ хумалли сарай тата туалет туса пачӗҫ. Кунта, паллах, бригадир тӑрӑшни сисӗнет. Ун хӑйӗн тӗллевӗ паллӑ ӗнтӗ, эрнере пӗрре пырса урӑхларах ҫимӗҫ тутанса пӑхасси... Ку ҫеҫ те мар-ха, кӗвӗҫҫисем те, хӑратаканнисем те курӑнкаларӗҫ. Ҫакӑн пек пурнӑҫ унччен хинчен канӑҫсӑртарах та пек туйӑна пуҫларӗ. Мӗн тумалла-ха? Качча тухма сӗнекенсенех итлемелле-ши? Пӗри ав, Пимен ятлӑскер, ачуна хулана илсе кил-ха тесе йӑлӑнать. Кун пирки Лена хӑй те шутланӑччӗ-ха. Ачан амӑшӗпех пурӑнмалла ӗнтӗ. Кӗҫех ак шкула кайма та вӑхӑт ҫитӗ. Хатӗрленмелле. Вырӑсла вӗрентӗр. Унсӑрӑн хула шкулӗнче йывӑр теҫҫӗ. Чӑвашла вӗрентекен шкул та пур теҫҫӗ-ха, анчах та Шанхай ҫывӑхӗнче мар, ҫӳреме инҫе.

Пӗр пӗчӗк чунах пурнӑҫа тепӗр майлӑ ҫавӑрса яма пултарать иккен. Ача сассипе пӳрт тулать. Амӑшӗ ҫумӗнче ӑшӑнса ҫывӑрнӑ чухне тапкалашса илни те савӑнӑҫ выранне кӑна. Текех пӗччен мар ӗнтӗ. Халӗ тата ҫамрӑк Пимен та кунталлах туртӑнать. Арҫын темерӗн, пӗчӗк Тимӗркке те унтан хӑпма пӗлмест. Курнӑ-курманах выляма, вӑй виҫме тытӑнаҫҫӗ. Енчен те Пимена парӑнтарсан вара лешӗ ниҫта кайса кӗрейми савӑнать, ҫӗнтертӗм! тесе кӑшкӑрать. Пимен кайнӑ хыҫҫӑн тунсӑхлама пуҫлать, вӑл килессе кӗтет.

Пӗрре ҫапла пӗчӗкҫӗ Таланов кӳршӗ ачисемпе урамра выляса ҫӳренӗ хыҫҫӑн пӳрте кӗчӗ те: «Ман кӑна атте ҫуккӑ,– терӗ пӑшӑрханса.– Анне, атя-ха Пимен пиччене кунтах хӑварар. Ман атте пултӑр вӑл».

Ҫакна илтсен Лена аптрасах ӳкрӗ, сӑмах та тупӑнмасть. Лешӗ хӑйӗннех перет. «Тепре килсен алӑка питӗретӗп те...»

Ҫак сӑмахсене илтсен Пимен питӗ хӗпӗртенӗ пулӗччӗ. Ма тесен, кун пирки вӑл хӑй те тахҫантанпах ӗмӗтленсе пурӑнать. Калама кӑна хӑяймасть. Юрать-ха, пӗчӗкҫӗ пепке пулӑшрӗ. Пимен пырсан каллех хӑй шухӑшне пӗлтерчӗ, ӑна «атте» тесе чӗнме пуҫларӗ. Мӗн тери кӑмӑллӑ иккен ҫак сӑмаха илтме. Хӑлхана ачашлать, ырӑ туйӑм ҫуратать. Ҫак паха ята тивӗҫтермеллех вӗт. Пимен ӑна лайӑх ӑнланать. Ленӑн вара темле шикленӳ пур пек. Чи шутлаттараканни, паллах, Пимен хӑйӗнчен чылай ҫамрӑк каччӑ пулни. Пӗрлешме ыйтать вӗт-ха. Ачисем ҫуралаҫҫех ӗнтӗ. Енчен те каярах Лена ватӑлса пыни куҫа курӑнма пуҫласан... Ҫав хушӑрах илӗртекен сӑлтав та пур. Ҫакӑ вӑл Пименпа Тимӗркке пӗр чӗлхе тупни. Тепӗр тесен тата ача хӑйне телейлӗ туйнине мӗн ҫиттӗр-ха! Каччи те

аптрамасть темелле. Сăнран та, ĕçлессипе те ыттисенчен япăх мар. Шалу илнĕ хыççăн юлташĕсемпе эрехне сыпкалани пулкалать те-ха, йăли çапларан ĕнтĕ. Ӳсĕрĕ вара пачах та усал мар. Çинçерех сасăпа хурлăхлăрах юрăсем юрлама юрататъ, тепĕр чух макăрса та илет. Кăмăлĕ çемçерен ĕнтĕ.

Кĕçех Пименпа Лена ЗАГСа кайса çырăнчĕç. Вара вăл килти çынах пулса тăчĕ, япалисене те илсе килчĕ, мотоциклне те кунтах лартрĕ. Виççĕшĕ пĕрле ларса тухсан вара пĕчĕк ача мĕнле савăннине çырса пама сăмах та çитес çук. Пурнăç майлашăнса кайрĕ. Телевизор илме те вăй çитерчĕç. Лена сĕннипе пӳрте çурмалла пӳлсе икĕ пӳлĕмлĕ турĕç. Пименăн çывăрмалли вырăнĕ диван пулчĕ. Лешсен – уйрăм пӳлĕмри койка çинче. Çырăнни те чылай пулать ĕнтĕ, анчах чуп-чуп уйăхĕ ниепле те пуçланса каяймасть-ха. Пимен нимех те шарламасть, диван çине чĕнмест. Тимĕркке çывăрса кайсан ун патне пырса выртма пулать-те-ха... Çук ĕнтĕ, юрату ĕçĕнче упăшкинех хăюллăрах пулмалла. Çутçанталăкра та çаплах вĕт. Автан хастарлăхне курсан хăшĕ-пĕрисен ăмсанмалли кăна юлать. Е йытăсене илер-ха. Мĕнле кĕрешеççĕ вĕсем. Тепĕр чух тата пĕчĕкреххисех хуçаланма тытăнать. Юнланса пĕтнĕ пулсассăн та ыттисене хăй тусĕ патне çывхарма памасть. Вăйлăраххисем те пăхăнаççĕ.

«Вăтанать ĕнтĕ вăл, – шутласа илчĕ Лена, – хамăн хăюллăрах пулмалла пуль». Акă паян вĕсем иккĕшех. Тимĕркке урамра. Чĕнмесĕр те кĕрес çук. Саманчĕ самай меллĕскер. Лена шăпах Пименăн ĕнер çуса типĕтнĕ кĕпине утюглать. Тавçăрса илчĕ: кĕпен чи çӳлти тӳмине çĕçĕпе татса илчĕ те айккинерех хучĕ, юлнă çипписене кăларса печĕ. Вара майкăпах çӳрекен Пимен патне пычĕ те: «Кил-ха, тытса пăхам, тӳмине хăш тĕлерех лартмалла-ши?» – терĕ. Кĕпине хăех тăхăнтарчĕ те çуха патĕнчен тыта-тыта пăхрĕ. Çав хушăра Пимена чуп туса илчĕ, ун çумне сĕртĕнсе ачашланчĕ. Анчах Пимен ыталамарĕ. Шикленерех: «Тимĕркке курсан аван мар», – терĕ. Кĕпине хывса пачĕ те килкартине тухрĕ. «Юратмасть вăл мана. Апла пулсан мĕншĕн авланчĕ-ха. Нивушлĕ çак лутра çуртра пурăнассишĕн вара. Ун пек пулсан лайăх хваттерлĕ хĕрарăмсем те пур вĕт-ха», – ӳпкелешсе илчĕ Лена.

Тепĕр темиçе кунтан ачи çывăрса кайсан арăмĕ упăшки патне пырса выртрĕ, ыталарĕ, чуптурĕ... Кăкăрĕнчен шăлса аллине кăвапа патнелле ярсан Пимен сиксе тăчĕ те Тимĕркке патне кайса выртрĕ. Ирхине вара Лена хăй мĕн шутланине уççăнах каларĕ:

– Юратмастăн эсё мана. Ма тесен, урăх хĕрарăм пур сан. Çавăнпа вăйна пĕтеретĕн те...

– Ан ухмахлан-ха эсĕ. Ача умĕнче çапла юрать-и вара?

– Мĕн, эсĕ мана нимĕн те чухламасть тетĕн-им. Чим-ха, тепĕр чух мĕншĕн-ха кая юлса килетĕн тата? Кама ыталатăн?

– Каланă вĕт сана пăшал пенĕ çĕре çӳретĕп тесе. Ман разряд пур. Ăмăртăва хатĕрленетпĕр.

– Вăт, вăт, савăшмалли мишене те çавăнтах тупрăн пулас. Мана вара чунсăр çын вырăнне хуратăн.

Пимен тумланчĕ те ним шарламасăрах ĕçе тухса кайрĕ.

«Атте лайăх вăл. Мана шкула çӳреме ранец илсе паратăп терĕ», – пĕлтерчĕ хăй шухăшне мĕн пулса иртнине тавçăрса илеймен Тимĕркке.

Каçпала самаях ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ Пимена юлташĕсем леçсе ячĕç. Лешĕ вара кĕнĕ-кĕменех диван çине тăсăлса ӳкрĕ те харлаттарма тытăнчĕ. Йĕркеллех çывăртăр-ха тесе Лена курткине хыврĕ, унтан чĕн пиçиххине вĕçертсе шăлавар пĕççисенчен туртрĕ. Шăлаварĕ хывăннăçемĕн трусси те чĕркуççи патне çитиех анса ларчĕ. Ак тамаша!? Ар хатĕрĕн пусĕ çук иккен. Аяларах вара мăйăр пек пĕчĕк чăмăрккасем кăна. Аманнă пулас, çĕввисем те паллă. Вăл хăйне мĕншĕн çапла тытни пирки текех нимле вăрттăнлăх та çук ĕнтĕ. Çакă вăл çамрăк арçыншăн калама çук пысăк хуйхă вĕт-ха. Хĕрхенмелли кăна юлать.

Мĕн пулса иртнĕ-ши вара унпала? Тен, аварие лекнĕ? Салтакра амантман пуль те? Тен, çакна пулах салтакри пирки калаçасшăн мар? Чечняра пулнă вĕт-ха. Ахальтен пенси памаççĕ пуль ĕнтĕ.

Пимен тумтирне майлаштарса çакрĕ те Лена шухăша путрĕ. Мĕн тумалла-ха? Мĕнле пурăнмалла? Тепĕр тесен тата юрату çимĕçне тутанмасăр пурăнакан хĕрарăм Лена çеç мар вĕт. Ĕçке ярăннă арçынсен автанлăхĕ тахçанах сӳнсе ларнă. Ячĕшĕн кăна упăшкипе арăмĕ шутланаççĕ. Хĕрарăм чăтăмлă вăл. «Ывăла çын тăвасчĕ. Ытти вăл нимех те мар», – турĕ пĕтĕмлетӳ Лена. Суранĕ пирки те ыйтса пĕлес килет те, анчах калаçăвне мĕнле пуçарса ярăн-ха. Тен, хăçан та пулин хăех каласа парĕ-ха тесе Лена кăштах лăпланчĕ. Ирхине хăйне ĕнер нимĕн те пулса иртмен пек тытма тăрăшрĕ. Çимеллисем хатĕрлесен Пимена вăратрĕ. Лешĕ тăнă-тăманах:

– Ĕнер хамах хывăнса выртнă-и вара эпĕ? – терĕ.

– Хăвах, хăвах, – лăплантарчĕ Лена. – Кăшт ытларах ĕçнĕ пулмалла.

– Урăх ун пек пулмĕ. Каçарăр мана.

Вара виççĕшĕ те мотоцикл çине ларчĕç те хуланалла çул тытрĕç. Каçхине çумăр çунине пула чутах лачакана кĕрсе ларатчĕç. Виççĕн пĕрле тĕксе кăларчĕç. Асфальт çине тухиччен çулĕ япăх çав. Никам та тăрăшмасть. Хула пуçлăхĕсем аса та илмеççĕ. Тимĕрккене ача пахчине леçсе хăварчĕç те ĕçе васкарĕç...

Пименăн пĕр лайăх йăла пур: Лена каланине итлет. Тепĕр чух хăйĕнчен аслăрах хĕрарăма амăшĕ вырăнне хунă пек те туйăнса каfive. Асламăшпе кăна ӳснĕрен мар-ши? Çакă Ленăна хăйне те килĕшме пуçларĕ. Ĕçленĕ чух вара: «Эй, арçынсем...» – тени кăна илтĕнет. Хуçалăхра вара, чăнах та, чылай пысăк улшăнусем пулчĕç. Пимен сарайне пысăклатса нӳхреп чавса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ мунча та пур. Пысăках мар та, çапах та хăйсен. Кăмакине питĕ мăнтăр тимĕр пăрăхран тунă. Аялта вут хутмалли, çӳлерех яка чулсем купаланă. Хĕртнĕ чул çине шыв сапсан мунча пĕр самантра вĕриленсе каять. Çапăнма кăна ан ӳркен. Милĕкне те хăйсемех хатĕрлеççĕ. Мотоцикл çине лараççĕ те – вăрмана. Пимен вара пĕччен кĕме юратать. Енчен те Тимĕркке пĕрле пырсан плавкипех çăвăнать.

Канмалли кунсенче те пĕрле пулма тăрăшрĕç вĕсем. Пулла, çырлана, кăмпана пĕрле çӳресси те йăлана кĕрсе пычĕ.

Шанхайра яланах мĕн те пулин пулса иртет. Хыпарсем часах сарăлаççĕ. Ӳсĕрпе çапăçни, кĕвĕçӳ харкашăвĕ, пушарсем... Сутса каякансем те пур. Илекенсем вара пурте тенĕ пекех чăвашсем.

Акă кĕтнĕ кĕркунне те çитрĕ. Паян Тимĕркке пĕрремĕш класа каять. Журнал çинче Таланов Владимир тесе çырнă. Ашшĕ парнелесе хăварнă хушаматпах çӳрет. Шкула ăсатса яраканĕ вара Пимен пулчĕ. Çĕнĕ тумпа, чечекпе пырса кĕчĕ шкула Таланов, ытти ачасенчен нимрен те япăх курăнмасть. Çӳллĕшĕпе те çавах. Вĕрен кăна, лайăх паллăсем илсе килтисене савăнтар. Çавна ытларах кĕтеççĕ вĕсем, ачана кашни кун лартса панă шалу пекех шутлаççĕ. Енчен те начар паллăсем çаклансан, ятлаçаççĕ, пăшăрханаççĕ. Хăйсене пĕлесчĕ, кашни кун хăйсен ĕçне тĕрĕслесе пĕр-пĕр паллăпа хаклас пулсан... Виççĕлĕх ĕçлеймен кунсем те темĕн чухлех. Паллах, пахалăх тĕлĕшĕнчен пăхсан. Анчах шкул ачин ун пек тĕрĕслеме май çук. Кусем вара кашни кун дневнике уçа-уçа пăхаççĕ. Юратьха, пĕрремĕш класра малтанлăха отметка лартмаççĕ...

Тӳрех вырăсла. Ачисем пурте тенĕ пекех чăвашсем пулсан та тăван чĕлхе урокĕ çук. Чăвашла калаçма та чараççĕ, атту вырăсла час вĕренейместĕр теççĕ. Тимĕрккене Шупашкара илсе килсе ача пахчине яман пулсан-и? Халĕ те йывăрлăхсем

çук мар. Хăш-пĕр сăмахсене, шухăшсене чăвашла ăнлантарни кирлех те-ха, мĕн тăвăн ĕнтĕ: вĕрентекенĕ çак питĕ усăллă ĕçе тăваймасть. Аптранипе вара ятлаçма пуçлать. Тепĕр чух тата кӳрентерекен сăмахсем те сике-сике тухаççĕ. Çапла пуçланса каять те ĕнтĕ чăваш ачисем пирки япăх шутласси. Тӳрех вырăс чĕлхипе çапса хуçаççĕ те ачан ăс-тăн аталанăвне пӳлеççĕ. Çичĕ çулхи ачан виçĕ çулхи ача шайĕнче калаçма тивет. Тăван чĕлхепе, тен, ним такăнмасăр интереслĕ юмах каласа панă пулĕччĕ. Ун вара халĕ: «Маша читает книгу», – тенипе çырлахма тивет. Тимĕркке те çак мелпех вĕренсе пычĕ. Иккĕмĕш класра тин лайăхрах ĕлкĕрсе пыракансен ушкăнне лекрĕ. Килти учитель çине тăнипе тесен те юрать пуль. Уççăнрах каласан, Пимен пулăшнипе ĕнтĕ. Чăтăмлăхĕ вара ун чăнах та пур. Пĕр япаланах темиçе хутчен ăнлантарса пама пултарать. Тимĕркке йăнăшсем тусассăн та сассине хăпартмасть. Арçынсем çапла вĕренсе ларнине курсассăн Лена хăй ăшĕнче Пимена миçе хутчен тав туман пуль. Каярах вара, Пимен пулăшайми пулсан, вĕренӳри йывăрлăхсене Тимĕркке хăех çĕнтерсе пычĕ...

Пурнăç куç умĕнчех тепĕр майлă çавăрăнса ӳкрĕ. Ĕçри çыхăнусем те улшăнса пычĕç, укçине те вăхăтра тӳлеме пăрахрĕç. Ку çеç те мар-ха, черете кĕтсе хваттерлĕ пулаяс çук, тен, кооператива кĕмелле мар-ши тесе Пименпа Лена укçа пухнăччĕ. Вăл та çунса кайрĕ. Унпала халĕ велосипед та илеес çук. Пур çĕрте те укçа, укçа... Директорсем, чиновниксем пуйса пычĕç, патшалăх хысни вара çӳхелсе юлчĕ. Чечня вăрçи те самаях ĕмсе тăчĕ пулас.

Акă тата тепĕр куляну: ĕç сахалланса пынине пула çынсен шутне чакарчĕç. Çав ушкăна Пимен та лекрĕ. Апат-çимĕç, тумтир, атă-пушмак хакĕсем ӳссе кайрĕç. Лавкка тулли тавар, черетсем те пĕтрĕç. Анчах çакă ырлăх укçаллисем валли кăна. Аякран тавар илсе килсе сутасси йăлана кĕчĕ. Кунта ĕççĕр тăрса юлнă арçынсем урăх çĕрелле тапса сикрĕç. Пĕрисем – Çурçĕрелле вахта мелĕпе ĕçлеме, теприсем – Мускав çывăхнелле унти çĕрме пуянсем валли çурт лартма. Пимен вара урăхла çул суйласа илчĕ.

Юлашки вăхăтра Лена Пимен çине хĕрхенӳллĕн пăхни уçăмлăрах сисĕне пуçларĕ. Шеллени те чуна ыраттарать иккен. Енчен те унччен Лена куçĕнче хăйне юраттарас туйăм тапса тăратчĕ пулсассăн, халĕ вара пачах урăхла. Упăшки ар тивĕçне пурнăçлайманнине пулах ĕнтĕ. Аптранипе Пимен «Интим» ятлă лавккана та кĕркелесе тухнăччĕ. Резинăран тунă ар хатĕрĕ туянас шухăш та пурччĕ. Хăяймарĕ. Вăтанни пĕтерет. Сăмахне

мĕнле пуçарса ярăн-ха. Ют çĕршыв çыннисен кун пирки нимле иментĕ те çук теççĕ. Эпир чăвашсем çав, ытлашши сăпайлă пулни чарать.

Тата тепĕр шухăш та çивĕчленсе пычĕ. Чечняран таврăннă чухне çамрăк салтаксем хăйсене кунта геройсене кĕтсе илнĕ пек йышăнаççĕ пуль тесе ĕмĕтленнĕччĕ. Çук, пулмарĕ. Чечняра çапăçни чуна суранлатни кăна пулчĕ. Мĕн кăна илтме тивмерĕ пуль халăх хушшинче: пĕри ырлать, тепри хурлать, виççĕмĕшĕ вăрçать. Çавна пулах Пимен хăй Чечняра пулни пирки калаçма та пăрахнăччĕ, Ленăна та шарламан. Халĕ вара... Тарăху туйăмĕ, курайманлăх капланса çитрĕ. Тыткăна лексессĕн хăйне мĕнле хĕн кăтартнине, мăшкăлланине кашни кунах аса иле пуçларĕ. «Çук, кун пек юрамасть. Тавăрмалла вĕсене», – турĕ пĕтĕмлетӳ Пимен. Кунпа пĕрлех тата тепĕр шухăш та Чечня еннелле туртрĕ. Хваттерпе укçа ыйтăвĕ канăç памасть. Тимĕркке те кĕçех ӳссе çитĕ. Нивушлĕ унăн та ĕмĕрне Шанхайрах ирттермелле вара? Тен, Чечняна контрактпа кайсассăн хваттер туянасси те çăмăлланĕ? Паллă спортсмен вĕт-ха, япăх снайпер пулас çук.

Пимен кирлĕ хутсене, тĕрлĕрен ăмăртура çĕнсе илнĕ дипломсене, медальсене илчĕ те военкомата кайрĕ. Анчах ĕç тухмарĕ, аманнă çын тесе Чечняна ямарĕç. Тепĕр кун килте никам та çук самантпа усă курса япалисене пуçтарчĕ те Канашалла вĕçтерчĕ. Ăçта кайнине хут çине çырса пĕлтерчĕ.

* * *

Моздока çитсенех госпитале кĕчĕ, хăйне сыватнă врачпа калаçса пăхас тесе ĕнтĕ. Чылай вăхăт иртнĕ пулсан та лешĕ Пимена палласа илчĕ. Мĕн сăлтавпа каялла килнине пĕлсен пулăшма тăрăшрĕ, хăй паллакан полковник патне пĕр-ик йĕрке çырчĕ те Пимена тыттарчĕ, аманнисене турттаракан машина çине лартса çитес çĕрелле ăсатрĕ.

Анчах ĕмĕтленни пурнăçа кĕриччен пайтах тăрăшмалла, салтакра вара пушшех. Санран ыйтса тăмаççĕ, мĕн хушнă, çавна тумалла. Пимен взвод командирĕпе икĕ хутчен те калаçса пăхнăччĕ, усси пулмарĕ. Юрать-ха нуша пулăшрĕ. Чечен снайперĕсем хамăр командирсене суйласа илсе шĕкĕлчеме тытăнсассăн тин Пимена аса илчĕç, алла снайпер винтовки тыттарчĕç. Шăпах çакна кĕтнĕ те ĕнтĕ ăста спортсмен.

Кунта вара пачах урăхла, ушкăнпа кĕпĕртетсе çӳресси мар, чеелĕх те, ăсталăх та, чăтăмлăх та унчченхинчен ытларах кирлĕ. Туйăм та урăхларах, ăмăртури пек азарт та пур пек.

Ăста снайпера тăшман часах сисет. Вара снайперпа снайпер хушшинчи тытăçу, урăхла каласассăн, ăмăрту пуçланса каять. Тепĕр чух тата снайпера часрах пĕтерес тесе пĕтĕм хĕç-пăшалран пеме тытăнаççĕ. Ниçта кайса кĕме çук. Пĕртен-пĕр çăлăнăç – пытанса пенĕ вырăна улăштарса пыни.

Пимен халĕ унчченхи пек салтак мар, хăй пăшалĕн уссине хăй куçĕпе курать. Командирсем те урăхларах калаçма пуçларĕç. Пĕр çын та самай пысăк усă кӳме пултарать иккен.

Пимена тахçантанпах пĕр ыйту канăç памастчĕ: «Мĕнле-ха капла, Чечняра хĕç-пăшал тăвакан заводсем пĕрре те çуккă, салтак тумĕ те çĕлемеççĕ. Анчах унти салтаксен мĕн кирли пурте пур. Вĕсен аллинче вĕр-çĕнĕ автоматсем. Патронсем те нихăçан та пĕтес çук. Мĕнле майпа пирĕн хĕç-пăшал вĕсен аллине лекет-ха?» Вăрçă пуриншĕн те пĕр пек япала мар иккен: пĕриншĕн – куляну, çухату, теприншĕн – пуйса юлмалли меллĕ вăхăт. Укçа вăл куççăр. Ун умĕнче тăшман та тăшман мар. Вăрттăн сутнă пăшал хăй ĕçне тăватех. Шăпах çавăн пек пăшал кĕпçинчен вирхĕнсе тухнă пуля амантрĕ те ӗнтĕ Пимена. Вăхăтра пулăшу парайманнине кура тăна кĕмесĕрех ку тĕнчерен уйăрăлса кайрĕ. Кĕçех Шупашкара тупăк çитрĕ. Калама çук пысăк хуйхă. Уйрăмах Тимĕрккене йывăр пулчĕ. Юратнă çынни вилнишĕн кăшкăрсах макăрчĕ. Çакна курсассăн амăшĕ те чăтса тăраймарĕ...

Пытарма йывăрах пулмарĕ, пĕрле ĕçлекенсем чылайăн килчĕç, военкомат та çине тăчĕ. Масар çинче Лена хытă макăракан хура тутăрлă хĕрарăма асăрхарĕ. Пименпа пĕр çулалласкер. Асăну апачĕ çинĕ çĕре те пычĕ. Шăпах çавăнта паллашрĕç те ĕнтĕ вĕсем. Пĕрле выляса ӳснĕ тусĕ иккен. Çынсем столовăйĕнчен кайса пĕтичченех Ленăпа пĕрле ларчĕ, кайран ăсатма та пычĕ. Акă кӳршĕсем те килĕсене саланчĕç. Вара вĕсем виççĕшех тăрса юлчĕç. Тимĕркке çывăрса кайсассăн икĕ хĕрарăм хушшинчи калаçу çапларах йĕр çине ӳкрĕ.

– Лена, кала-ха, – пуçларĕ çамрăкки, – ывăлу сан Пименранах-и вара?

– Ку сана мĕн тума кирлĕ тата? – терĕ тĕлĕнсе Лена çакă кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ыйту çине хурав парас вырăнне. Ыйту çине ыйту пулчĕ ĕнтĕ.

– Тĕрĕссине пĕлес килет ман. Унсăрăн ман ăшăмра лăпкăлăх пулас çук. Юратнă эпĕ ăна, хытă юратнă, пĕрле пурăнса ирттеретпĕр пуль тенĕччĕ. Анчах вăл ман юратăва йышăнмарĕ, салтакран килсенех пăрăнчĕ, хулана тухса шăвăнчĕ. Унтанпа тĕл пулса калаçман. Вилнине пĕлсессĕн чăтса тăраймарăм, килтĕм, упăшкам та чармарĕ.

– Мĕншĕн ывăлăм пирки ыйтатăн-ха?

– Мĕнле калас... Качча тухсассăнах эпĕ пĕррехинче упăшкана Пимен тесе персе ятăм. Вăл мана юнашар лартрĕ те питĕ япăх хыпар пĕлтерчĕ. Пимен вăл Чечняра плена лекнĕ тет. Лешсем вара унăн ар хатĕрне касса илнĕ тет те çĕрле, тĕттĕмре каялла пырса пăрахнă тет. Ирхине тин тупаççĕ ăна. Вара часрах госпитале ăсатнă. Чылай выртнă тет вăл.

– Çакна упăшку ăçтан пĕлет вара? Пĕрлех пулман пуль вĕт.

– Çук, Хусана кайнă чухне поезд çинче пĕринпе паллашса кайнă та, çавă каласа пачĕ тет. Иксĕр пĕрлешнине пĕлсессĕн питĕ савăннăччĕ. Паян вара ывăлна курсассăн чăннипех тĕлĕнтĕм, тимлĕнрех пăхсан Пимен сăнĕ те пур пек. Иккĕленӳ ан пултăр тесе ыйтрăм ĕнтĕ.

– Çапла çав эпир, хĕрарăмсем, часах ĕненетпĕр. Упăшку сана хăйне Пимен тесе чĕнесрен çапла каланă ĕнтĕ. Пимен вăл йĕркеллĕ арçынах пулнă. Кăштах аманнă та пулас, анчах тухтăрсем ăнăçлă сыватнă ăна, – терĕ Лена чун пăлханăвне кăтартас мар тесе тăрăшса.

– Тимĕркке макăрнине курсассăн Пимен ывăлех пуль терĕм çав. Ют арçыншăн ун пек хуçăлас çук. Пĕчĕк ача мар вĕт.

Çапла вара икĕ хĕрарăм тул çутăличченех калаçса ларчĕç. Асăнмалли кунсене те палăртса хучĕç. Пĕрне-пĕри сывлăх сунсах уйăрăлчĕç...

Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ. Тимĕркке те шкул пĕтерчĕ, института кĕчĕ. Анчах Пимен умĕнчи тивĕçе манмарĕç вĕсем, çимĕке те кашни çулах çӳрерĕç. Манма май та çук. Хăй çуккă пулсан та ун пулăшăвĕ кашни уйăхрах сисĕнет, институтра вĕреннĕ чухне те укçа илсе тăчĕ. Студентшăн çакă калама çук пысăк çăмăллăх. Тен, çавна пулах Владимир Таланов вĕренӳре самай пысăк çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Диплом ĕçĕшĕн виççĕ кăна лартса парсан та пуçне усмарĕ. Халĕ вара Варук аппана пулăшас тĕллевпе çӳрет.

Кĕтнĕ хыпар çитрĕ. Каланă пекех, çырупа ярса пачĕç. Варук аппана хула пуçлăхĕ патне чĕнеççĕ иккен. Ун выранне вара Таланов хăй кайрĕ. Варук аппан шанса уйăрнă çынни пулнине çирĕплетекен хута кăтартсан ăна хула пуçлăхĕ патне кĕртрĕç.

– Эсир тăратнă хутсене пăхса тухнă хыççăн калаçса пăхас терĕм, – пуçларĕ сăмахне мэр. – Варвара Филимоновнăна çав çурт мĕн тума кирлĕ вара? Унта ăшă та кĕртмен, склад выранне кăна усă кураççĕ. Юхăнса кайнăскер кăна вĕт.

– Çапла пуль те, ашшĕ çуртне чăн-чăн хуçа шучĕпе кĕрсе курасшăн ĕнтĕ вăл. Çакă вăл демократи тапхăрĕшĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту, – хуравларĕ Таланов. – Калаçу кунта принцип пирки пырать.

– Хăй мĕншĕн килмерĕ тата?

– Сахăр чирĕпе аптрать çав. Больницăра выртать.

– Хăш больницăра вара?

– Республика больницинче ĕнтĕ.

– Ыранах социаллă пулăшу енĕпе ĕçлекенсене ярăп-ха. Тен, вăл укçан илме килĕшĕ. Паллах, пысăк укçах пулас çук, хакĕ пĕтнĕ ĕнтĕ унăн. Çапах та сывлăхне тӳрлетме кирлĕ тăкаксене саплаштармалăх илĕ.

– Юрĕ, калаçса пăхăп, – тесе Таланов тухрĕ те скверта кăштах уткаласа çӳренĕ хыççăн Морсков çуртне кайса пăхас тесе Атăл хĕрринеллеваскарĕ. Ак тамаша, кунта хĕрсе кайсах юсав ĕçĕсем пыраççĕ иккен. Шыв кĕртме тесе канавне те чавса уçнă. Экскаваторĕ те кунтах. «Мĕнле-ха капла? Нивушлĕ хула пуçлăхĕ тĕрĕссине каламарĕ. Çук. Ун пек пулма та пултараймасть. Е кусем ăна пĕлтермесĕрех пуçăннă», – иккĕленсе илчĕ Таланов.

Çав хушăра Морсков çурчĕ патне ют çĕршывра кăларнă машина çитсе чарăнчĕ. Икĕ çамрăк тухрĕç те юсав ĕçĕ тăвакансене темле кăтартусем пачĕç. Яка тумланнăскерсем хăйсене хуçасем пекех тыткалаççĕ. Пĕри экскаватор çумĕнче тăракан арçын патне пычĕ, кĕсйинчен пĕр ывăç укçа кăларчĕ те шутласа илсе лешне тыттарчĕ. Экскаваторщик хăйне тăрантаракан тимĕр каюра çине çăмăллăн хăпарса ларчĕ те урăх çĕрелле вĕçтерчĕ. Лешсем те нумай тăмарĕç, кайрĕç.

Таланов пĕр самантлăха аптраса тăчĕ. Хула пуçлăхĕ патне каяс шухăш та пурччĕ. Анчах кунта ĕçлекенсем чăвашла калаçнине илтсен чăтса тăраймарĕ, вĕсем патне çывхарса сăмах тапратрĕ:

– Вăй патăр ĕçлекенсене... Мĕнле çурт пулать вара ку?

– Халлĕхе хамăр та пĕлместпĕр-ха, – терĕ пĕр хĕрарăмĕ.

– Офис текенни пулать терĕç мар-и? – хутшăнчĕ тепри.
– Хуçи тин çеç килсе кайрĕ вĕт. Курмарăн-им?

– Хăçантанпа ĕçлетĕр вара кунта?

– Виççĕмĕш кун ĕнтĕ.

– Кам тĕпчесе ыйтать вара кунта? Çӳреççĕ чăрмантарса, – терĕ пĕр арçынни çывăхрах пырса тăрса. Асли пулмалла. Таланов пăрăнса утрĕ. «Заявлени панă хыççăн тапраннă ĕç иккен ку», – шутласа илчĕ вăл. Унтан каллех хула советне çул тытрĕ. Анчах пуçлăх патне кĕме май килмерĕ. Тухса кайнă

иккен. Таланов кайран та кашни кун тенӗ пекех секретарӗ патне шӑнкӑравларӗ. Пӗррехинче вара: «Хӑҫан килмеллине хамӑрах пӗлтерӗпӗр», – терӗ лешӗ.

Варук аппа патне кайсан Таланов тепӗр хыпар илтрӗ. Ун патне хула администрацийӗнчен пӗр хӗрарӑм килсе кайрӗ тет, ашшӗ ҫурчӗшӗн укҫан илме сӗнет тет.

– Тен, чӑнах та ҫапла тумалла мар-ши, – терӗ Варук аппа. – Хӑвна та пысӑк чӑрмав вӗт.

– Ҫук, ҫук. Парӑнма юрамасть. Камӑн та пулин ҫакӑн пек ӗҫе пуҫарса ямаллах ӗнтӗ. Ыттисемшӗн те усӑллӑ пултӑр. Варук аппа, леш хӗрарӑм тепре килсен аҫу ҫуртнех ыйт. Е ун вырӑнне икӗ пӳлӗмлӗ хӑтлӑ хваттер уйӑрса паччӑр эппин. Ватлӑхра канлӗрех пурӑнса кур ӗнтӗ.

– Темле ҫав. Пӗччен пурнӑҫ... Утайми пулсан тата кам пӑхӗ?

– Ун пирки ан хӑра. Хамӑр пӑхӑпӑр. Апатне пӗлсе ҫисен, уколне вӑхӑтра тусан сахӑр чирӗпе те чылай пурӑнаҫҫӗ.

– Сана шансан ҫеҫ. Хӑв пӗлнӗ пек ту эппин, – терӗ Варук аппа.

Таланов больницӑран тухнӑ ҫӗрте ӑна иккӗн кӗтсе тӑраҫҫӗ.

– Таланов эсӗ пулатӑн-и? – ыйтрӗ пӗри.

– Эпӗ.

– Сана иртенпех хула пуҫлӑхӗ кӗтет. Шыраса тупма хушрӗ. Лар часрах, – сӗнчӗ тепри машина алӑкне уҫса. Таланов кӗрсе ларчӗ. Виҫҫӗмӗш ҫын та пур иккен. Алӑк уҫаканни те ларчӗ. Таланов икӗ тӗреклӗ ҫамрӑк хушшине лекрӗ. Машина тапранса кайрӗ. Республика больницин пысӑк хапхинчен тухсан машина Етӗрне еннелле пӑрӑнчӗ.

– Мӗншӗн унталла каятпӑр вара, – ыйтрӗ Таланов.

– Мэр патне кӗриччен калаҫса илмелли пур, – терӗ пӗри.

Водителӗ вара ҫав тери хытӑ хӑвалать, ҫул хӗрринче ҫакӑнса тӑракан паллӑсене те пӑхӑнмасть. Чаракан та ҫук. Хуларан тухса пӗр-ик ҫухрӑм пек кайсан машина сылтӑмалла пӑрӑнчӗ те пысӑках мар уҫланкӑра чарӑнчӗ. Пурте тухрӗҫ. Калаҫӑва малта ларса пыраканни пуҫларӗ.

– Таланов юлташ, мӗскер эсӗ сӑмсуна пур ҫӗре те чикетӗн, теприсен ҫулне пӳлетӗн, – терӗ вырӑсла.

– Ӑнланаймарӑм-ха, мӗн пирки вара эсир?

– Ӑнланатӑн, лайӑх чухлатӑн... Морсков ҫурчӗ пирки мӗншӗн ҫав тери тапалашатӑн вара. Леш карчӑка вӑл нимӗн тума та кирлӗ пулас ҫук. Эсӗ мӗн, карчӑк вилсен хӑвна юлать тетӗн-им?

– Саккунсем ун майлине пӗлместӗр-им тата?

– Саккунӗ вӑл сана валли те тупӑнӗ-ха. Ҫакна куратӑн-и? – терӗ тепри тукмак пек чышкине кӑтартса. – Тутанса пӑхас килмест-и?

– Ан васка-ха эсӗ, – чарчӗ пӗрремӗшӗ. – Хӑех тавҫӑрса илӗ-ха. Ӑссӑрскер пулас ҫук... Вообщем, леш карчӑка кала, уйӑрса панӑ укҫана илтӗр те лӑплантӑр. Ку вара хӑвна, – сӗнчӗ Таланова ҫӗр тенкӗлӗх долларсем.

– Ҫук, ҫук. Мӗскер эсир... Илместӗп...

– Илетӗн! – терӗ тепри пысӑк чышкипе ҫурӑмран тӑрӑслаттарса.

– Мана нимле укҫа та кирлӗ мар. Варвара Филимоновна та илес ҫук, – терӗ Таланов ыратнине чӑтса.

– Апла пулсан!..

Иккӗшӗ те пӗр харӑс сиксе ӳкрӗҫ те Таланова авса антарчӗҫ. Тепри вара шприц йӑтса пычӗ. Вӑйпах укол туса ячӗҫ. Кӑшт вӑхӑт иртсен ҫӑварӗнчен шурӑ эрех ячӗҫ. Унтан шӑлаварӑн хыҫалти кӗсйине леш долларсене чикрӗҫ те Таланова кӗртсе лартрӗҫ. Вӑл халӗ ҫывӑрса кайнӑпа пӗрех. Машина хуланалла ҫул тытрӗ...

Кӳршӗ хӗрарӑмӗ хӑйсен килӗ умӗнче Таланов выртнине курсан Лена патне чупса кӗчӗ. Ӳсӗрскерне сӗтӗрсе кӗртсе диван ҫине выртарчӗҫ.

– Кун пеккине нихӑҫан та курманччӗ, – терӗ амӑшӗ. – Сӑра кӑна ӗҫет вӗт-ха вӑл. Мӗн пулчӗ-ши вара?

– Ҫамрӑксене ӑҫтан пӗлсе пӗтерӗн. Темле савӑнӑҫа пула ӗҫнӗ-ха, – тесе кӳршӗ хӗрарӑмӗ тухса кайрӗ.

Хыпӑнса ӳкнӗ амӑшӗ ним тума аптранипе ҫӑварӗ патне пӗшкӗнсе шӑршласа пӑхрӗ. Чӑнах та эрех шӑрши перет. Вӑратас тесе силлесе пӑхрӗ, ӗҫ тухмарӗ. Вара ҫывӑрма выртрӗ.

Ирпе-ирех алӑкран шаккарӗҫ.

– Кам унта? – ыйтрӗ амӑшӗ.

– Милици! – илтӗнчӗ арҫын сасси.

Алӑк уҫӑлчӗ. Икӗ милиционерпа тепӗр ҫамрӑк, леш Морсков ҫурчӗ патӗнче экскаваторщике укҫа параканни кӗрсе тӑчӗҫ. Капитанӗ тӳрех шалалла утрӗ. Таланов диван ҫинче выртнине курсан: «Ҫакӑ-и?» – терӗ. Леш ҫамрӑк диван патнерех пырса пӑхрӗ те пуҫне сулчӗ. Шӑв-шава пула Таланов вӑранчӗ те тӑрса ларчӗ, куҫӗсене шӑлса илчӗ.

– Мӗн пулнӑ вара кунта, – ыйтрӗ Таланов.

– Ахальтен килмен ӗнтӗ. Мӗн туса хутӑн, ывӑлӑм? – терӗ амӑшӗ макӑрас пек сасӑпа.

– Документсем пур-и сан? Паспортна кӑтарт-ха, – хушрӗ капитан.

Таланов комод ещĕкне уçрĕ те паспортне илсе пачĕ. Лешĕ уçа-уçа пăхсан мĕншĕн килнине пĕлтерчĕ:

– Офис çаратнă çĕре хутшăннă вăл.

– Мĕн эсир? – хăраса ӳкрĕ Таланов.– Адреспа йăнăшрăр пуль.

– Палларăм эпĕ ăна, ман офис патĕнче çӳренине темиçе хут та курнăччĕ, – терĕ усламçă.

– Пулма пултараймасть. Ман ывăлăм ун пек çын мар вăл, – хута кĕме тăрăшрĕ амăшĕ.

– Ухтару тусан веçех паллă пулĕ. Кӳршĕсене чĕнсе килха, – хушрĕ капитан сержанта. – Тен, укçине хăв ирĕкпех тавăрса парăн.

– Нимле укçа та çуккă ман.

Сержант икĕ çынна чĕнсе килчĕ. Пĕри леш ĕнерхи хĕрарăмах.

– Сирĕн умăрта халĕ ухтару тăватпăр, – терĕ капитан. – Тепĕр хут калатăп, хăв ирĕкпе парсан çăмăллăх пулĕ.

– Ман мĕнпур укçа та çакă çеç, – терĕ Таланов комодран илсе.

– Долларсем ăçта?

– Нимле доллар та çук.

Ухтарăва тумтиртен пуçларĕç. Капитан шăлавар кĕсийинчен çăраççисемпе долларсем туртса кăларчĕ.

– Ку мĕскер тата. Доллар мар-и? Кам укçи? Çак уçăсемпе уçрăн-и вара?

Таланов аптраса ӳкрĕ. Леш ĕнерхи чăрсăрсем чиксе янă ĕнтĕ. Нимле офисран та мар.

– Хамăнах вăл. Юлташран илнĕччĕ, – персе ячĕ Таланов хăранипе.

– Номерĕсене пăхасчĕ. Эпĕ вĕсене веçех çырса пыратăп, – сĕнчĕ усламçă хут татки кăларса.

Вара вĕсем çĕр тенкĕлĕх долларсене сĕтел çине сарса хучĕç те номерсене танлаштарса пăхма тытăнчĕç.

– Доллар та доллар теççĕ, мĕн тĕслине халь кăна куртăм. Симĕс иккен. Илемлех те мар, – терĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ.

– Хакĕ илемĕнчен килмест вăл, – сасă пачĕ пĕрремĕш хут сержант.

– Ман укçасем... Акă пăхăр, пăхăр!

– Чăнах та, хут çинчи номерсемех, – тĕллесе кăтартрĕ тепĕр кӳрши.

– Анчах пурте çуккă кунта. Ыттисем ăçта-ши, – ыйтрĕ усламçă.

– Ĕçсе янă ĕнтĕ вăл. Ĕнер ним пĕлми ӳсĕрччĕ. Аран кĕртсе вырттартăмăр, – çине тăчĕ хĕрарăм.

– Вăйпах ĕçтерчĕç мана...

– Ну çитĕ, – чарчĕ капитан. – Ман ывăл, ман ывăл... Амăшĕсем яланах çапла вĕсем... Халĕ протокол çырар...

Таланова пĕрлех лартса кайрĕç. Амăшĕ вара йĕпеннĕ куçĕсене шăла-шăла пăхса юлчĕ. «Анне, айăплă мар эпĕ. Никама та çаратман», – тени кăна кăштах лăпкăлăх пачĕ. Ывăлĕ ун пек çын маррине чĕри туятех çав. Лешĕ вара каллех Чечекова аса илчĕ. Тен, ăна пĕлтернĕ пулсан... Анчах вăл халь хулара çук, командировкăра.

Милицие çитсен Таланова халь çеç тытса килнисен пӳлĕмне хупса лартрĕç. Иккĕшĕ маларах лекнĕ. Пĕри аллă çулалла çывхарнă типшĕм арçын, тепри вара çамрăк ача, тăххăрмĕш е вуннăмĕш класра вĕренмеллискер. Пăхсах паллă, шкула çӳрекенскер мар ĕнтĕ.

Таланов кун пеккине кĕтменччĕ. Мĕнлерех тыткаламаллаха? Кĕнекесенче çырнине ĕненсен, кунта çемçешкесене килĕштерсех каймаççĕ. Тен, чăн-чăн преступник пек курăнни вырăнлăрах та. Атту кусенчен темĕн те кĕтме пулать. Халĕ те ав темскер пулса иртнĕ курăнать: çамрăкки питĕ хăравçă куçсемпе пăхать, тути хĕрринчен сăрхăнса тухакан юна шăлашăла илет. Таланова кунта кĕртсе янăшăн кăштах хĕпĕртенĕ пек те туйăнать. «Кусем пĕр-пĕринпе хирĕçӳллĕ пулни япăх мар-ха», – шутласа илчĕ Таланов.

– Тепĕр хут калатăп, профессор господин, эпĕ никама та нимĕн те каламан, – терĕ чĕтрекен сассипе çамрăкки.

– Чарăн! Хуп çăварна!

«Профессор» теççĕ ĕнтĕ кăна», – тавçăрса илчĕ «айăпа» кĕнĕ тĕпчевçĕ. Шиклĕх туйăмĕ кăштах чака пуçларĕ. Профессор тесе ахальтен чĕнес çук. Вăйпа илеес çук-ха, Таланов унтан çамрăкрах та, тĕреклĕрех те. Çапах та сыхланулăрах тытма тăрăшмалла.

– Паллашар эппин, эсĕ кам пулатăн? – пуçларĕ калаçăва арçын.

– Хăвăр тата кам? – персе ячĕ Таланов.

– Ыйту çине ыйту... Çук, йĕркесем кунта ун пек мар. Ыйту параканĕ эпĕ. Ыйтнă пулсан – хуравла!

– Эсĕ Профессорччĕ пулас.

– Ăçтан пĕлетĕн вара?

– Пайтах илтнĕ, анчах курма тӳр килмен. Мана... Кувалда теççĕ – тухса кайрĕ пуçа ăнсăртран пырса кĕнĕ сăмах.

– Кувалда? Илтмен.

– Çĕннисенчен ĕнтĕ.

– Мĕне пула çаклантăн тата? И вообще, сан специализаци пур-и? Е çапăсса çӳрекенскер кăна?

– Офисри сейф пирки ĕнтĕ.

– Вăт, куратăн-и, – юнаса илчĕ çамрăккине, – çынсем ăçталла пăхаççĕ. Миçе хут каламан пуль сире пенсионерсене, аран çӳрекен карчăксене тĕкĕнмелле мар тесе. Вĕсен ахаль те пурнăçĕ хĕсĕк. Кусем вара пенси паракан вырăнсене пĕр-пĕрин хушшинче пайласа тухнă та лавккана е пасара каяканнисене йĕрлесе çӳреççĕ. Çылăхлă вăрăсем. Çăмăл мелпе ĕçлеççĕ. Аран уткаласа çӳрекен çын укçине кăларса илесси ĕнтĕ вăл... Нимле хавхалану та, киленӳ те çук. Çаксене вĕрентес тесе пайтах вăй хунă, теори тĕлĕшĕнчен те, практикăра та. Вĕсем вара...

– Нивушлĕ ку япалан та теори никĕсĕ пур вара? – тĕлĕнчĕ Таланов.

– Пулмасăр. Практика енчен илсен çакă вăл чăн-чăн искусство. Пысăк ăсталăх кирлĕ. Пӳрне вĕçĕнчи нервсене лайăх ĕçлеттермелле.

– Теори пайĕ вара?

– О, кунта та пĕлмелли сахал мар. Пĕрремĕшĕ вăл, паллах, çынна психологи тĕлĕшĕнчен асăрхама пĕлни. Çав тери чалак çиççе çӳрекен çамрăк хĕрарăмсемпе ĕçлеме çăмăлрах. Пирĕн партнерсем тесен те юрать. Хăй илемĕпе киленсе ытти арçынсем çине пăхкалакансем те çавсемех. Сыхлăхĕ çукпа пĕрех вĕсен. Иккĕмĕш, материаловедени тĕлĕшĕнчен. Кунта вара пире пулăшакансем – целлофан сумка туса сутакансем. Вĕсене кашни уйăхрах премии парса тăрсан та ытлашши пулас çук. Пир хутаççене е сăран сумкăсене те касма пулать, паллах, ĕç хатĕрĕсем пахисем кирлĕ. Кусем вара ăсталăха ӳстерес вырăнне... – каллех ятласа илчĕ лешне Профессор. – Сейф уçма пултаракан упасен çылăхĕ пысăкках пулас çук. Укçаллисене сăптăраççĕ. Çаклансан вара çăлăнма çав тери хĕн. Милици те, суд та çавсене майлă ĕçлет.

Таланов хăвăрт чухласа илчĕ. Ун халĕ калаçăва урăх еннелле пăрса ямалла. Енчен те Профессор хăй пирки тĕплĕнрех ыйтма тытăнсан, нимех те калаяс çук.

– Профессор ятне ахальтен паман ĕнтĕ. Хăв тата мĕнле майпа кунта лекрĕн?

– Халлĕхе паллах мар-ха. Те çак шĕвĕрккесем темскер пĕлтернĕ-ха, те урăххи...

– Ман совесть сан умра таса, – терĕ çамрăкки.

Çав самантра алăк уçăлчĕ те Профессора чĕнсе кайрĕç. Кусем вара иккĕшех тăрса юлчĕç.

– Сана мĕнле чĕнеççĕ тата? – ыйтрĕ Таланов.

– Пăшатан.

– Мĕншĕн унтан çав тери хăратăн вара?

– Хытă тытать вăл пире. Хăй хушнă пек тумасан... Ун çумĕсем хăйĕнчен те усал. Çавсене хушсан шăмăсене аванах шĕкĕлчеççĕ. Пирĕн халь çĕнĕ системăна куçнă вăхăт.

– Мĕскер эсир иксĕр те наука çыннисем пек калаçатăр?

– Профессор çапла калать те. Компьютер çине куçнă вăл. Унта укçаллăрах çынсен адресĕсене кĕртнĕ. Хăшĕ-пĕрисен ăçта ĕçлени те, шалу хăçан илни те паллă. Пирĕн вара кашниннех уйрăм çуртсем. Пасара е лавккана хăшĕ тата мĕнле кун çӳренине те пĕлетпĕр. Профессор вăл яланах: «Пирĕн ĕçре мораль пулмалла», – тет. Чухăнсене тĕкĕнсен алăран çапать. Маншăн пулсан кунтах лайăх. Тухсан хама мĕн кĕтнине пĕлместĕп. Май килсен, тархасшăн, калаçса пăх-ха унпала. Ман хута кĕр. Милицирен ытла çавăнтан хăратăп.

Пĕр çур сехетрен Профессора килсе ячĕç те Пăшатана илсе кайрĕç.

– Манпа калаçма çăмăл теççĕ пуль, – пуçларĕ Профессор. – Ытла йӳнĕ хакласçĕ.

– Мĕн пирки чĕнчĕç вара?

– Пулăшу ыйтаççĕ. Çӳлтисем хытă хĕстернĕ пулмалла. Вĕри çатма çинчи пăрçасем пек. Пĕр питĕ пысăк шишкă хĕрне ювелир лавккинче пулнă хыççăн тасатнă. Япали питĕ хаклăскер тет. Çавна тавăрса пама манăн пулăшмалла тет. Пулăшмасан ĕçсене тапрататтпăр теççĕ. Шантаж тăваççĕ. Эпĕ те услови лартрăм, Пăшатана кăлармасан калаçмастăп терĕм. Çăлас пулать ăна. Хам ачасем вĕт.

Çак сăмахсем тĕлĕнтерсех ячĕç. Юн тухиччен тутаран çапнă çыннăн чĕринче те ырă туйăм валли вырăн пур иккен. Мĕнле общество вара ку? Пĕрне-пĕри сыхласси, çăласси йăлара иккен. «Ман хута кам кĕрĕ-ха? Мĕнлерех тыткаламалла-ха? Пĕрремĕш хут вĕт, – шухăша кайрĕ Таланов. – Тен, Профессор канаш парĕ». Çапла, сăмах хыççăн сăмах, пирĕн герой хăй мĕнле çулпа çакăнта çитнине веçех каласа пачĕ.

– Хула пурнăçне пачах та пĕлместĕн иккен эсĕ, – тытăнчĕ Профессор. – Хуçасем камсем тетĕн эсĕ?

– Кун пирки шутламан. Вăхăт та пулман. Вĕреннĕ эпĕ. Çав хушăрах укça пултăр тесе темиçе çĕрте ĕçленĕ. Паллах, пысăк укçаллă çĕрте мар ĕнтĕ.

– Интеллигенци вăл Ленин калашле хум çинче унталла-кунталла чӳхенсе выртакан каяш кăна. Идеалпа киленсе пурăнаканскерсем эсир пурнăç тути-масине нихăçан та тĕрĕс

чухлаймастăр. Калаçатăр, тавлашатăр, суйлавсем ирттеретĕр, депутатсенчен, министрсенчен мĕн те пулин лайăххи кĕтетĕр. Пĕлетĕн-и эсĕ, хулана ăна тахçанах пайласа пĕтернĕ. Хула хыснине кĕмелли укçан самай пысăк пайĕ уйрăм çынсен аллине лекет. Хула вăл тăванлăхпа çыхăннă пилĕк-ултă çемье аллинче. Ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем урлă ярса илнĕ. Пĕрисем лавкка хыççăн лавкка лартаççĕ, пасарсене пăхăнтарнă, теприсем çăмăл машинăсене вăхăтлăха лартмалли вырăнсене хăйсен аллине илнĕ, бензоколонкăсем те çавах. Вĕсемшĕн нимле милици те çуккă, сурса кăна иртсе каяççĕ. Йĕрке халĕ пачах тепĕр майлă çавăрăнса ӳкрĕ. Милици те, суд та çав ачасен аллине ларассишĕн ăмăртать. Паллах, ашшĕсем пысăк начальниксем пулнăран. Влаçра ларакансем паянхи пек пуян нихăçан та пулман. Укçа хăех юхса пырать, кĕсьене кăна анлăрах уçса хур. Парас текеннисем те черетпех тăраççĕ. Илме кăна ан ӳркен. Вăтанасси пирки халĕ калаçма та кирлĕ мар. Тултар кăна. Пĕчĕкреххисене вĕтĕрех çăмах, аслисене шултри ĕнтĕ. Вăт çапла, шăллăм.

– Сана итлесен... Пур çĕрте те укçа хуçаланать. Тĕрĕслĕхе те çавă хупăрласа тăрать.

– Тĕрĕслĕх пирки ан шарла-ха эсĕ. Пуçлăхсем халь никам умĕнче те явап тытмаççĕ, мĕн тăвас тенĕ çавна тăваççĕ. Халăх укçи пирки те яваплăх çуккă. Ĕçлекенсем валли укça çуккă тенине нихăçан та ан ĕнен.

– Сан логикăна ăнкартсан леш пуçтахсем вĕсем пысăк начальниксен ачисем пулса тухаççĕ.

– Ай маттур, тавçăруллăскер иккен эсĕ. Енчен те укçаран йывăр самант сиксе тухсассăн, ман пата пыр. Аслă пĕлӳ илнисем пирĕн ĕçре те кирлĕ. Сана халь икĕ сĕнӳ паратăп: адвокатсăр калаçăва ан пуçла, унччен каланă сăмахна ан йышăн.

– Адвокатне ăçтан тупăн-ха?

– Çине тăрса ыйтсан хăйсемех чĕнеççĕ. Йĕрки çапла...

Акă Таланова та чĕнсе илчĕç. Çамрăк хĕрарăм ларать, пăхма илемлĕскерех. Калаçасса та çемçе сасăпа кăна калаçать. Нимле хаярлăх та çук. Пачах та кинори пек мар. Унта следователь патне кĕрсен калаçу ăнăçлăрах пултăр тесе ĕнтĕ туртмалли те сĕнеççĕ, шыв та сыптараççĕ. Кунта вара...

– Студент-дипломник эппин, – терĕ следователь ахальтен кăна калаçнă пек. – Дипломне хăçан илмелле вара?

– Обходной листа тăратнă пулсан тепĕр виçĕ кунтан. Халĕ ĕнтĕ... Хамах айăплă. Çав машинăна лармалла пулман ман.

– Мĕн пирки эсĕ? Йĕркипе каласа пар-ха.

Таланов адвокат çинчен манса кайсах мĕнле сăлтава пула çакăнта лекнине пĕлтерчĕ. Нимĕн те сиктерсе хăвармарĕ.

– Эсĕ ку дедективлă сюжета пĕр-пĕр писатель валли хăварха. Халĕ вара ĕç пирки. Нимле офиса та кĕмен тесшĕн ĕнтĕ эсĕ.

– Кĕмен. Тăна çухатиччен хампа мĕн пулса иртнине веçех астăватăп. Киле мĕнле çитнине калама пултараймастăп.

Следователь пĕр папкăран хут листи илчĕ те Таланов умне хурса пачĕ. Обходной лист иккен.

– Ку мĕнле сирĕн алла лекнĕ вара?

– Çаратнă офис алăкĕ патĕнче тупнă ăна. Уçă кăларнă чухне тухса ÿкнĕ пулас. Урапа та таптанă. Сан пушмак йĕрри те пур.

– Веçех çавсем тунă ăна.

– Камсем-ха вĕсем? Ячĕсене те, машина номерне те калаймастăн.

– Пĕрне-пĕри ятран чĕнмерĕç вĕсем. Машинине шалтан палласа илнĕ пулăттăм, анчах мĕнле тупăн-ха. Фирма ятне те пĕрремĕш хут илтетĕп – «Ватиг». Вырăнне те пĕлместĕп.

– Пĕр сăмахпа каласан, самай йывăр лару-тăрăва лекнĕ эсĕ, Таланов юлташ. Мирлĕ майпа татăлмалли çулсем тупсан аванрах та пуль тетĕп. «Ватиг» фирмăна кайса пăхар эппин.

Вара вĕсем çăмăл машинăпа Атăл хĕрринчи çĕнĕ çуртсем патнелле кайрĕç. Ун пек фирма, чăнах та, пур иккен, тăхăр хутлă çуртăн пĕрремĕш хутĕнче. Килкартинчен кĕмелле.

– Эпĕ кунта нихăçан та пулман, – терĕ Таланов.

Леш усламçă вырăнтах. Алăк патĕнче пĕр тĕреклĕ çамрăк ларать. Хуралçи ĕнтĕ. Кантăкĕсем пурте решеткеллĕ. Пуçлăх пÿлĕмне кĕрсен следователь обходной листа тавăрса пачĕ.

– Ĕç мĕнле вĕçленесси паллах мар-ха. Анчах дипломне илсе юлмаллах ĕнтĕ. Малашне сан хуларан кайма юрамасть. Килтех пулма тăрăш. Эпĕ халь иксĕре пĕрле хăваратăп. Кирлĕ чухне чĕнсе илĕп, – терĕ те капăр тумлă хĕрарăм тухса кайрĕ. Анчах хăй çук пулсан та Францире кăларнă духи шăрши çаплипех аса илтерсе тăрать-ха.

– Ну, Таланов юлташ, лару-тăрăва кăштах ăнланса илтĕн-и? – пуçларĕ вырăсла çамрăк усламçă.

– Пурпĕрех ĕç тухмасть сирĕн. Эпĕ айăплине ниепле те доказать тăваймастăр.

– Кĕсьери долларсем вара?

– Мана киле мĕнле пырса пăрахнине çынсем курнă. Свидетельсем ман çителĕклех. Машина номерне те çырса юлнă,–

каласа хучĕ Таланов чылай хăюллăн. – Енчен те тепре алăпа тĕкĕнсен...

– Вара мĕнех тăвăн-ха?

– Вара-и? Чăваш каччисем çĕкленĕç те... Мана пач пĕччен тесе шутлатăр пуль ĕнтĕ. Йăнăшатăр. Енчен те çак суя ĕçе чармасан, хăвна суда паратăп.

Таланов хăй çапла калаçнинчен хăй тĕлĕнсе илчĕ. Ăçтан çуралчĕç-ха çак хăюллă сăмахсем? Кун пек никампа та калаçманччĕ. Нивушлĕ Профессорпа тĕл пулни хастарлăх парать.

– Ахалех хăпартланса калаçатăн. Хула тилхепи чăвашсен аллине лекиччен пайтах вăхăт иртĕ-ха. Санăн паян пурăнас пулать. Атя калаçса татăлар: эсĕ хула администрацине тăратнă заявление мана паратăн, эпĕ хам милицие тăратнине – сана. Унпа пĕрлех тата долларсем. Шутла. Çакăнпа килĕшмесен çулу пач татăлас хăрушлăх та пур. Халĕ чармастăп сана, кайма пултаратăн. Енчен те сана курас кăмăлăм çуралсан, лартса килĕç. Ун чух вара калаçу пачах урăх çĕрте пулĕ.

Офисран тухсан Таланов ĕç кунĕ вĕçлениччен обходной лист çине пĕр-ик çĕрте те пулин алă пустарасчĕ тесе института васкарĕ. Чечеков ĕçлекен кафедрăна кĕрсе пăхрĕ. Командировкăран килмен терĕç. Варук аппа патне ыран та кайса пăхăп-ха тесе киле васкарĕ. Амăшне лăплантармалла вĕт-ха. Пĕчĕк чух пĕчĕк хуйхă, ӳссен вара пысăкки.

Канăçсăр каç. Çывăрма выртсан пуçра шухăш хĕвĕшме пăрахмарĕ. Саккунĕ пур-ха, анчах ăна пурнăçа кĕртме çăмăл мар. Тĕрĕслĕх хуçаланаймасть. Ĕç кун пек ытла вăраха кайма пултарать. Тен, суда памалла мар-ши? Мĕншĕн хула пуçлăхĕ умĕнче çав тери турхасласа çӳремелле вара. Чечеков килтĕр-ха. Çавăнпа калаçса пăхасчĕ.

Варук аппа патне пырса çӳрекен никамах та çуккине пĕрле выртакансем чухлаççĕ ĕнтĕ. Тен, çавăнпах Таланова вĕсем те хапăл тусах кĕтсе илеççĕ, ун умĕнче Варук аппана хавхалантаракан сăмахсем калаççĕ. Ырă сăмах вăл тепĕр чухне эмелрен те пахарах. «Маттур вăл. Кун пек вăй илсе пырсан тепрер кунтан ак ташласа та кăтартĕ», – теççĕ. Паян кăна вырнаçнă чиперкке кăна мĕн пулса иртнине тимлĕн пăхса выртать, сăмах чĕнмест. Ялтан килнĕ ватăсемпе тунсăх ĕнтĕ ăна. Мĕн тăвăн, сывлăха тӳрлетес тесен чăтмалла...

Вăхăт шăвать. Çывăрма выртас умĕн яланхи пекех сестра кĕре-кĕре тухрĕ, эмел пачĕ. Варук аппа вара хăй ыйтсах çывăрттарса яракан укол тутарчĕ. Тавралăх шăпланчĕ. Харлаттарса çывăракансем кăна пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Паллă ĕнтĕ,

хӑйсем ҫакна пачах та сисмеҫҫӗ. Ҫывӑрманнисемшӗн вара?..

Ҫурҫӗр тӗлнелле леш чиперкке тӑчӗ те йӑпшӑнса утса алӑка кӑшт кӑна уҫса коридоралла пӑхрӗ. Сестра та канма выртнӑ иккен. Вара вӑл пӗчӗк сумкине илчӗ те туалета кайрӗ. Кӗрсенех алӑкне ҫаклатрӗ те темле ампулӑна уҫса шӗвекне шприца сӑрӑхтарчӗ. Пушӑ ампулине форточкӑран печӗ. Шприца сумкине чикрӗ те палатӑна таврӑнчӗ. Кӑштах выртсан тарӑн ыйха путнӑ Варук аппана ҫара пӗҫҫинчен укол турӗ. Лешӗ кӑштах йӑшӑлтатса илчӗ те лӑпланчӗ. Ку вара каллех туалета кайрӗ те шприцне форточкӑран вӑркӑнтарчӗ...

Ирхине сестра градусниксем йӑтса кӗчӗ, Варук аппана та парас терӗ, анчах лешӗ нимӗн те шарламарӗ. Сестра аллине тытса пӑхрӗ. Сивӗнме пуҫланӑ иккен. Пурте Варук аппа патне пырса тӑчӗҫ. Леш ҫамрӑкки те вӗсемпех. Кӗҫех илсе тухса кайрӗҫ. Морга ӗнтӗ. Ҫапла вӗҫленчӗ Варук аппан нушаллӑ пурнӑҫӗ. Телей мӗнлине тутанса кураймарӗ тесен те юрать.

Варук аппа пирки Таланова пӗлтерчӗҫ. Лешӗ вара яла телеграмма ячӗ. Тӑванӗсем часах ҫитрӗҫ, яла пытаратпӑр терӗҫ. Пит ҫывӑх тӑвансемех те мар вӗт-ха: ашшӗн аппӑшӗн ачин ачисем. Апла пулин те вилӗ пытарнӑ чухне пурте кар! тӑчӗҫ. Чӑвашӑн ырӑ йӑли ӗнтӗ. Таланов та вӗсемпе пӗрлех пулчӗ. Асӑну апачӗ вӑхӑтӗнче ял-йыша Морсковсем ҫинчен питӗ тӗплӗн каласа пачӗ. Нимӗн те пӗлмеҫҫӗ иккен вӗсем. Варук аппа та шарламан.

Тепӗр темиҫе кунтан Таланов ҫыру илчӗ. Хула администрацинчен леш хутсене чиксе янӑ, сӑлтавне те пӗлтернӗ: заявлени ҫыраканӗ вилнине пула тавӑрса паратпӑр тенӗ. Ҫак кӑткӑс ыйтӑва Варук аппа вилӗмӗ татса пачӗ иккен. Ашшӗ килне кӗрсе кураймарӗ. Анчах ҫак ӗҫре темле иккӗленӳ пур пек. Нивушлӗ Варук аппа сывлӑхне асӑрхаса тӑракансем Талановсӑр пуҫне татах пулнӑ? Мӗншӗн-ха Варук аппа ҫав тери сасартӑк вилсе выртрӗ?

Таланов чӑтса тӑраймарӗ, каллех Морсковсен ҫурчӗ патне кайрӗ. Кӗске вӑхӑтрах юсаса пӗтернӗ иккен, илемлӗн курӑнса ларать. Кунта халь пуян усламҫӑсен кану вырӑнӗ: бильярд, рулетка, массаж, мунча, ӗҫмелли-ҫимелли, выртса канмалли пӳлӗмсем... Паллах, пурне те кӗртмеҫҫӗ, чи ҫывӑххисене кӑна. Хытӑ сыхлаҫҫӗ. Ҫуртне тытса тӑраканӗ «Ватиг» фирма шутланать иккен. Урӑхла каласассӑн хула пуҫлӑхӗ пулӑшнипе суту-илӳ ӗҫне хӑйсен аллине илнӗскерсем.

Нивушлӗ демократи юхӑмӗ ҫаксен ырлӑхӗшӗн кӑна пулчӗ? Таланов каллех Профессор сӑмахне аса илчӗ...

* * *

Пĕлӳ пек вăйлă япала çук та пулĕ: чун хăватне çĕклет, хăюлăх çуратать, ирĕклĕх патне çывхартать. Тепĕр чух вара пĕлменни лайăхрах та пек. Ун пек çын хăйне канлĕрех те туять. Нумай пĕлекенĕн пуçне шухăш ыраттарать. Талановпа та çапла пулса тухрĕ. Ăна халĕ хулари лару-тăру канăç памасть. Тен, çавăнпах наци конгресне çывăхрах пулма тăрăшрĕ, вăл ирттерекен митингсемпе пикетсене те хутшăнчĕ. Ăслă та хăюллă чăвашсем Шупашкарта чылай иккен. Тăрăшаççĕ вĕсем, тăван халăха пулăшас ĕçе анлăрах сарасшăн вăй хураççĕ. Тĕп тĕллевне те пытармаççĕ: чăвашсен Шупашкара çĕнсе илмелле. Халлĕхе вăл тĕп халăх аллинче мар-ха.

Çак шухăш Таланова та самаях кăсăклантарать. Чăнах та, мĕншĕн çапла пулса пырать-ха: хулара ытларах чăвашсем пурăнаççĕ, анчах та ун пуçлăхĕ те, çумĕсем те пурте тенĕ пекех урăх халăх çыннисем. Чăвашсем çукпа пĕрех. Йĕркеллĕ япала мар ĕнтĕ çакă. Чăн-чăн чăваш чĕрине хытах ыраттарать.

Акă паян та радиопа ĕнерхи пекех хула пуçлăхне ырлаççĕ, вăл тунă кашни утăм пирки мухтаса калаçаççĕ. Анчах ун ырлăхĕ Шанхая çитеймест. Кунта пурăнакан пиншер çын пирки никам та нимĕн те шутламасть. Çыннисем те шанăçа çухатнă, нимех те шарламаççĕ. «Макăрман ачана чĕчĕ памаççĕ», – тенине те маннă.

Тĕлĕнмелле çын иккен вăл чăваш: пĕрре пăхсассăн вăйлă пек те курăнать, пăхăнманлăх та пур пек. Чиновниксене пуç çапса çӳриччен тытать те хăй аллипе пӳрт лартать. «Эсир хваттер паманнишĕнех Шупашкартан тухса каймăп-ха», – тесшĕн ĕнтĕ. Çав хушăрах айванлăхĕ те пур. Телей сăрчĕ çинелле пĕчченех тапалашать. Пĕрне-пĕри кар! тăрса хӳтĕлесси сахалрах. Нимери туслăх наци шайне çĕкленеймест. «Йышлăн вĕт-ха эпир, анчах хамăр сасса пуçлăхсене илттерейместпĕр, – пăшăрханса утрĕ Таланов хăйсен пылчăклă та çӳп-çаплă урамĕпе. – Мĕнле кăмăлпа пурăнаççĕ-ши çакăнти çынсем?»

Çакна пĕлес тесе вăл чылай çынпа тĕл пулса калаçрĕ, кĕркелесе те тухрĕ. Пурте тенĕ пекех вăхăтлăха тесе кăна килсе кĕнĕ иккен. Халĕ те çав туйăмпах пурăнаççĕ. Вуншар, вунпилĕкшер çул кĕтеççĕ пулсассăн та вĕсен ăшĕнче вăхăтлăх туйăмĕ хуçаланма пăрахман-ха. Чи илемлĕ те çамрăк çулсене çакăнта пурăнса ирттерсен те хăйсен прависене хӳтĕлес тĕллевпе пуçтарăнса калаçман. Ĕçлекен çынсемех вĕт-ха, çурт тăваççĕ, асфальт сараççĕ, пир тĕртеççĕ... «Пуху ирттермелле, пуху, – татăклăн каласа хучĕ ăшра Таланов. – Анчах пухăнĕç-ши?

Тен, пуху хыççăн концерт пулать тесе пĕлтермелле мар-ши?» Çапла турĕ те. Наци конгресĕ пулăшнипе юрăççене те илсе пычĕ. Таланов сĕннипе кашни урамран пĕрер çын суйласа поселок хуралĕ туса хучĕç. Старостине Таланова суйларĕç.

– Хуралĕ пулчĕ-ха, пӳрчĕ тата ăçта? – ыйтрĕ пĕри.

– Хурал пӳрчĕ кирлех ĕнтĕ. Тен, çавăнта, çунса кайнă кил вырăнне лартма май пулмĕ-ши? – сас пачĕ тепри. – Кашни икшер хăма илсе килсен те пĕр пӳртлĕх пухăнатех.

Çак шухăшпа пурте килĕшрĕç.

Концерчĕ пирки вара каламалли те çук. Питĕ хавасланса йышăнчĕç. Аллисене шеллемерĕç, тăвăллăн çупрĕç. Ертсе пыраканĕ те тавçăрулăскер пулчĕ, юрăсем вĕçленсен маларах тухса тăчĕ те вăрăмах мар прозăлла сăвă каласа пачĕ:

Шупашкарăм, вата Шупашкарăм, сан çине пăхса шухăша эп кайрăм. Пĕр сăртран пăхатăп, саншăн савăнатăп, тепринчен пăхатăп – кăштах кулянатăп. Яту инçе кайрĕ, чапу та сан пур, урамусем капăр, çыннусем маттур.

Çавăнтах сăнатăп тунсăх çынсене, вĕт хăмаран тунă пĕчĕк çуртсене. Çакăнта пурăнаççĕ ĕçчен чăвашсем: пир тĕртекенсем, çурт çĕклекенсем, хулана шăлса, йывăççем лартса сăн паракансем. Çакăнта ӳсеççĕ, уроксем тăваççĕ пĕчĕк чăвашсем. Çав килсенче пултăм шкул ĕçĕпеле, калаçма пикентĕм чĕрем хушнипе. Калаçу пулмарĕ, сăмах тупăнмарĕ, пуçăма çеç хыттăн шухăш чăмăртарĕ.

– Пирĕн çинчен вĕт-ха ку. Кам çапла çырнă вара. Авторĕ кам? – ыйтрĕ пĕри.

– Çакна çыраканĕ сирĕн хушăрах вăл, Тимĕр Таланов, – терĕ концерта йĕркелесе пыраканĕ.

Тепĕр хут алă çупрĕç. Таланов мала тухса тăчĕ те пурне те тав турĕ, унтан:

– Шупашкар вăл пĕтĕм чăвашсен тĕп хули. Эпир ăна юрататпăр, японецсем Токиона, французсем Парижа юратнинчен нимĕн чухлĕ те кая мар. Анчах та хамăр хулари йĕркесемпе килĕшме пултараймастпăр, – терĕ пухура калана шухăшсене тепĕр хут çирĕплетсе. Унтан вăл артистсене тав турĕ, татах килсе çӳреме ыйтрĕ.

– Хурал пӳрчĕ лартсассăн, тен, хĕлле те килĕпĕр, – терĕ асли.

Чăнах та тепĕр куннех çынсем хурал пӳрчĕ валли хатĕрленӳ ĕçне пуçăнчĕç. Çуррине яхăн кăмрăкланнă кивĕ çурта пăсса лайăх хăмисене суйласа илчĕç, йĕри-тавралăха шăлса тасатрĕç. Ĕç вĕресе тăнă вăхăтра çăмăл машина çитсе чарăнчĕ. Виççĕн тухрĕç. Шанхай «авторитечĕпе» юлташĕсем иккен.

– Мĕн тăватăр вара эсир кунта? Кам ирĕк панă? – пуçларĕ пĕри.

– Хурал пӳрчĕ лартатпăр, – илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

– Мĕнле хурал пӳрчĕ тата? Халех чарăннă пулăр! Атту!?..

– Мĕн, ку вырăна сутма ĕлкĕреймерĕр-им тата, – терĕ тарăхарах вăтам çулалла çитнĕ хĕрарăм. – Текех кун пек ыйтусене Шанхай хуралĕ татса парĕ. Сирĕн вара килсе çӳремесессĕн те юрать. Хăвăр хăтлă хваттер илнĕ хыççăн тата мĕн шăршласа çӳретĕр?

– Укçа шăрши кунталла туртать ĕнтĕ вĕсене, – кулса илчĕ тепри.

Вара лешсем пĕр-пĕринпе шăппăн калаçса илчĕç те каялла вĕçтерчĕç.

Хурал пӳрчĕ пулчех. Самай пысăкскерех. «Халăх сурать – кӳлĕ тăвать», – тенĕ пек ĕнтĕ. Кашниех мĕн те пулин йăтса пычĕ. Юлашкинчен тата тутасене сĕрсе яракан спонсор та тупăнчĕ. Тепĕр кунне вара Таланов район администрацине çитсе хурал пӳртне телефон лартса пама хут тăратрĕ, поселока шыв кĕртесси пирки калаçса пăхрĕ. Шывĕ пирки нимех те шарламарĕç, телефонне лартса паратпăр терĕç. Чăнах та, хулапа нимĕнле çыхăну та çук. Васкавлă пулăшу чĕнме те май çук, пушар тухсассăн та... Таланов ĕнентерсе калаçни те пулăшрĕ курăнать. «Хурал пӳртĕнче яланах çын пулать, каçпала хурал тăрассине йĕркелетпĕр», – терĕ вăл.

Çапла пĕрре каçхи поселока сыхлама черетлĕ хурала тухсассăн Таланов Ира ятлă хĕрачапа паллашрĕ. Хăй ĕçлекен ПТУрах вĕренет иккен. Секретарь-машинистка пулма хатĕрленет. Чылайччен калаçса çӳрерĕç вĕсем.

– Шупашкарти пурнăç мана хама та самай шухăша ярать, – терĕ Ира. – Пĕр хуларах икĕ хула куратăп. Çавсенчен пĕринче пирĕн пеккисем пурăнаççĕ. Тепри камсем валлине пĕлместĕп. Кĕрсе курман. Пуянсем валли пуль...

– Паллах. Пуçлăхсем те вĕсен шутĕнчех ĕнтĕ. Шалу укçипе çеç пурăнакан чиновник текех пур-ши?. Влаç вăл самай тутлă вырăн иккен. Ахальтен уншăн çапăçмаççĕ пуль. Суйлав вăхăтне аса ил-ха.

– Ман тепĕр чухне хамăр пурăнакан хăма пӳрте хула пуçлăхĕн кантăкĕ умне кайса лартас килет, – терĕ Ира. – Темшĕн асамлă вăйăм çук-çке. Куç пăвма пĕлсен ыранах çапла тăваттăм.

– Тен, çак ырă шухăша пурнăçлăпăр та.

– Мĕнле майпа-ха? – тĕлĕнчĕ Ира.

– Лайăхрах шутласан майне тупма пулатех ĕнтĕ... Калăпăр,

хула кунне уявланӑ вӑхӑтра. Юрлакан-ташлакансем урампа утса тухнӑ чухне вӗсем хыҫҫӑн йӑтса пымалла та...

– Ун пек тусассӑн милици тытса чармӗ-ши?

– Енчен те ҫав пӳрте чечексемпе, йывӑҫ турачӗсемпе хупӑрласан... Юмахри пек илеме курсассӑн милици те тимлӗхне ҫухатӗ.

Ҫапла турӗҫ те. Паллах, хулара уяв кӗрленӗ кун.

Акӑ урамра капӑр тумланнӑ ҫынсем хушшинче чечек ӑшне путнӑ пысӑк япала курӑнса кайрӗ. Ӑна вӑрӑм шалчасенчен тытса вуниккӗн йӑтса пыраҫҫӗ. Вӗсем хушшинче Таланов та пур. Хула администраци тӗлне ҫитсессӗн асфальт ҫине лартрӗҫ те чечексемпе йывӑҫ турачӗсене илсе печӗҫ. Куҫ умне вӗт хӑмаран тунӑ пӗчӗк пӳрт тухса тӑчӗ. Пӗр енне: «Хула пуҫлӑхне Шанхайри чӑвашсенчен!» – тесе ҫырнӑ. Леш арҫынсем вӑрӑм шалчисене пӑрахрӗҫ те пӑрӑнса утрӗҫ, ытти ҫынсем хушшинелле кӗрсе ҫухалчӗҫ.

Малтанах ҫакӑнта мӗн пулса иртнине никамах та тавҫӑрса илеймерӗ. Ӑҫтан пӗлӗн-ха? Тен, ҫакӑ вӑл уяв сценарипе палӑртнӑ япалах.

Акӑ администраци ҫуртӗнчен пӗр чиновник тухрӗ те леш пӳрт патнелле васкарӗ. «Ку мӗне пӗлтерет тата? Мӗнле хулиганла ӗҫ?! – Кӑшкӑрса ячӗ хула пуҫлӑхӗн ҫумӗ. – Милици ӑҫта тата?» Кӗҫех пӳрт тавра ҫынсем пухӑнса тӑчӗҫ, фотографсем те тупӑнчӗҫ, ӳкере-ӳкере илчӗҫ. Леш арҫын фотографсене чарасшӑн пулчӗ, анчах ӗҫ тухмарӗ. Ҫак пӑтӑрмаха милиционерсем те асӑрхарӗҫ, иккӗн пырса тӑчӗҫ. Пӗри раципе шӑнкӑравларӗ, аслӑраххисене пӗлтерчӗ ӗнтӗ.

– Мӗн ҫӑвара карса тӑнӑ вара эсир кунта! – пуҫларӗ ятлаҫма леш арҫын. – Мӗншӗн тытса чармарӑр? Ҫав ҫынсене халех шыраса тупнӑ пулӑр!

Паллӑ ӗнтӗ ун пек чухне яланах кӗҫӗнреххи айӑплӑрах. Халӗ те ав кунта тӑракан сержанта раци тытнӑ капитан аллипе сулкалашсах ятлама пуҫларӗ.

– Ӑҫтан пӗлес-ха ман. Тен, ҫак пӳрте уяв ирттерекенсем хушнипех тунӑ? – парӑнма шутламарӗ сержанчӗ.

– Ҫакна хула пуҫлӑхӗнчен кулас шухӑшпа туни пӗрре пӑхсах паллӑ ӗнтӗ. Соображать надо! – кӑшкӑрчӗ капитанӗ.

Шӑп ҫав самантра хула пуҫлӑхӗ хӑй персе ҫитрӗ. Мӗн ҫырнине пӗлес тесе маларах ҫитнисенчен ыйтрӗ, анчах кӑлӑхах пулчӗ. Чӑвашла пӗлмеҫҫӗ. Юрать-ха капитан пулӑшрӗ. Мэр тарӑхса кайрӗ, сӑнӗ улшӑнчӗ, кӑркка пӗсехи хӗрелсе пынӑ пек пит ҫинелле юн капланса ҫитрӗ. Ниҫта кайса кӗреймест, темле хушусем тӑвать.

«Çакăн пек пӳртре мэр хăй пурăнса пăхтăрччĕ!» – илтĕнчĕ хĕрарăм сасси. Çапах та мэр çухалсах каймарĕ, çак самантра ăçта пулмаллине асрах тытрĕ, сехечĕ çине пăхса илчĕ те çăмăл машинăпа театр патнелле вĕçтерчĕ. Ун халĕ хула çыннисене уяв пуçланни çинчен пĕлтермелле, хăй команди мĕнле тăрăшса ĕçлени çинчен каласа памалла.

Ăна ĕненсен кăçал хулара хваттерсем пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах лартнă иккен. Пин çын шутне илсен эпир ку енĕпе мускавсенчен те маларах пыратпăр имĕш. Хваттерĕсем кам валли пулнине шарламарĕ.

Леш пӳрт патĕнче вара митингри евĕрлĕ калаçу пуçланчĕ. «Çакă вăл намăс çурчĕ!» – кăшкăрчĕ пĕри. Милиционерсем те йышланчĕç. Полковник те пур. Леш арçын тарăхса кайнипе пӳрт йĕри-тавра выртакан йывăç тураттисемпе чечексене урипе тапа-тапа илчĕ. Шăп çав самантра алăк патĕнче: «Осторожно: мина!» – тесе çырнă картон татăкки курăнса кайрĕ. Арçын хăраса ӳкрĕ, полковнике чĕнсе илчĕ. Лешĕ мĕн çырнине курсанах алла мегафон тытрĕ те команда пачĕ: «Халех саланмалла! Пĕр çын та юлмалла мар!» Милиционерсем çине тăрсах хăвалама тытăнчĕç. Урама та пӳлсе лартнă иккен. Уява каякансене тепĕр урам еннелле пăрса яраççĕ. «Намăс çурчĕ» патĕнче никам та юлмарĕ, милиционерсем хăйсем те айккинерех кайса тăчĕç. Акă пĕр симĕс машина пырса çитрĕ. Минĕра лартса килнĕ иккен. Лешĕ хăйĕн приборне майлаштарса тытрĕ те ĕçе пуçăнчĕ. Малтан пӳрт тавра тăнласа çаврăнчĕ. Унтан кантăк патне пычĕ, пуçне чиксе пăхрĕ. Нимех те курмарĕ пулмалла, приборне шала тытса аллисем çитнĕ таран тĕрĕслесе пăхрĕ. Каллех алăк патне пырса тĕрĕслерĕ те хуллен уçрĕ. Леш картона илсе печĕ те шала кĕрсе кайрĕ. Кăшт вăхăт иртсен тухрĕ. Аллинче темле хут листи. Нимле мина та çук иккен. Арçын леш хута инçерех тăракан полковнике пырса пачĕ. Мина шыранă вăхăтра пожарниксем те çитсе тăнă иккен. Минĕра илсе пынă капитан полковнике алă пустарчĕ те симĕс машинипе каялла вĕçтерчĕ.

Темиçе офицер «намăс çуртне» силлесе пăхрĕç. Лешĕ хăнк та тумарĕ. Вара вĕсем ăна пушар машинипе сĕтĕрсе кайма шутларĕç. Командирĕ мĕн тумаллине хушсан пожарниксем трос туртса кăларчĕç те пĕр вĕçне алăк янаххи патĕнчи урата вырăнне хунă пĕренерен ярса илсе çыхрĕç, тепĕр вĕçне машинăран çаклатрĕç. Хула пуçлăхĕ те çитсе тăнă иккен. Пĕччен мар, шалти ĕçсен министрĕпе. Уява уçнă-уçманах кунта вĕçтерсе килнĕ.

Акă, хĕрлĕ тĕслĕ вăйлă машина хускалчĕ, трос карăнса

илчӗ, анчах «намӑс ҫурчӗ» вырӑнтан хускалмарӗ. Машина тата хытӑрах туртрӗ. Пӗр пӗрени тӑпӑлса тухрӗ. Ытти веҫех вырӑнтах ларса юлчӗ. Каллех пухӑнса калаҫса илчӗҫ те пӳрте ҫӗмӗрме команда пачӗҫ. Пожарниксен мӗн кирли пурте пӗрлех иккен. Лумпа хирсе, пуртӑпа касса стенисене тӳнтерсе ячӗҫ. Анчах никӗс пӗренисем мӑнтӑрскерсемех мар пулсассӑн та темшӗн хускалмаҫҫӗ. Темиҫе лумпа пӗр харӑс хирсе хӑпартсассӑн тин паллӑ пулчӗ. Пӗрене витӗр ҫапса кӑларнӑ тӗреклӗ пӑтасем кӑнтарса тӑраҫҫӗ, тимӗрҫре тунӑскерсем. Пӳрте хӗвелпе хӗрсе ҫемӗҫнӗ асфальт ҫине лартсанах шӗвӗрскерсем чылай тарӑн кӗрсе кайнӑ. Ҫавӑнпа ҫирӗп ларнӑ та ӗнтӗ мэра парса хӑварнӑ парне. Тавҫӑруллӑ ӑстасем тунӑ ӗнтӗ. Хула пуҫлӑхӗ вара каллех кӑшкӑрашать, васкатать. Полковник капитан парса хӑварнӑ хута министра тыттарчӗ. Лешӗ вуласа пӑхрӗ те хула пуҫлӑхне пачӗ.

Театр умӗнчи лапамра юрӑ-ташӑ кӗрлет, сӑра-эрех юхать. Кусемшӗн вара пӑсӑк уяв пулчӗ курӑнать. Кун пек ЧП Шупашкарта пулманччӗ-ха. «Кам пуҫарнипе-ши?» – канӑҫ памарӗ мэра ҫеҫ мар, ытти чиновниксене те.

Тепӗр кунне ирех леш ӗнер хӑварнӑ петиције копи туса премьер-министр патне леҫсе пама хушрӗҫ. Каярах мэрне хӑйне те чӗнсе илчӗҫ.

Премьер пӗччен мар. Ун патӗнче президент администрацинче ӗҫлекенскер ларать. Республика пуҫлӑхӗ Мускава е ют ҫӗршыва тухса кайсан патшалӑх тилхепи пӗтӗмпех ҫаксен аллине куҫать. Ах васкаҫҫӗ вара: тӳрех ҫывӑх туссене пулӑшассине аса илеҫҫӗ, хӑйсен аллине ларман пуҫлӑхсене улӑштарма та ӗлкӗреҫҫӗ, мӗнле те пулин кӑлтӑк тупса чӑвашсене катертме тӑрӑшаҫҫӗ, хӑйсен ҫыннисене ҫул уҫса параҫҫӗ. Чи хастарри вара ҫак ӗҫре шӑпах хула пуҫлӑхӗ хӑй. Анчах ӑна чарма хӑякан хулара ҫуккӑ-ха. Чее вӗсем, ӗҫне президент хушнипе тунӑ пек кӑтартма та вӗренсе ҫитнӗ. Сив сӑмахӗ, ылханӗ вара республика пуҫлӑхӗ ҫине ӳкет.

– Ну, ӗнерхи пирки мӗн калӑн-ха? – тӳрех ыйтрӗ премьер.

– Хулиганла ӗҫ ӗнтӗ. Ҫав ҫынсене тупса явап тыттаратпӑрах.

– Питӗ меллӗ саманта алӑран вӗҫертнӗ эсир, тӑмсайсем.

– Мӗн пирки вара?

– Минӗра чӗнсе иличчен ҫав пӳрте пушӑ граната та пулин пырса пӑрахмаллаччӗ. Вара лешсене вӗрентсе илме те лайӑх сӑлтав тупӑнатчӗ.

– Хальхи ӑспа пулсан... Уяв уҫнӑ ҫӗре васкамалла марччӗ ман.

– Уяв вӑл сансӑр та пуҫланатчӗ-ха, – хутшӑнчӗ калаҫӑва виҫҫӗмӗш арҫын. – Халӗ вара вӑхӑта ӳпкелешсе ларса ирттерер мар. Президент килсен мӗн калӗ-ши? Шалти ӗҫсен министрӗ пӗлтернех ӗнтӗ ӑна.

– Министрпа ӗнерех калаҫса илнӗччӗ-ха. Тӑхтама хушрӗм,– терӗ правительство пуҫлӑхӗ леш ӗнер мэра парса хӑварнӑ петиције тепӗр хут пӑхса илнӗ май. – Кала-ха эсӗ, ҫав ӗнер хӑвна парнеленӗ пӳрт пеккисем хулара пурӗ миҫе?

– Шута илмен ҫав. Алӑ ҫитмерӗ. Куртӑр ӗнтӗ, кивӗ хулана илемлетме тиврӗ, фонтансем, чиркӳсем лартмалла пулчӗ.

– Вӑл аван-ха. Анчах кусем нумай та ыйтмаҫҫӗ вӗт-ха: ҫулне якатса памалла, пӗр-ик ҫӗрте шыв колонки тата телефон вырнаҫтармалла. Тӑкакӗ пысӑк та мар вӗт-ха. Асту, сисмесӗрех суйлав вӑхӑчӗ те ҫитсе тӑрӗ. «Эпир саншӑн сасӑларӑмӑр, эсӗ вара пирӗн ҫине хӑрах куҫпа та пӑхмастӑн», – теҫҫӗ вӗсем.

– Вуларӑм-ха ӑна, – терӗ мэр. Сасси пачах улшӑннӑ, иккӗ паллӑ илнӗ шкул ачи пекех курӑнать.

– Ҫакна та вуласа пӑх эппин, – хушрӗ президент ҫынни хӑй илсе килнӗ хута парса.

– Ку тата мӗскер?

– Вула, вула. Чӑваш чӗлхи вӗрентекенсем янӑ ҫыру вӑл. Енчен те ӗнерхи пӑтӑрмах пирки шӑв-шав ҫӗкленсен чӗлхе ыйтӑвне те тапратма пултараҫҫӗ. Наци конгресӗ те айккинче тӑрас ҫук.

«Хула ертӳҫисем шкулта чӑваш чӗлхи вӗрентесси ҫине питӗ сӳрӗк пӑхаҫҫӗ, уроксен шутне чакарса пыраҫҫӗ, классене ҫурмалла пайлаттармаҫҫӗ. Чӗлхе саккунӗ Шупашкарта пурнӑҫланмасть», – вуларӗ хула пуҫлӑхӗ.

– Ҫав чӗлхе саккунне кам йышӑннӑ-ши ӑна?! Халӗ те ҫакӑнта ларать,– терӗ мэр ӗнсине сылтӑм аллипе ҫапса илсе.– Ытларах куҫа илӗртекен ӗҫсем тумалла тесе президент хӑй те каланӑччӗ вӗт-ха. Чӗлхе вӗрентесси е чӑвашла кӗнеке кӑларасси вӑл пит курӑмлӑ япалах мар. Илемлетнӗ ҫурт е чиркӳ аякранах кӑшкӑрса ларать, пирӗн ӗҫе курӑмлӑрах тӑвать.

– Ман шутпа, тактикӑна кӑштах улӑштармалла пек, – сӗнчӗ премьер. – Юрлаччӑр, ташлаччӑр, калаҫчӑр вӗсем чӑвашсем, анчах влаҫ ыйтӑвне ан тапратчӑр. Ҫав ҫула лайӑхрах пӳлсе пымалла.

– Халӗ те уяв хыҫҫӑн уяв туса паратпӑр-ҫке, – терӗ мэр. – Фейерверксем те ирттеретпӗр.

– Президент кӑмӑлӗ вӑл пӗр-пӗр хыпара мӗнле пӗлтерниччен те чылай килет. Ӑна эпӗ хам ҫине илӗп-ха. Анчах хаҫатсем пур-ҫке. Вуларӑр пуль ӗнтӗ «Демократическая Чува-

шия» хаçат ĕнерхи пирки мĕн çырнине. «Кун пек пуçлăхсемпе чăвашăн хăй пуласлăхĕ пирки ĕмĕтленмелли те çук», – тет редакторĕ.

– Ытти хаçатсене лăплантартăмăр-ха. Контракт вăхăчĕ тухсанах кунтан та тасалăпăр, – сăмах пачĕ президент патĕнчен пыни, унччен парти обкомĕнче ĕçленĕскер, демократи сăмаха çав тери юратманскер. Коммунистсен агенчĕ ĕнтĕ, кунта мĕн пулса иртнине ыттисене пĕлтерсе тăраканскер. Хула пуçлăхĕпе те туслă, иртнĕ суйлавра ăна пулăшса пынă. Халĕ те хута кĕме хатĕр.

– Çине тăрсан çак ĕçре те хамăра усăллине тупма пулать,– терĕ çакскер. Лешсем тĕлĕнсе пăхса илчĕç. – Наци конгресĕпе явăçтармалла та ăна провокаци тăвакан пĕрлешӳ пек кăтартса памалла. Тен, салатса яма та май килĕ.

– Тем пекехчĕ, – хушса хучĕ мэр. – Уйрăм çурт ыйтаççĕ тата йĕксĕксем. Шиш! вĕсене.

– Ман шутпа çуртне памаллах, – терĕ премьер.

– Çук, çук. Кун пирки калаçу та пулма пултараймасть,– хирĕçлерĕ хула пуçлăхĕ тăвăлса çитнĕ чунне пытараймасăр.

– Каллех хăв юрруна тăсатăн. Конгреспа хирĕçме кирлĕ мар тесе каланăччĕ вĕт. Çурт парсанах хăв куçунтан пăхма тивĕ вĕсен: электричество та, ăшă та кирлĕ, юсав ĕçĕсем те аса илтерсех тăрĕç. Тавçăруллăрах пул-ха эсĕ, салтакри йăласене пăрах,– сĕнчĕ правительство пуçлăхĕ хăй тусне.– Ку чăрсăр ĕç пирки вара милицие хытăрах хăвала. Хыпарсене те пĕлтерсех тăр.

Калаçу сисмесĕрех урăх çĕрелле куçса пычĕ. Премьер çуртйĕр тунă çĕрти заказсене хăш треста е фирмăна парсан меллĕрех пулассине асăрхаттарчĕ, тепри вара хула пуçлăхĕнчен хăйне çывăх çын валли офис уçма пӳлĕмсем ыйтрĕ. «Алла алă çăвать», – теççĕ вĕт. Ун пек чухне нухрачĕ пирки те иккĕленме кирлĕ мар, хăех сейфа çитсе выртать. Пурнăç самаях улшăнчĕ, укçаллă çынсем нумайланни чиновниксемшĕн те лайăх. Майне кăна пĕлмелле.

Çапла калаçса уйрăлчĕç те ĕнтĕ виçĕ пуçлăх. Анчах Шанхай чăвашĕсемшĕн усси пулĕ-ши, хăйсене хула çынни вырăнне хурса хисепленине курĕç-ши? Çитменнине тата чăрмав кӳрекенсем те тупăнсах тăраççĕ. Акă паян та леш Шанхай «авторитечĕ» çитсе те ларнă. Тĕрĕсрех каласан, ăна мэр хăй чĕнсе илнĕ.

– Эсĕ мĕншĕн ĕçлеме пăрахрăн? – сиксе ӳкрĕ тӳрех хуçа. – Тутлă апата пула мăнтăрланса çитнĕ кушак аçи пек тыткалама пуçларăн. Аса ил-ха, сана икĕ пӳлĕмлĕ хваттер панă чухне мĕн хушнăччĕ-ха? Националистсем мĕн хăтланни çинчен

мĕншĕн вăхăтра пĕлтермерĕн? Маларах каланă пулсан... Камсем тунă-ха çакна?

– Уявра пулман çав эпĕ, яла кайнă.

– Кирлĕ чухне çук çав эсир.

– Çынсемпе калаçса пăхрăм, пĕлекен çук. Питĕ вăрттăн хатĕрленнĕ вĕсем. Шанхайри йĕркесем те пачах урăхла. Чăмăртаннă вĕсем. Пуçлăхĕ те тупăннă. Таланов теççĕ.

– Таланов? Темле унччен илтнĕ пек. Кам вара вăл?

– Çамрăк учитель, çавăнтах пурăнаканскер. Шанхай старости теççĕ ăна.

– Апла эппин çавăнтан пуçламалла та, хулиганла ĕçшĕн камăн та пулин явап тытмаллах.

– Ăна хăвăр пĕлетĕр ĕнтĕ. Анчах çынсем çакна питĕ вырăнлă политикăлла ĕç тесе калаçаççĕ. Чылайăшĕ ырлаççĕ. Унта тата тепĕр йышши чуста хăпарса çитет теççĕ.

– Мĕнле япала вара?

– Каççерен чăваш чĕлхи вĕрентекенсем пуçтарăнаççĕ тет, хулари вĕрентӳ пайĕн пуçлăхне хирĕçле калаçусем пулса иртеççĕ тет.

– Ав мĕнле иккен.

– Таланов та çавсемпе пĕрлех тет.

– Ну юрĕ, хăлхуна çивĕчрех тыт.

Элекçĕ тухса кайсанах хула пуçлăхĕ секретарьне чĕнсе илчĕ те Таланов çинчен ыйтрĕ.

– Морсков купца çурчĕ пирки çӳрекенни мар-ши вăл? – терĕ лешĕ.

– Чăнах та, çавă самай чăрсăрскерччĕ. Чĕнсе калаçма тивет. Пĕлтер ăна.

– Килмесен вара?

– Чим-ха, хваттер черетĕнче тăратех ĕнтĕ вăл. Çавăн пирки тесе чĕнсен мĕншĕн килмелле мар. Хăш районта тата миçемĕш çултанпа тăнине пĕл те чĕнсе ил.

– Юрать, – тесе секретарь тухрĕ.

Анчах кунпа мэр чунĕ лăпланмарĕ-ха. Вăл иккĕмĕш кун ĕнтĕ хăйне такам хытă çупса янă пек туfive. Паян та ав кантăкран пĕр-икĕ хутчен пăхса илчĕ. Темшĕн ăна леш пӳрт халĕ те çавăнтах ларать пек туйăнать. Чăтаймарĕ мэр, хăй патне милици начальникне чĕнсе илчĕ.

– Ну, ĕнерхи пирки мĕн паллă, – пуçларĕ тӳрех хула пуçлăхĕ, – ăçтан вĕсем?

– Уçăмлăн калама хĕнтерех, анчах йĕрĕ çине ӳкрĕмĕр тесен те юрать. Çав пӳрте универмаг патĕнчен йăтса тухни паллă.

– Ăçтан турттарса килнĕ-ха ăна?

– Çук, ниçтан та илсе килмен ăна, универмаг хыçĕнчи çырма хĕрринче тунă. Ĕçленĕ вырăнĕ те паллă, турпасĕ те çавăнтах.

– Мана турпас кирлĕ мар. Камсем хăтланнине тупмалла!

– Хăйсем лартнă пĕчĕк пӳртсенче пурăнакансем ĕнтĕ. Анчах тахăш вырăнтисем-çке. Йăви вĕсен пĕр çĕрте кăна мар вĕт.

– Восточнăйне кайăр. Çавсем питĕ туслă теççĕ. Пуçлăхĕ те пур, Таланов ятлăскер. Çыннусене çавăнта яр. Калаçса пăхчăр. Талановне вара ан тĕкĕнĕр. Унпала кунта калаçăпăр, сана та пĕлтерĕп.

– Юрĕ, çапла пултăр эппин. Ытти çĕрте те тĕрĕслесе пăхăпăр-ха, – тесе полковник тухса кайрĕ.

«Намăс çурчĕ» пирки халăх хушшине хыпар часах сарăлчĕ. Хаçатсем те самаях пулăшрĕç курăнать. Тем калаçакан та пур. Мина хăш тĕлте çурăлнă-ши вара тесе ятарласа килсе пăхакансем те тупăнчĕç. Мэр майлисем наци конгресне айăплама пикенчĕç. Тем те тунă пулĕччĕç, анчах фактсем çителĕклех марри чăрмантарать. Пĕртен-пĕр шанчăк та Таланов кăна. Çавна лайăхрах хĕстермелле. Тен, тӳрех милици аллине памалла. Çапах та мэр малтан хăй калаçса пăхас терĕ. Шанхай «авторитечĕсене» мĕнлерех лăплантармаллине вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Хваттер черечĕ пирки аса илтерсенех куçран ăшшăнрах пăхма пуçлаççĕ. Хаярлăхĕ часах сӳнет.

Таланов кĕнĕ чухне мэр пĕчченехчĕ. Ăна курсанах хирĕç пырса аллине тăсрĕ:

– Паллашма та вăхăт ĕнтĕ. Сире поселок старостине суйланă ятпа саламлатăп, – терĕ лăпкă сасăпа нихăçан курман çынпа калаçнă пек. – Малашне пĕрле ĕçлĕпĕр. Чылайранпа çавăнта пурăнатăр-и вара?

– Вун пилĕк çул та иртрĕ ĕнтĕ.

– Черет сирĕн аннӳ ячĕпеччĕ пулас.

– Çапла. Эпĕ пĕчĕккĕ чухнех заявлени панă.

– Мĕн тăвăн ĕнтĕ, хваттерсем çитмеççĕ вĕт. Черечĕ те хулленрех шăвать.

– Унтан-кунтан куçса килекенсем валли пур та-ха, кунти çынсемшĕн çук.

– Сирĕн ыйтăва татса памаллах ĕнтĕ. Аçу Чечняра вилнине те шута илĕпĕр. Эсир çырнă петиципе те паллашрăм. Ун пек мелпе памалла пулман ĕнтĕ. Тӳрех килмелле те калаçмалла.

– Мĕнле петици? Нимле хут та тăратманччĕ-çке.

– Староста тӑрӑшмасӑр ҫырман пуль ӗнтӗ ӑна, хӑмаран тунӑ пӳртри хута.

Шӑп ҫав самантра алӑк уҫӑлчӗ те милици начальникӗ кӗрсе тӑчӗ.

– Иртӗр, иртӗр, – терӗ мэр, – паллашӑр. Ку Таланов юлташ пулать.

– Мана шӑпах ҫавӑ кирлӗ те. Ну, Таланов, каласа пар универмаг хыҫӗнче мӗн хӑтланнине.

– Мӗн пирки вара эсир?

– Паллӑ ӗнтӗ, ним пӗлмен пек ан тыткала хӑвна. Поселокрисем веҫех каласа пачӗҫ.

«Нивушлӗ тахӑшӗ чӗлхине чараймарӗ? Тупа та тунӑччӗ вӗт-ха», – шухӑшласа илчӗ Таланов.

– Мӗн нимӗн те шарламастӑн тата? – тапӑнчӗ каллех полковник. – Ҫав пӳрте эсӗ ҫине тӑнипе йӑтса тухнӑ теҫҫӗ. Куракансем те пулнӑ.

– Илтессе илтнӗ, анчах нимӗн те пӗлместӗп, – терӗ Таланов.

– Ҫынсене куҫҫӑр тетӗн-им? Курнӑ сана. Свидетельсем те пур. Судра веҫех паллӑ пулӗ.

– Мӗнле суд? Пӗр айӑпсӑр ҫынна суд тумаҫҫӗ ӗнтӗ.

– Ҫакӑ мӗскер вӑл? – кӑшкӑрса ячӗ мэр леш «Осторожно: мина!» тесе ҫырнине кӑтартса. – Хулиганла ӗҫ мар-и?

– Ку ҫеҫ те мар-ха, – чӗрре кӗчӗ полковник, – ҫак ӗҫре хула администрацийӗн ҫуртне сирпӗтес шухӑш та сисӗнет. Куншӑн вара мӗнлерех статья кӗтнине пӗлетӗн-и?

– Ун пек шухӑшласа кайсан чӗлхе тем те калӗ. Ҫынсем калаҫнине ӗненсен ҫав пӳрте хула пуҫлӑхне парне вырӑнне парса хӑварнӑ теҫҫӗ. Ҫырсах пӗлтернӗ тет. Апла-тӑк, парнешӗн те суд тӑваҫҫӗ-и вара? Тен, ҫак ӗҫе пачах та урӑх ҫӗрте пурӑнакансем тунӑ. Хамӑн та питӗ пӗлес килет. Тав сӑмахӗ каланӑ пулӑттӑм вӗсене. Мина пирки те калама пулать. Тен, вӑл хута хӑвӑра майлисемех ҫырса пӑрахнӑ, айӑплама сӑлтав пултӑр тесе, – хӑюллӑн хирӗҫ хуравларӗ Таланов.

«Ав мӗнлерехскер иккен ку «авторитет». Унчченхипе танлаштарсан самай тавҫӑрулӑскер, – шутласа илчӗ хула пуҫлӑхӗ. – Морсков ҫурчӗ пирки те вӑлах ҫине тӑнӑччӗ».

– Енчен те айӑплӑ тесе шутлатӑр пулсассӑн, хупса лартӑр эппин, – терӗ Таланов полковник ҫине пӑхса. – Анчах астӑвӑр, кунта тепӗр ыйту та куҫкӗретех – ҫав япӑх ҫуртсенче пурӑнакансем вӗсем пурте тенӗ пекех чӑвашсем. Ҫавсен шӑпи пирки кӑштах шутласа пӑхнӑ-и-ха эсир?

Мэр калаҫу тепӗр майлӑ ҫавӑрӑнса каясса кӗтменччӗ.

Çавӑнпа та полковникпе канашласа пӑхас шухӑш çуралчӗ.

– Ну, юрӗ, Таланов, эсӗ халлӗхе приемнӑйне тухса ларха, – терӗ мэр. Алӑк хупӑнсанах полковникрен ыйтрӗ:

– Çак ӗçе пуçарса яраканӗ, чӑнах та, Талановах-и вара?

– Ăçтан пӗлӗн-ха? Шанхайра пӗри те нимӗн те шарламасть тет.

– Ытла хӑюллӑн калаçрӑн та. Пӗлнӗ пекех

– Пирӗн ӗç мелӗ çавнашкал.

– Кунпа вара мӗн тумалла-ха? Нивушлӗ çаплипех ямалла. Чим-ха, телевидени ӳкерсе илмен-и-ха вӗсене?

– Унта та пултӑмӑр. Веçех пӑхса тухрӑмӑр. Анчах çыннисене ниепле те палласа илме май çук. Пурте хура хутран касса тунӑ куçлӑхсемпе.

– Эсир те çав... Милицие тӑр кӑнтӑрлах улталаççӗ. Камсен ӗçӗ-ха çакӑ?

– Таланов пӗлетех ӗнтӗ. Ун пек ӗçе пӗр-пӗринпе калаçмасӑр тума çук. Каярах сӑмахӗ тухатех ӗнтӗ.

– Мана паян кирлӗ. Камсем йӑтса пынине пӗлесчӗ. Кун пек ӗçе çийӗнчех чармасассӑн...

– Юрӗ эппин, урӑхларах мелпе усӑ курӑпӑр. Милицире ӗçлекен чӑвашсен Шанхайри тӑванӗсем урлӑ пӗлме тӑрӑшӑпӑр. Ку вара шанчӑклӑрах пулӗ.

– Апла-тӑк вӗçтер, – терӗ мэр. – Лешне кӗме кала-ха.

Полковник сӑмахӗ мэра кӑшт та лӑплантармарӗ. Милици мӗнле ӗçлени паллӑ ӗнтӗ. Кахалрах çынсем тесен те юрать. Хӑваласах тӑмалла. Канлӗрех пурнӑçа килӗштереççӗ.

– Акӑ ман умра Таланова Елена Ивановна çырнӑ заявлени выртать. Çак ыйтӑва татса парасси пӗтӗмпех санран хӑвӑнтан килет, çамрӑк çыннӑм. Уяв кунӗ пирки мӗн пӗлнине каласа пар та... Акӑ халех алӑ пусатӑп та тепӗр эрнерен икӗ пӳлӗмлӗ хваттере куçма пултаратӑр.

Çакӑ нумай çул хушши канӑç паман ыйтӑва нивушлӗ пӗр самантрах татса пама пулать вара? Талановӑн мӗн каламалла-ха? Ӗçе кам çине йӑвантармалла? «Тен, пӗтӗмпех хам çине илмелле те... Анчах каçарӗ-ши? Ордер тыттарсан калатӑп тесе сӑмах памалла мар-ши?»

Пуçра мӗн хӗвӗшнине тавçӑрса илме çук, ухмаха тухса кайнӑ тейӗн. Мӗн кӑна пырса кӗмест пуль. Мӗнле хевтесӗр иккен вӑл çак самантра, никампа калаçма та çук. «Ман вырӑнта Чечеков мӗн тунӑ пулӗччӗ-ши?» – аса илчӗ Таланов хӑйӗн юратнӑ вӗрентекенне.

– Мӗн нимӗн те шарламастӑн, тусусенчен хӑратӑн-им? – аса илтерчӗ мэр.

– Пĕлнĕ пулсассăн веçех каласа парăттăм, – персе ячĕ Шанхай старости тинех темле йывăрлăхран хăтăлнă пек уççăн сывласа илсе. – Паçăрах каларăм вĕт çав хăюллă çынсем пирки хамăн та пĕлес килет тесе.

– Юрĕ, çитĕ калаçса, – татса хучĕ хаяррăн хула хуçи. – Полковник мĕн каланине мантăн-им? Çăмăллăх парас тесе калаçрăм ĕнтĕ санпала. Эсĕ çакна ăнланмарăн. Асту, кайран манран пулăшу ан кĕт. Çак ĕçе камсем тунине пурпĕрех тупатпăр. Халĕ кунтан тасал!

Таланов тухрĕ те наци конгресĕ патĕнчи чарăну патне васкарĕ. Ун халĕ часрах поселока çитсе унти хыпарсене пĕлмелле. «Нивушлĕ сутăнчăксем тупăнчĕç вара?» – канăç памарĕ ăна çул тăршшĕпех. Юрать-ха, хурал пӳрчĕ патĕнче Ира кĕтсе илчĕ, кунти лару-тăру çинчен каласа лăплантарчĕ.

– Милицисем иккĕн килчĕç те килсем тăрăх çӳрерĕç, – пĕлтерчĕ хĕрача. – Урамри çынсене чара-чара калаçрĕç, анчах нимех те ыйтса пĕлеймерĕç, «намăс çурчĕ» пирки каласа паракан тупăнмарĕ.

Талановăн чĕри лăштах пулчĕ, тӳрех леш суеç полковнике аса илчĕ, шантаж тума юратаканскер иккен. «Хула пуçлăхĕ те çавах ĕнтĕ, ĕç мелĕ кăна урăхларах: хăратса мар, чееленсе ыйтса пĕлесшĕн. Юрать-ха, ун вăлтинчи ăмана хыпмарăм», – шухăшласа илчĕ Шанхай старости хăйне хăй лăплантарса. Юнашар Ира пурри те чуна çăмăллăх кӳрет. Паян вара вăл театра кайма икĕ билет туяннă. Ун пек чипер хĕрачан сĕнĕвне мĕнле йышăнмăн-ха.

Театр. Мĕн тери асамлă вырăн иккен вăл! Пырса кĕрсессĕнех кунта ырă сывлăш явăçни сисĕнет. Çыннисем те хăйсене питĕ сăпайлă тытаççĕ, чечекпе пынисем те пур. Спектаклĕ «Авлантарчĕç» ятлă иккен.

Акă чаршав уçăлчĕ. Сцена çинче çамрăксем ташлаççĕ, юлашки курсра вĕренекен студентсем юлташ хĕрачан çуралнă кунне ун хваттерĕнче паллă тăваççĕ. Амăшĕ те кунтах. Кĕçех киле кайма та вăхăт çитет, анчах пĕр ачи диван çинчен тăраймасть, ытлашширех ĕçнĕ курăнать. Юратнă хĕрĕ тем пек çине тăрсан та илсе каяймасть. Каччăна кунтах хăвараççĕ. Амăшĕ çине тăнипе хĕрне унпа юнашар вырттараççĕ. Ирхине вара ялта çуралса ӳснĕ пултаруллă студент кĕрӳ пулса тăрать. Ӳсĕр те пулман иккен, амăшĕ шампански эрехе çывăрттаракан эмел ытларах ярса панă.

Мĕн кăна курма тивмест пуль çамрăк упăшкан çак ултавлă пурнăçпа пурăнакан çемьере? Çитменнине тата арăмĕн ашшĕ криминалпа явăçса кайнă милици майорĕ иккен, укçашăн

сутăннăскер. Хĕрĕ валли хваттер тăвас тесе пĕр ватă хĕрарăма пеккуна илеççĕ, халал хучĕ тутараççĕ те, кайран ваттисен çуртне ăсатаççĕ. Ай, алхасать вара савăшупа çак лайăх каччăн пулас арăмĕ. Кайран та упăшки пур çĕртенех тепĕр çынпа кăнтăра тухса каять. Çав вăхăтра малтанхи упăшки çавăрăнса килет. Тĕрмерен тухнă иккен...

Вăйпа авлантарнă студент япалисене илсе тухса кайнă чухне пурте тăвăллăн алă çупса ячĕç. Ира та аллине карт туртса илчĕ те çупма пуçларĕ. Ак тамаша, алăсем хăйсем тĕллĕнех пĕр-пĕрин патнелле туртăннă иккен. Те спектакль çав тери илĕртӳллĕ иртнĕрен çакна Таланов сисмен те.

* * *

Наци конгресĕнче çамрăксем мĕнле ĕçленине асăрхаса тăракан Ваттисен Канашĕ пур иккен. Унта чи сумлă чăвашсене суйланă, пуçлăхĕ те самай паллă çын. Шăпах çавă сĕннипе Таланов чăваш çамрăкĕсен пĕрлешĕвне йĕркелес ĕçе пуçăнчĕ. Çамрăксене пулăшса пыма Чечеков профессора хушрĕç. Таланова милицире тытнă вăхăтра вăл Мускава доктор диссертаци хӳтĕлеме кайнăччĕ. Çакă вара Таланова самаях хавхалантарчĕ, шанăç кӳчĕ. Унпа пĕр шухăшлă юлташĕ те часах тупăнчĕ, хăй вĕрентекен Ира. Халĕ ăна чи шанчăклă тусĕ тесен те юрать ĕнтĕ. Таланов хулари студентсемпе тĕл пулса калаçнă чухне те кашнинчех пĕрле пулма тăрăшрĕ унпа.

Чăвашлăхпа кăсăкланакан студентсем кашни институтрах пур иккен, анчах пит йышлах мар. Ытларахăшĕ иккĕленекенсем, пăхса кăна лараççĕ, калаçăва хутшăнсах каймаççĕ. Техникумсемпе училищĕсенче те çавах. Çапах та пĕрремĕш пухăва хĕрĕх çынна яхăн пуçтарăнчĕç. Кусене вара чăн-чăн чăвашсем теме те юрать, калаçăвĕнченех паллă. Çамрăксен пĕрлешĕвĕ кирли пирки иккĕленсе тăмарĕç, малтанах çырса хатĕрленĕ уставпа паллашнă хыççăн пĕр шухăшлă пулсах сасăларĕç. Унтан калаçу хăйсен пĕрлешĕвне мĕнле ят парасси пирки тапранчĕ. Темиçе сĕнӳрен иккĕшне суйласа илчĕç те хĕрсе кайсах тавлашма пуçларĕç. Пĕрисем «Улăп» ята килĕштерчĕç, теприсем – «Пăлхара». Ытăва вара сасăласа татса парас терĕç. Шăп çав самантра Чечеков сăмах илчĕ.

– Çамрăк тусăмсем, сире пурсăра та çакăн пек пĕрлешӳ туса чăмăртаннă ятпа чунтан-чĕререн саламлатăп, ĕçре, вĕренӳре çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх тата чăтăмлăх сунатăп. Хăвăр чухлатăр-ши, ăна эпĕ калаймăп, паян сирĕншĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ кун, сирĕншĕн çеç мар, пĕтĕм чăваш

халăхĕшĕн тесессĕн те ытлашши пулас çук. Халĕ вара хам шухăша пĕлтерем. Пĕрлешӳ ячĕ пирки. Нимĕн те калаймăн, иккĕшĕ те паха ятсем. Анчах юлашки вăхăтра чăваш ăсчахĕсене пĕр япала канăç памасть: тутарсем пирĕн историе туртса илесшĕн, çине тăрсах хăйсене пăлхарсем теççĕ. Çакă вăл пĕртте тĕрĕс япала мар, наука чăнлăхĕпе пачах та явăçса тăмасть.

– Пире шкултра тутарсем пăлхарсенчен тухнă тесе вĕрентнĕччĕ, – терĕ пĕри.

– Ăçти шкулта вара? – ыйтрĕ Чечеков тĕлĕнсе.

– Нурлатра.

– Вăт, калатăп вĕт... Анчах халĕ ку ыйтупа тутар историкĕсем те пайланса кайрĕç. Пĕлеççĕ ĕнтĕ, вунвиççĕмĕш ĕмĕрччен кунта пăлхар-чăвашсем кăна пурăннă, патшалăх чĕлхи те вĕсен хальхи чăваш чĕлхи пулнă. Тĕрĕссипе каласассăн пирĕн хамăр чĕлхене пăлхар чĕлхи теме те сăлтав пур.

Пĕри ниçта кайса кĕрейми аллине силлет, никам пĕлмен ыйтăва хуравлама пултаракан ача пекех. Чăтса тăраймарĕ:

– Калама юрать-и? Ман каламалли пур!

– Тархасшăн, – терĕ Чечеков.

– Пайтах шухăшланă, Ашмарина та вуланă, – пуçларĕ çав каччă, – анчах мана пĕр иккĕленӳ канăç памасть: пăлхарсене йышлă та вăйлă халăх пулнă теççĕ, каярах ăçта кайса кĕнĕ-ха вĕсем, эпир пăлхарсем пулсассăн, халăх ячĕ мĕншĕн улшăннă-ха? Атту тĕлĕнмелле пулса иртет: вунулттăмĕш ĕмĕрччен чăваш тени курăнсах каймасть, сасартăк кăмпа пек шăтса тухать. Ăçтан? Çакна кам ăнлантарса парĕ-ши?

– Пĕри тата чăвашсем шумерсенчен тухнă тесе çырать, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать, – хутшăнчĕ тавлашăва университет студентки. – Тахăшне ĕненсе пĕтермелле. Вуласассăн тĕрĕс те пек, пĕр евĕрлĕ сăмахсем те чылай.

– Тусăмсем, ытла шала кĕрсе каяр мар-ха, – лăплантарма пикенчĕ профессор хĕрсе кайнă çамрăксене. – Çав кĕнекесене çыраканĕ вăл пачах та наука çынни мар, хăй тĕллĕн аппаланакан тĕпчевçĕ кăна, ятарлă пĕлӳ çук унăн.

– Апла-тăк ун пек япалана мĕншĕн пичетлеççĕ вара? – çине тăчĕ леш студентка.

– Укçа тӳлесессĕн халĕ темĕн те пичетленсе тухĕ, калăпăр, чăвашсемпе еврейсем пĕр тымартан тесе те. Акă пĕр-ик тĕслĕх кăна илсе парам. Еврейсен чи аслă вĕрентекенĕ Моисей пирки илтнĕ пуль-ха.

– Илтмесĕр, илтнĕ, паллах, – сас пачĕ пĕри.

– Вăт, унăн вĕрентĕвне пичетленĕ пилĕк кĕнекене пĕр

сăмахпа «Тора» теççĕ. Тӳрех турă сăмаха аса илтерет. Чăвашсем çынна урăхла этем теççĕ, Адам тенĕ пекех илтĕнет. Евăпа Адамăн икĕ ывăл пулнă теççĕ: Авел тата Каин. Авел авалхи еврей чĕлхипе ывăл тени пулать, чăвашла та çаплах. Еврейсем шăматкуна «шабат» теççĕ, кунта та пĕрпеклĕх пур пек. Анчах çакă вăл чăвашсемпе еврейсем пĕр йăхран тенине пĕлтермест.

– Мĕне пĕлтерет вара вăл? – чăтаймарĕ пĕри питĕ тĕлĕннипе.

– Çакă вăл пирĕн культурăра питĕ авалхи сийсем пуррине кăна пĕлтерет. Урăхла каласассăн чăваш культуринче этемлĕхĕн ачалăхне асăрхама пулать, – турĕ пĕтĕмлетӳ Чечеков профессор.

– Вăт, вăт, – парăнма шутламарĕ леш каччă. – Халăхĕ ватă тейĕпĕр, ячĕ вара питĕ çамрăк. Тен, тутар-монголсем çав тери хĕснĕ вăхăтра мĕнле те пулин çăлăнса юлас тесе пăлхарсем хăйсене юриех чăваш теме пуçланă? Суя ят тейĕпĕр. Лешсене кунталла çĕмĕрсе килнĕ чухне тытса чаракан пĕртен-пĕр халăх пăлхарсем пулнă теççĕ мар-и-ха? Çакăншăн вĕсене тĕппипех пĕтерме тытăннă теççĕ.

– Вăл çапла-ха. Пăлхарсем вырăссенчен пулăшу ыйтаççĕ, лешсем шарламаççĕ. Кĕскен каласассăн çамрăксен пĕрлешĕвĕнче тавлашу клубĕ тума та пулать. Ячĕ пирки вара?..

Питĕ тимлĕн итлесе ларакан Ира сиксе тăчĕ те:

– Ачасем, ман шутпа пирĕн пĕрлешӳ «Пăлхар» ятлă пулмалла. Эпир апла авалхи пăлхар чĕлхипе калаçатпăр иккен. Çакă мана питĕ килĕшрĕ.

Тавлашу лăпланчĕ, ытларахăшĕ Ира сĕнĕвĕпе пĕр майлă пулчĕç. Ун хыççăн вĕсем «Пăлхар» пĕрлешĕвĕн кĕрекине суйларĕç, тăхăр çынран. Кусем вара – кĕреке пуçлăхне. Таланов Улатимĕре лартрĕç. Çакăн хыççăн ăна пурте алă çупсах саламларĕç. Питĕ явaплă лава кӳлĕнчĕ ĕнтĕ. Ĕçлемелли кунта темĕн чухлех, уйрăмах сапаланса кайнă чăваш çамрăкĕсене пĕр ушкăна пĕтĕçтерес енĕпе.

Унтан Чечеков çак пĕрлешĕве юстици министерствинче регистрацилесси, уйрăмах документсене питĕ тĕрĕс çырса пичетлесси пирки асăрхаттарчĕ.

– Кашни сăмах, кашни пăнчă вырăнта пулмалла. Тавăрса пама юратаççĕ вĕсем. Пĕлтĕр ав УЧУ-на çирĕплетнĕ чухне икĕ уйăха яхăн çӳреме тиврĕ.

– УЧУ мĕн вара вăл? – тĕлĕнчĕ пĕри.

– Урă чăвашсен ушкăнĕ вăл, – хуравларĕ Улатимĕр.

– Ун пекки те пулать-и вара? Камсене илеççĕ вара унта?

– Пурнăç çавăнталла илсе пычĕ ĕнтĕ, – терĕ профессор.

– Пирĕн мăн асаттесем чăваш çакăн пек чир-чĕре кĕрсе ўкесси пирки шутлама та пултарайман. Урă халăх пулнă эпир. Халĕ вара пачах урăхла, ĕçке ярăннăран ăс-тăнран та, сывлăхран та чакса пыратпăр. Ўсĕр е мухмăрпа асапланакан халăхăн пуласлăхĕ çук. Малтан сăпайлăхне, унтан мăнаçлăхне, наци туйăмне çухатать те, вырăссем калашле, народонаселени кăна пулса тăрать.

– Чăнах та, çав эрехе мĕншĕн ĕçеççĕ-ха ăна? – сас пачĕ Ира. – Ман шутпа сывлăхшăн тесе ĕçни теултавлă сăмах çеç. Сывлăхшăн эрех ĕçмелле мар ĕнтĕ, паха пахча-çимĕç, пыл çимелле. Хăшĕ-пĕрисем денатурат та ĕçме хатĕр. Енчен те Атăлта е кўлĕсенче шурă эрех хумханса выртсан мĕн шыранă пулĕччĕç-ши вĕсем?

– Паллах, таса çăл шывĕшĕн çунса çўретчĕç, – терĕ Улатимĕр Таланов.

– Мĕншĕн-ха патшалăх нимĕн те тумасть, – çине тăчĕ Ира, – эрех сутса укçа тăвассине мала хурать. Парадокс?!

– Çĕр çинче темĕн тĕрлĕ чĕрчун та пур, анчах хăй сывлăхне сиенлекенни пĕрре çеç, çавă вăл – çын. Хăй ĕмĕрне хăй кĕскетет. Анчах пурте пирĕн пек мар çав, японсем ав пуринчен нумай пурăнаççĕ, – терĕ Чечеков. – Вăл çеç те мар-ха, ĕçкĕ чирне пула çемьесем арканаççĕ, пиншер ача юратусăр, телейсĕр ўсет. УЧУ-на шăпах çакна лайăх ăнланса илнĕ чăвашсем йĕркеленĕ те ĕнтĕ. Тĕрĕссипе каласассăн, пирĕн халăхăн пурĕ те пĕр чир кăна. Çавăнтан хăтăлсассăн ытти веçех майлашăнса кайĕ, чăваш сăн-сăпачĕ те улшăнĕ.

– Тен, пирĕн хамăр уставра «Пăлхарта» тăракансен эрех ĕçме юраманни çинчен çирĕплетсе хăвармалла мар-ши? – сĕнчĕ хаваспах Ира. – Çакăнта лараканкансем эпир пурте пулас ăрăвăн амăшĕсемпе ашшĕсем вĕт-ха. Ўсĕрпе çуралнă ачасенчен вăйлă ăру çитĕнейменни паллă ĕнтĕ.

– Тĕрĕс калать вăл, Ира, – хутшăнчĕç ытти хĕрачасем те.

– Устава çырма кирлех мар пулĕ, анчах УЧУ ларăвне пырса пăхни никама та чармасть. Тен, унта çырăнма кăмăл тăвакансем сирĕн хушăра та тупăнĕç, – сĕнчĕ профессор.

Чылайăшĕ Чечеков сĕнĕвĕпе килĕшрĕç, УЧУ пухăвĕ пирки маларах систерме ыйтрĕç. Вара Таланов паянхи пухăва хастар хутшăннăшăн пурне те тав турĕ, кĕрекене суйланисене юлма ыйтрĕ. Чылайччен калаçса ларчĕç, камăн мĕнле ыйтупа е камсемпе ĕçлемеллине палăртса хăварчĕç, пуçлăх çумне те суйларĕç. Пĕри тата кăкăр палли тата ялав тăвасси пирки сăмах хускатрĕ. Ку ыйтăва вара çитес ларура пăхса тухас терĕç. Киле

саланас умĕн Чечеков Улатимĕре Çеçпĕл Мишши çырнисене вуласа пăхма сĕнчĕ, тен, «Пăлхар» пĕрлешĕвĕн идеологи никĕсне çав поэтăн вĕрентĕвне хумалла мар-ши терĕ.

Килелли çулĕ Улатимĕрĕн Ирăпа пĕрлех пулчĕ. Акă вĕсем Шанхай еннелле илсе каякан троллейбуса кĕчĕç те хире-хирĕç тăчĕç, пĕрне-пĕри куçран пăхса илчĕç, анчах сăмах хушмарĕç. Ун пекки пулать вăл, уйрăмах пуçа тĕрлĕрен шухăшсемпе чыхса тултарнă хыççăн. Пуç мими çавсенчен хăтăлаймасть, хăв кунта пулсассăн та шухăшпа унччен çĕртех. Пухура курни-илтни, кам мĕн калани, мĕнле йышăнусем туни çаплипех пуçра-ха.

Ира вара темшĕн именӳллĕн пăхса тăрать. Миçе хутчен асăрхаман ĕнтĕ Улатимĕр çакна: ыттисемпе пĕрле чухне Ира хăйне самай урăхла тытать. Пухура мĕнле хăюллăн калаçрĕ тата, уйрăмах эрехпе иртĕхекенсем пирки. Сывлăхлă ача çуратасси пирки те сăмах хускатрĕ вĕт-ха. Качча кайма вăхăт çитнине туять-ши вара? Шухăшĕ пурах ĕнтĕ. Ахалех тепĕр чухне хĕрсем нихăçан та качча тухмастпăр тесе пуплешеççĕ. Сисместĕн те, тепре курнă çĕре ача амăшĕ пулма хатĕрленни пĕр сăмахсăрах паллă. Пурнăç йĕрки çапла ĕнтĕ: хĕрĕн качча тухмалла, каччăн авланмалла. Ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ чăн-чăн пурнăç мăшăрланнă хыççăн кăна пуçланать тесе. Пĕччен чухнехи вăл çурма пурнăç кăна, тĕллевĕ те уçăмлах мар.

Ира кăçал вĕренсе пĕтерет ĕнтĕ, халĕ практикăра, вăхăтлăха Кадеров ертсе пыракан сĕтел-пукан тăвакан фирмăра ĕçлет, унченхи хĕрарăм отпускран тухиччен. Кайран, паллах, ĕç шырама тивет. Ку директор та кăштах шантарать-ха, анчах пит уçăмлах каламасть. Ирăн Талановпа канашласа пăхас шухăш та пур, ниепле те хăяймасть. Сăлтавĕ те çав тери сапăрскер-çке, темле сăмахран пуçламалла. Тен, кун пирки шарламасан та юрать, тĕрĕс мар ăнланĕ те...

Акă пуçра хуллен кинора кадр хыççăн кадр куçнă пек ĕçре курни-илтни хускалса кайрĕ. Паллă ĕнтĕ директор алăкĕ умĕнче ларакан секретарĕн ĕçĕ телефонпа калаçнипе е кирлĕ хутсене пичетленипе çеç çырлахмасть, пуçлăх патне килнĕ çынсене кăмăллăн кĕтсе илме те пĕлмелле. Ку çеç те мар-ха, мĕнлерех çын килнине кура директор тепĕр чухне чей е кофе кĕртсе пама ыйтать. Çакна та хăвăрт тумалла, çавăнпа та вĕри шыв яланах хатĕр тытмалла. Чи сумлă çынсем валли вара директор патĕнчен кĕмелли тепĕр пĕчĕк пӳлĕм пур. Кунта вара савăт-сапи те, сĕтел-пуканĕ те пачах урăхла. Диванĕ кăна мĕне тăрать! Паллах, чей ĕçнипе çеç çырлахмаççĕ ĕнтĕ кунта, тутана сĕрмелли те тупăнать, темĕн тĕрли те пур. Йĕрки вара

çапла: Ирăн черккисене, эрехне, çыртмаллине лартса памалла та хăй вырăнне тухса пуçлăх патне пынисене тăхтама ыйтмалла. Директор ĕçĕ те унчченхи пек мар, лайăх заказчике кăштах хăналама пĕлни те питĕ вырăнлă. Чылай чухне пĕр-пĕр ыйтăва çак пĕчĕк пӳлĕмре татса параççĕ те ĕнтĕ вĕсем. Ахальтен мар директор Ирăна чĕнсе илет те çак пӳлĕм валли мĕн илмеллине асăрхаттарсах тăрать, укçине хăй кĕсйинченех кăларса парать, чек таврашне ыйтмасть.

Пĕррехинче, ĕç кунĕ вĕçленнĕ тĕлелле, директор Ирăна хăй патне чĕнсе кĕртрĕ те кĕпи тӳмисене вĕçертсе: «Ĕнсе шăммине пускаласа пăх-ха, мăя пăркалама памасть, машинăра ларса пынă çĕртех тупăнчĕ пулас», – терĕ. Мĕн тăвас тен, итлемелле. Директор пĕчĕк пӳлĕме кĕчĕ те хыçлă пукан çине хирĕçле вырнаçса ларчĕ. Ира хыçалтан пырса тăрса икĕ аллипе пускалама тытăнчĕ. Ют арçын ӳтне пĕрремĕш хут çапла тытса курать. Ашшĕ ӳсĕр килсессĕн хывăнтарса вырттарнă чухне кун пекки пулкаланă-ха. Ырханскерĕн ытларах шăмăсем кăна леккелетчĕç. Кун вара, лайăх апат-çимĕçпе пурăнаканскерĕн, ӳчĕ самай тачка, шăмă палăрмасть те. «Хытăрах пус-ха, мĕн хĕрхенсе тăратăн», – терĕ хуçа. Ира вара вăйпах массаж турĕ. «Вăт ку пачах урăхла коленкор», – ырласа илчĕ лешĕ юлашкинчен, тав тума та манмарĕ, холодильникре упранакан конфет коробкине Ирăна тыттарчĕ, Шупашкарта кăларакан «Кайăк сĕчĕ» ятлăскерне.

Директор çи-пуçне майларĕ те сехет çине пăхса илчĕ, кĕтесре ларакан сейф алăкне туртса пăхрĕ. «Киле кайма та вăхăт ĕнтĕ. Ларса пыма пултаратăн, машина патне тухса тăр. Эпĕ кăштах пăхса çавăрăнам-ха», – терĕ.

Тĕрĕслесех тăмасассăн йĕрке тума çук. Темшĕн-çке тасалăх пирки, электричествăпа перекетлĕ усă курасси çинчен часах манаççĕ. Ĕлĕкхи пек шутлаççĕ. Хуçа патĕнче урăхла ĕçлемеллине хăнăхса çитеймеççĕ-ха. Шалу пысăкрах илес тесессĕн ĕçре перекетлĕ пулмаллине пурте ăнкартмаççĕ-ха.

Акă хуçа пычĕ те шурă тĕслĕ «Волгăн» малти алăкне уçса Ирăна ларма сĕнчĕ. Шофер вырăнне хăех руль тытать иккен.

– Ăсталла каймалла-ха?

– Киле, – персе ячĕ Ира.

– Хăш урамалла вара?

Ира пĕр самантлăха нимех те калаймарĕ. «Шанхая» теме хăюлăх çитереймерĕ. «Ăçта тесе калас-ши? Хула варринче пурăннă пек тăвас мар-ши?»

– «Ача тĕнчи» патĕнче антарса хăварсассăн лайăхчĕ, – тавçăрса илчĕ çамрăк практикантка.

Машина тапрансанах музыка янрама тытăнчĕ. Савăнăçлă кĕвĕсем, кăштах эротика еннелле туртакан юрăсем те пур. Магнитофонран çӳлерех пĕчĕкçĕ турăш вырнаçтарса лартнă, çул çинче пĕр-пĕр инкек сиксе тухасран пуль ĕнтĕ. Рульне вара питĕ хăюллăн пăркаласа пырать, машинăпа тахçантанпах тусли куçкĕретех.

Кинотеатр патне çитсессĕн машина чарăнчĕ. Ира анса юлас умĕн директор ăна çитес вырсарникун ĕçе тухмаллине асăрхаттарчĕ. «Волга» тапранса кайсанах Ира Гагарин урамĕнчи театр патне хăпарчĕ те троллейбуспа килелле çул тытрĕ...

Вырсарникун Ира хуралпа сăнчăрти йытăсăр пуçне никамах та асăрхамарĕ, хăйĕн ĕç пӳлĕмне кĕчĕ те компьютерпа пичетлеме ларчĕ, чăрмантаракансем çук чухне ĕç самай кал-кал пычĕ. Шăплăха телефон сасси хускатрĕ, директор шăнкăравларĕ, кам та пулин ыйтсассăн тепĕр çур сехетрен килет теме хушрĕ. Чăнах та, вăхăт нумай та иртмерĕ директор çитрĕ те.

– Пичетлеме пăрах, хăнасем килеççĕ, мунча кĕртсе ямалла. Атя, вĕсем çитиччен сĕтел хатĕрлер, – терĕ хуçа хăй пӳлĕмне уçса.

Вара вĕсем леш пĕчĕк пӳлĕмри апат-çимĕçе, ĕçмеллисене икĕ пысăк сумкăна тултарчĕç те тухрĕç.

Мунчи кунтах иккен, сĕтел-пукан тăвакан цехпа юнашар çуртра, тепĕр енчи уйрăм алăкран кĕмелле. Вĕсене хирĕç хуралçă тухрĕ те мунча хатĕррине пĕлтерсен хăй патнелле кайрĕ.

Кĕрсессĕнех хывăнмалли вырăн, унтан шаларах икĕ алăк. Пĕри уçах. Кунта ятарласа тунă вăрăм сĕтелпе касса илемлетнĕ икĕ йывăç диван, айккинерех пукансем, пĕчĕк сĕтел. Холодильник те пур, ун çинче телевизор, çӳлерех йăлкăшса тăракан пысăк сехет. Пӳлĕмĕн тепĕр вĕçĕнче çын йывăрăшне тĕрĕслемелли шурă тараса, стена варринче диван çине хывăнса выртнă çамрăк хĕрарăм ӳкерчĕкĕ, ăна пĕр арçын çăварĕнчен виноград хыптарать. Çакăнтах тата юнашар пӳлĕме кĕмелли алăк пур.

– Атя-ха кĕрсе пăхар, тасалăх пирки мĕнлерех-ши унта? – терĕ директор.

Çакă вара Ирăшăн экскурси пекех пулчĕ: сылтăм енче душпа çăвăнмалли виçĕ вырăн, тепĕр енче йывăç саксем, пысăк чашăксем, умра пысăках мар бассейн иккен, унта пусмапа хăпармалла. Директор тепĕр алăкне уçса пăхрĕ, унтан питĕ вĕри сывлăш капланса тухрĕ. Пурте йĕркеллех пулас.

– Ира, раздевалкӑри шкапра таса простыньсем пулмалла, ҫакӑнта кӗртсе хур-ха, – хушрӗ хуҫа.

Ёҫмелли-ҫимелли майлаштарса лартнӑ хушӑра Кадеров Ирӑна хӑнасем умӗнче хӑйне савӑнӑҫлӑрах тытма, кулкаласа калаҫма ыйтрӗ. Кӑмӑлсем паян пурин те лайӑх пулмалла.

Акӑ лешсем те ҫитрӗҫ, калаҫни, ихӗлтетни илтӗнсе кайрӗ. Тӑваттӑн кӗрсе тӑчӗҫ: вӑтам ҫулалла ҫывхарнӑ икӗ арҫынпа ҫап-ҫамрӑк икӗ хӗрача.

– «О-о! Мӗнле ҫынсем килчӗҫ! – тесе хуҫа арҫынсене алӑ парса ыталаса илчӗ, хӗрсене пуҫ тайрӗ. – Ну, мӗнле ҫитрӗр. Хывӑнӑр та – сӗтел хушшине... Астуман та, паллашӑр: ку Ирина, Ира тесессӗн те юрать».

Лешсем хывӑнма кайсассӑн хуҫа Ирӑна сӑмавар лартма хушрӗ, хӑй холодильнике уҫса унта мӗн пуррине тепӗр хут пӑхса илчӗ. Ира пушӑ сӑмавара тултарас тесе кран патне ҫывхарнӑччӗ кӑна, директор чарчӗ, кӗтесре ларакан шурӑ витререн ҫӑл шывӗ яма хушрӗ. Кунта та ҫавах, хӑй патӗнчи пекех ҫӑл шывӗ кӑна вӗретмелле иккен.

Акӑ хӑнасем пӗрин хыҫҫӑн тепри кӗрсе сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗҫ. Хӑйсем вара ар хатӗрне хуплакан тумпа кӑна, хӗрсен кӑкӑрӗсем те уҫах. Урисенче мунчара тӑхӑнмалли резин пушмаксем. Пӗр арҫыннин, лутра та сарлакаскерӗн, ӳчӗ хуп-хура ҫӑмпа витӗннӗ, кӑкӑрӗ ҫинче кӑтралансах тӑрать. Кунпа танлаштарсан теприне ҫап-ҫара теме те юрать, хыткан та вӑрӑмскер хуппине сӗвнӗ ҫӑка вулли пекех курӑнса ларать, сарӑ ҫӳҫӗ кӑштах сайраланнине пула ҫамки ыттисенчен пысӑкрах пек туйӑнать. Юнашар ларакан хӗрӗ тӗксӗмрех ӳтлӗ, куҫӗ вара кӑн-кӑвак. Кӗске ҫӳҫӗ мӗн тӗслине пӗлме ҫук, паянлӑха хӑмӑр тӗспе сӑрланӑ пек. Самай пысӑк кӑкӑрӗ кӑшт усӑнчӑкрах, ҫинҫе пилӗклӗ, купарчи тепринпе танлаштарсан тачкарах. Лешӗ вара балерина пекех, пӗр грамм ытлашши ӳт те ҫук пулас, ытлашши мар, ҫитмест те пек: кӑкри те кӑшт кӑна палӑрать. Ӳчӗ вара шурӑ мрамортан якатса тунӑ пекех туйӑнать, ҫӳхе туталлӑ, йӑл кулнӑ чухне савӑш путӑкӗ палӑрать.

Хӗрсем мӗн тумаллине лайӑх пӗлеҫҫӗ курӑнать, ларнӑларманах апельсин тасатса пайӑн-пайӑн уйӑрса арҫыннисем умӗнчи пӗчӗк турилкке ҫине хурса пачӗҫ, панулмие кассаваррине ҫӗҫҫӗ вӗҫӗпе чакаласа кӑларчӗҫ. Малтанхи черккене тӗлпулушӑн тесе ӗҫрӗҫ. Ирӑна та ярса пачӗҫ, анчах вӑл черккине тута патне тытрӗ те лартрӗ. Унтан Кадеров тепре тултарса тухрӗ те черккине йӑтса: «Атьӑр-ха халӗ сумлӑ хӑнашӑн, Фирс Карповичшӑн ӗҫсе парар, ӑна ҫирӗп сывлӑх сунар. Тавах ӑна пирӗн пата килсе курма вӑхӑт тупнӑшӑн», – терӗ

те çăмлă кăкăрлипе шаккаса тĕппипе ĕçсе пачĕ, черккине сылтăм аллипе вылятса кăтартрĕ. – Пурте ман пек пушатăр!»

Ыттисем те çапла турĕç. Ира каллех ĕçмерĕ. Çакна сумлă хăна асăрхарĕ те: «Хăш-пĕрисем ман сывлăхшăн ĕçесшĕн пулмарĕç»,– терĕ йăл кулса. Директор Ира çине тимлĕн пăхса пуçĕпе сулласа илчĕ, ĕçмеллине пĕлтерчĕ ĕнтĕ. Практикантка тавçăрса илчĕ, эпĕ минерал шывĕ юрататăп тесе тултарса ĕçсе пачĕ.

– Халлĕхе çитет пуль. Мунчу хатĕр-и вара сан? – ыйтрĕ сарă çӳçли.

– Пурте хатĕр, ăшши те çителĕклех, – терĕ хуçа.

Вара вĕсем пĕтĕмпех хывăнса тараса çине тăра-тăра хăйсене виçсе пăхрĕç те кĕрсе кайрĕç.

– Халĕ хамăрăн та кĕмелле ĕнтĕ. Атя, хывăнар, – терĕ те пуçлăх тухрĕ.Ира аптраса ӳкрĕ, мĕн тумаллине ниепле те тавçăрса илеймест. Çакă пач палламан çынсем умĕнче çапла тăриччен... Вăл директор патне пычĕ те каçару ыйтрĕ, пуç ыратма пуçларĕ тесе киле яма тархасларĕ. Лешĕ çакна пачах та кĕтменччĕ пулас, сасартăках сăнран улшăнчĕ.

– Мĕскер эсĕ, мана подводить тăвас тетĕн-им? Пĕлетĕн-и мĕнле çынсем килнине? Фирс Карпович вăл... Налук пухас ĕç пĕтĕмпех унăн аллинче. Кăштах çăмăллăх пултăр тесе чĕнтĕм ĕнтĕ. Эсĕ мĕскер, вăл кашни çĕрех çӳрет тетĕн-им? Юрать-ха Игорь пулăшрĕ.

– Вăл кам тата? Мĕнле шишкă? – чăтса тăраймарĕ Ира хуçа хĕрсе кайнине курсассăн.

– Вăл-и?.. Вăл хулари чи пысăк супермаркет хуçи. Унăнни пек пуян лавккасене шутласа кăларма пĕр алăри пӳрнесем те çитеççĕ пулĕ.

– Мунча кĕрейместĕп эпĕ, давлени хăпарса кайĕ те...

– Апла-тăк кунтах лар, чей хатĕрле. Кайран тата кам пуçтарса хăварĕ.

Килĕшме тиврĕ. Кадеров мунча алăкне уçсанах кулни, кăшкăрашни илтĕнсе кайрĕ. Ира сиксе вĕрекен сăмавара сӳнтерчĕ те тепĕр алăкне уçса пăхрĕ. Выртса канмалли пӳлĕм иккен...

Кăшт вăхăт иртсессĕн лешсем кĕпĕртетсе тухрĕç, кăкăртан аялалла простыньпе чĕркеннĕ, ахлата-ахлата сывласа сĕтел хушшине ларчĕç. Аванах çапăннă пулмалла, хĕрелнĕ ӳтсенчен ăшă пенине юнашар тăракан Ира аванах туйса илчĕ.

– Ира, эсĕ мĕншĕн кĕместĕн тата? – ыйтрĕ çутă çамкалли. – Ну эсĕ те вара, хăвна валли мĕнле чиперккесене суйласа илмеллине аванах пĕлетĕн, – терĕ директора çурăмĕнчен çемçен çапса илсе.

– Практикăра-ха вăл. Вĕренсе пĕтерсен унта куç курĕ, – пачĕ пĕчĕкçĕ шанчăк Ира çине кăмăллăн пăхса.

– Апла-тăк пушшех, практиканткăн пурне те вĕренсе юлмалла, çав хушăрах мунчара мĕнле массаж тумаллине те, – печĕ хăйĕннех арçын куркана сăра тултарса.

Ку хутĕнче вара эрехне пĕрер черкке кăна ĕçрĕç, ăш хыпнине пусарма сăра меллĕрех пулчĕ курăнать. Ира асăрхаман та, леш йăкăлтисем иккĕшĕ те Фирс Карпович çумĕнче иккен, çимеллисем хура-хура параççĕ, ĕçсе пынăçемĕн сăра тултараççĕ.

– Мĕн сăрапа çеç, эсир ăна массаж туса ярăр-ха, – сĕнчĕ куларах чаплă лавкка хуçи.

– Кун пек çурăма пĕччен çĕнтерес çук, футболла выля-малăх та пур, – терĕ тĕксĕмрех сăнли. – Атя пĕрле, – чĕнчĕ теприне.

Вара вĕсем виççĕшĕ те канмалли пӳлĕме кĕрсе кайрĕç. Кусем вара тӳрех ĕç пирки калаçма тытăнчĕç. Мунчара та канăç çук иккен. Пăхма çеç савăннă пек тыткалаççĕ, ăшра кăткăс ыйтусем хĕвĕшеççĕ иккен. Укçа канăç памасть.

– Коттеджне кăçал лартса пĕтерет ĕнтĕ вăл, шалти ĕçсем кăна юлнă, – пĕлтерчĕ хăна.

– Кала ăна, сĕтел-пуканне пĕтĕмпех хам çине илетĕп, – хушрĕ директор хăйĕн шанчăклă тусне.

Çав хушăра тĕксĕмрех сăнли тухрĕ те мунчаналла утрĕ, ун хыççăн кусем те кĕрсе çухалчĕç. Канмалли пӳлĕмрен сăрхăнса тухакан сасса итлесе ларас мар-ха тесе Ира хывăн-малли пӳлĕме куçса ларчĕ...

Курмалли, тĕлĕнмелли Ирăшăн ун чухне темĕн чухлех пулчĕ. Енчен те ĕçе çакăн пек арçынсем патне лексен мĕскер кĕтет-ха ăна. Пичетлеме, компьютерпа ĕçлеме пĕлни çеç çите-лĕксĕр иккен, чыса та шеллемелле мар.

– Практика кĕçех вĕçленет ĕнтĕ, малалли пирки мĕн шутлатăн тата? – Ира шухăшне пĕлнĕ пекех ыйтрĕ Таланов троллейбусран тухсан.

– Халлĕхе нимĕн те пĕлместĕп-ха. Çавăнтах юлма та май пур пек те. Анчах... – иккĕленĕвне каласшăн пулмарĕ вăл.

– Ĕç пирки, тен, хамăн калаçса пăхмалла мар-и?

– Пулăшас текенни пур-ха, анчах хăратăп.

– Мĕн пулчĕ вара?

– Качча тухма ыйтать вăл, – персе ячĕ пач кĕтмен çĕртен Ира. Хăй сăмахĕнчен хăй те хăраса ӳкрĕ. Ăçтан сиксе тухрĕ çак сăмах?

Таланов сасартăк Ира умне пырса тăчĕ те ăна икĕ аллинчен

ярса тытрĕ. Аллисем хăйĕн кăштах чĕтреççĕ те пек. Акă куçĕсем те пĕр-пĕрин çине шăтарас пек пăхса илчĕç.

– Ира, мĕн калаçатăн эсĕ? Е шӳтлесе çеç каларăн?

– Мĕн пирки çак эсĕ?

– Качча тухасси пирки. Нивушлĕ çавăн пек çăмăлттайсем те пур вара, тӳрех качча илме хатĕр. Ира... Итле мана, çак шухăша пуçунтан кăларса пăрах. Качча тухма юрату кирлĕ. Эпĕ çакна эсĕ алла диплом илсессĕн калас тенĕччĕ: юрататăп эпĕ сана, Ирина; хирĕç мар пулсан авланма та хатĕр.

– Эпĕ те юрататăп, – терĕ те Ира пуçне Улатимĕр кăкăрĕ çине хучĕ. Лешĕ ăна ыталаса илчĕ те çепĕççĕн чăмăртарĕ. Пĕр самантлăха нимĕн шарламасăр тăчĕç. Ира хăлхинче каччă чĕри тапни чи хаклă юрă евĕрлех янăрать: ю-ра-та-тăп, ю-ра-та-тăп тесе тапнă пекех илтĕнет.

Кĕçех кивелсе хуралнă кĕпе сăнлă лутра çуртсем пуçланчĕç, шавласа тăракан хула куçран тухса ӳкрĕ. Кунта пачах урăхла тĕнче. Вара вĕсем хурал пӳртне кĕрсе паян каçпала кунта камсем лармаллине пăхрĕç те тухрĕç, урасем хăйсем тĕллĕнех Талановсем патнелле илсе кайрĕç, Улатимĕрĕн хăй амăшне Ирăпа лайăхрах паллаштарас шухăш çуралчĕ...

* * *

Чылай шухăша ăслă çынсем тахçанах каласа е çырса хăварнă иккен. Пире валлиех ĕнтĕ, пурăнма çăмăллăх пултăр тесе. Çеçпĕл сăмахĕсем те çавах, паян каланă пекех вырăнлă. Тĕлĕнмелли кăна юлать генисен пысăк ăс-тăнĕнчен. Тепри ав Çеçпĕл çулĕнче ача шутĕнче кăна сиккелесе çӳрет. Ку вара халăх чунне, наци туйăмне хускатакан сăвăсем хайлать, Чăваш патшалăхĕ мĕнлерех пулмалли çинчен «Пирĕн вăй» ятлă манифест çырса пичетлет. Çеçпĕл шучĕпе, чăвашсенчен тăракан правительство, укçа-тенкĕне пĕр çĕрте тытса йĕркеллĕ усă курма – наци банкĕ, хастар чăвашсене пĕрлештерсе тăракан парти, хамăр ирĕклĕхе, патшалăха сыхлама – çар пулмалла иккен пирĕн. Чăваш çĕршывĕнче чăваш чĕлхи ирĕклĕн аталанса янрамалла.

Çапла, Çеçпĕл çырнисене вуласа пынăçемĕн Таланов пуçĕнче ирĕксĕрех тепĕр сăнар тухса тăчĕ. Вăл – Иван Яковлев. Çамрăк тĕпчевçĕ хăйне тахçантанпах канăç паман ыйту çине хуравлама май тупăннăшăн Архимед хăй саккунне уçнă чухнехинчен те ытларах савăнчĕ пуль. Ав мĕншĕн вырăссем пире Яковлев çулĕпе ярасшăн, ав мĕншĕн пуçлăхсем, уйрăмах унччен парти ертӳçисем, Çеçпĕл çинчен калаçнă чухне ăна

поэт вырӑнне хурса кӑна ырласшӑн. Ҫеҫпӗл патшалӑх ҫынни, хальхи наци юхӑмӗн никӗсне хываканӗ пулни пирки шарламастчӗҫ. «Хӑй патшалӑхне тӑвайман халӑх чыса, сума тивӗҫ пулаяс ҫук», – турӗ пӗтӗмлетӳ Таланов Ҫеҫпӗлӗн хӑйюллӑ сӑмахӗсене чӗре патне илнӗ май. Апла-тӑк, «Пӑлхар» пӗрлешӗве хавхалантарса пыраканӗ, урӑхларах каласан, унӑн ялавӗ шӑпах Ҫеҫпӗл пулмалла та.

Чӑнах та, мӗншӗн-ха Ҫеҫпӗл калани пурнӑҫа кӗрсе пымасть: министра лартма Мускаврисене сӗтӗре-сӗтӗре килеҫҫӗ, пуҫлӑхӗ те вӗсен чӑваш мар. Намӑс! Хамӑртан култарни ҫеҫ. Мӗнле ӗҫре кӑна пултарулӑх кӑтартмаҫҫӗ пулӗ чӑвашсем, министра лартма тивӗҫҫи ҫук. Юри лартмаҫҫӗ, чӑвашсем хӑй ӑсӗпе пурӑнасран хӑраҫҫӗ.

Тепӗр чухне тата чӑваш хӑй те айӑплӑ пулас: ытлашши сӑпайли чӑрмантарать, хӑюллисем сахалрах. Акӑ халӗ те хулара ун пуҫлӑхне суйламалли кун ҫывхарнӑ май лару-тӑру хӗрсе пыни сисӗнет.

Хальхи мэр, Талановӑн «тусӗ», суйлав умӗнхи ӗҫне тахҫанах пуҫланӑ ӗнтӗ: вӑл лавккана е шкула кӗрсе тухать-и, ҫурт лартнӑ ҫӗрте пулать-и, Атӑл леш енне кайса курать-и – кашни утӑмнех радиопа, телевиденипе пӗлтереҫҫӗ, хаҫатра та ҫырсах тӑраҫҫӗ. Тепӗр чухне вара радиопа пыракан вунӑ минутлӑх передачӑра мэр ятне ырласа вунӑ-вунпилӗк хутчен аса илеҫҫӗ. Унтан ӑслӑ, унтан лайӑх, унтан пултаруллӑ ҫын хулара урӑх ҫук та тейӗн. Хӑш-пӗр журналистсем президент ҫине тӑнипе тунӑ ӗҫсене те мэр тунӑ пек кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ.

Юрать-ха, пӗр хӑюллӑ чӑваш тупӑнчӗ, хула пуҫлӑхне суйланӑ ҫӗре хутшӑнма килӗшрӗ. Хушамачӗ вара Ефремов, ӗлӗкхи Ехрем хуҫасенни пекех. Ун тавра чӑн-чӑн чӑвашсем чӑмӑртаннине курсассӑн Таланов та ҫавӑнталла туртӑнчӗ, пухусене, тӗлпулусене ҫӳреме тытӑнчӗ. Лешне кандидата тӑратнӑ чухнехи пуху хӑех пысӑк хавхалану пачӗ. Хулари чи чаплӑ керменте лармалла вырӑн ҫук, ытларах ахаль ҫынсем, рабочисемпе пенсионерсем пухӑннӑ. Тухса калаҫакансем те чылайӑн пулчӗҫ, Чечеков профессор та сӑмах илчӗ, чӑвашла калаҫрӗ. Малтан вӑл хальхи мэр команди тунӑ лайӑх ӗҫсене асӑнчӗ, тасалӑхпа илем ҫине тимлӗнрех пӑхма пуҫланине палӑртрӗ, ҫав хушӑрах ҫитменлӗхсене, тума пултарнӑ ӗҫсене кӑтартрӗ, хула айккинчи урамсенче, уйрӑм ҫуртсенче пурӑнакансемшӗн нимӗнле ырӑ улшӑнусем те ҫуккишӗн пӑшӑрханчӗ, чӑвашлӑха хӗснӗ тӗслӗхсене те манмарӗ. «Пире пуянсен мэрӗ мар, халӑх мэрӗ кирлӗ», – тесе вӗҫлерӗ сӑмахне. Юлашки шухӑшне вӑл тепӗр хут вырӑсла каларӗ. Чечековпа пӗр майлӑ пулнине ҫынсем

тăвăллăн алă çупса палăртрĕç. Унтан сăмах мэр пулма тăратнă Ефремова хăйне пачĕç. Илемлĕ те сăпайлă, икĕ çĕрте аслă пĕлӳ илнĕ вăйпитти арçын, Патшалăх Канаш депутачĕ, ахаль çынсен нушине, хуйхи-суйхине лайăх ăнланакан чăваш. Программи ун уçăмлă, хула хыснине мĕнле меллĕ усă курассине те чухлать. Тĕп тĕллевĕ – ĕççыннине, ваттисене, ачасене пулăшасси, хула пурлăхне, кунти заводсене таçти пуянсен аллине лекесрен упраса хăварасси, пурăнмалли çуртсене юсасси.

Çакăнта пулнă хыççăн Таланов тепĕр куннех «Пăлхар» пĕрлешĕвĕн кĕрекине пухрĕ. Калаçу самай хĕрӳллĕ иртрĕ, тавлашса кайнă самантсем те пулчĕç. Пĕрин шучĕпе хăшĕ вăйлăрах, хăшĕ выляса илме пултарать, çавăн майлă ĕçлемелле. Çавăн пекки хальхи мэрах ĕнтĕ, ун патне каймалла та хăйне пулăшнăшăн мĕн те пулин ыйтмалла, тен, укçа та парĕ, тен, хамăра валли пӳлĕм уйăрса пама пулĕ. Теприсем ав тĕп хула пуçлăхне чăвашах лартмалла теççĕ. «Шупашкарта çитмĕл процента яхăн чăвашсем. Пурте пĕр шухăшлă пулса сасăласан çĕнтерӳ вăл кĕсьерех», – терĕ пĕри.

Çапла вĕсем хула пуçлăхĕ пулма тăратнă чăваша пулăшас тĕллевпе çамрăксемпе студентсем хушшинче ĕçлеме калаçса татăлчĕç, çакăн пирки лешĕн штабне пĕлтерме Таланова хушрĕç. Ку çеç те мар-ха, ăнăçлă ĕçлес тесессĕн Ефремов çинчен тĕплĕнрех каласа пама пĕлмелле, листовкăсем кирлĕ пулаççĕ.

Улатимĕр кĕнĕ-кĕменех штаб пуçлăхĕн кăмăлĕ унчченхи пек маррине асăрхарĕ, çамрăксем мĕнле йышăну туни çинчен пĕлтерсен тин кăштах улшăннă пек туйăнчĕ. Каярах вара сăлтавĕ те паллă пулчĕ.

Ефремов майлисен малтанхи пухăвĕсем самай йышлăн иртетчĕç. Кам кăна çукчĕ пуль унта – предпринимательсем те, лавкка хуçисем те, ентешлĕх ертӳçисем те, учительсем те, профессорсем те, милицире ĕçлекенсем те, артистсем те, писательсем те... Пĕр сутăнчăкĕ юлашки ларура мĕн калаçнине диктофонпа вăрттăн çырса илнĕ те хула пуçлăхне кайса панă. Ку çеç те мар-ха, камсем пуçтарăннине те пĕлтернĕ. Пуçланă вара лешĕ пĕререн-пĕререн чĕнсе илсе савалама, пĕрне лавкка çуртне туртса илессипе хăратать, теприн патне ыранах налук инспекцинчен пыма пултарассине асăрхаттарать, профессорсемпе доцентсем пирки ректорсем патне шăнкăравлать. Çапла вара уçăмлăн ĕçлекенсен шучĕ самаях чакма тытăнать. Кун пек чухне ăçтан савăнăçлă ларăн-ха? Çапах та шанчăка çухатмалла мар, çак ĕçе «пăлхарçăсем» хутшăнни те самай

пысăк пулăшу. Студентсем хулара сахалăн мар вĕт. Тен, çавна пулах штаб пуçлăхĕ çамрăк активиста ăнăçу сунчĕ, мĕнле ĕçлемелле пирки те калаçрĕ, ытларах общежитисене çӳреме сĕнчĕ. «Чăрмав кӳрекенсем те тупăнĕç, анчах парăнмалла мар. Астăвăр: ректорсене, декансене вĕсене Ефремова хирĕçле ĕçлеме хушнă», – терĕ суйлавçăсемпе тĕл пулнă чухне кирлĕ хутсене чĕркесе парса.

Суйлав ĕçĕ вăл пачах урăхласкер, кăшкăрашни, ятлаçни çынсене часах сивĕтет. Паллă ĕнтĕ, ытларахăшĕ кунта чун хушнипе килеççĕ, пурнăçри йывăрлăхсене пĕтерме май çукши тесех. Çав хушăрах кăштах укçа сăптăрса илме ĕмĕтленекенсем те тĕл пулаççĕ. Кун пеккисене часах пĕлме пулать, енчен те депутат е мэр пулма хатĕрленекен çын укçине питĕ хĕссе-пĕссе тыткаласан, штаба килме пăрахаççĕ; çав çынсенех вара кайран тепĕр кандидат командинче курма пулать. Вĕсем укçашăн кăна çунса çӳреççĕ. Леш сутăнчăк чăваш та ахальтен диктофон чиксе пыман ĕнтĕ.

Таланов ирех тăчĕ те кăштах хуçкаланса илнĕ хыççăн хырăнса, çăвăнса тасалчĕ, тумланма пуçланăччĕ кăна радиопа леш «Столичный курьер» текенни пуçланчĕ. Калаçаканĕ каллех хула пуçлăхне мухтаса ун ӳтне пур çĕртен те чуптуса çулласа пĕтерчĕ тесен те юрать. Ак тамаша, каллех тĕлĕнмелле хыпар: çыравçăсен пĕр ушкăнĕ кĕлмĕçленсе  мэр патне кайнă, урăхла каласассăн чăвашсене сутма ĕнтĕ. Дикторĕ вара çакна пĕтĕм чăваш интеллигенцийĕ хула çыннисене хальхи пуçлăхшăн сасăлама чĕнет тесе пĕлтерет. «Апла эппин чăвашсене унталла-кунталла турткалама пуçларĕç. Тен, хăшĕ-пĕрисем çавăн пек çула хăйсемех шыраççĕ», – пăшăрханса илчĕ çамрăк преподаватель.

Уроксем пуçланиччен директорпа калаçса пăхасчĕ тесе Таланов училищĕне васкарĕ. Лешĕ те ирех пырса ларнă иккен.

– Ăнланатăп сана, тусăм, хам та депутат пулса курнă, – терĕ директор хастарлă çамрăк каланине итленĕ хыççăн, – суйлав тути-масине лайăх чухлатăп. Администраци енчен кăтартусем парсах тăраççĕ, кандидатсем хăйсем те килсе çӳреççĕ. Директорăн никама та хирĕçлемелле мар, йĕрки çапла, пурне те шантарсах кăларса ямалла. Ĕçне вара... Тӳрех калатăп, эпĕ хам Ефремов майлă. Ман енчен чару çуккă, анчах ытларах вĕренекенсене хăйсене ĕçлеттер, ашшĕ-амăшĕпе калаçтар, общежитисенче пулччăр. Воспитани енчен те усăллă ĕç вăл. Ман шутпа, калаçăвăн тĕшшине те питĕ тĕрĕс тупнă, «халăх мэрĕ» – начар янрамасть.

– Чечеков сăмахĕ вăл.

– Чечеков?.. Маттур чăваш. Эпир унпа депутат чухне пĕр ушкăнра тăраттăмăрччĕ, «Самана» ятлăччĕ пирĕн пĕрлĕх. Пурте чăвашсемччĕ. Ертсе пыраканĕ Чечеков доцентчĕ.

– Халĕ вăл профессор ĕнтĕ.

– Ăслă çын. Курсан салам кала, – терĕ директор алăк патнелле утакан Таланова.

Учитель ĕçĕ пек пархатарлă ĕç çĕр çинче урăх çук та пулĕ. Ăна эпир хамăр ачамăрсене шанса паратпăр. Урăхла каласан, пĕтĕм пуласлăх унăн аллинче, çемье шайĕпе пăхсан та, çĕршыв шайĕпе те çавах. Тепри тата тухтăр ĕçĕ те çаплах вĕт-ха теме пултарĕ. Çук пуль çав. Тухтăр вăл ытларах сывлăха чир-чĕртен сыхлассишĕн тăрăшать. Учитель вара çамрăка пур енлĕ аталану парассишĕн ĕçлет, кĕскен каласассăн – çын пулма вĕрентет. Пĕлӳ, ăс-тăн, тавракурăм шайĕ ытларах мĕнле учительсем вĕрентнинчен килет.

Таланов паян виçĕ группăпа ĕçлерĕ, кашнинчех суйлав пирки те сăмах тапратрĕ. Малтанлăха кăшт кăна ĕнтĕ, каярах вара самай уçăмлăн, камшăн сасăламаллине пĕлтерсех. Шел, Ира группи практикăра, вăл çукки сисĕнет çав, училищĕре темĕскер çитмест пек. Ирăсăр самай пушă пек курăнать.

Тĕрĕссипе каласан, паянхи уроксене лайăх иртрĕç теме май çук, çыравçăсем çапла хăтланни пуçран тухмасть. Таланов чăтса тăраймарĕ, уроксем вĕçленсенех кама та пулин курмăпши тесе писательсен çуртне васкарĕ.

Улатимĕр çитнĕ çĕре леш çуртран пĕри тухать, шăпах ĕнер хула пуçлăхĕ патне пуç тайма кайнăскер, çыравçăсенчен чи ватти.

– Ырă кун пултăр сире, Анисса Николаевна, мĕнле пурăнатăр? – терĕ Улатимĕр, картлашкаран хуллен анакан ватă çынна пулăшса.

– Аванах-ха, кам пултăн çак эсĕ, паллаймарăм.

– Таланов теççĕ мана, «Пăлхар» пĕрлешӳ ертӳçи.

– Илтнĕччĕ-ха. Хаçатра та çырнăччĕ пулас.

– Çапла, чăваш çамрăкĕсем хуллен чăмăртанаççĕ-ха.

– Вăл лайăх-ха. Эпир ав, çыравçăсем, аппаланса пĕтрĕмĕр, миçе союзне те пĕлсе çитереймĕн.

– Анисса Николаевна, эсир ĕнер хула пуçлăхĕ патĕнче пулнă терĕç, радиопа та пĕлтерчĕç.

– Чĕнчĕç те кайрăм ĕнтĕ, сăлтавĕ те пурччĕ те, пĕрре кĕрсе курас терĕм. Пичете хатĕр алçырăвĕ пурччĕ те, кĕнеке издательствинче те темиçе çул выртрĕ, ĕç тухмарĕ, спонсор кирлĕ теççĕ, çавна кăтартса пăхас терĕм.

– Тытса пăхрĕ-и вара?

– Чăвашла пĕлмест курăнать. Çапах та пулăшма сăмах пачĕ, çакă суйлав хыççăн хăех юлсассăн терĕ. Суйлавĕ темле иртĕ çав.

– Ыттисем тата мĕн ыйтрĕç?

– Нуши вăл кашнийĕнех пур. Пĕрин хваттерĕ хĕсĕк, теприне тава тивĕçлĕ ят кирлĕ, виççĕмĕшне Шупашкар çинчен çырнă кĕнекине кăларма пулăшнă иккен, унăн пымаллах пулнă ĕнтĕ, çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ вĕт.

– Халĕ вара хула мэрĕ хăвăра пулăшасса ĕненсех çӳретĕр-и эсир, Анисса Николаевна? Чăвашсене пачах юратман çын хăй сăмахне тытĕ-ши? Суйлав умĕнхи ултавлă калаçу кăна мар-ши вăл?

– Ăçтан пĕлĕн-ха ăна? Çамрăк çыравçăсем унпала туслă курăнать, суйлав вăхăтĕнче пулăшма та килĕшӳ турĕç. Ĕнерхи ĕç пурне те килĕшмерĕ пулмалла çав, ирех шăнкăравлама тытăнчĕç, чăвашсене сутма кайрăр-им текенсем те тупăнчĕç. Маншăн пулсассăн... Эпĕ çав кĕнекене кăларма пулăшу такамран та, шуйттанран та ыйтма хатĕр. Тен, вăл маншăн юлашки кĕнеке пулĕ.

– Вăл çапла пуль-те-ха, енчен те хула пуçлăхне чăваша суйласассăн ун пек ыйтусене татса пама çăмăлрах вĕт.

– Ефремова ăна пурпĕрех мала тухаймасть теççĕ те.

Çапла калаçса пырса Таланов ватă хĕрарăма троллейбуса лартсах ăсатса ячĕ. Хăй вара Ефремовăн суйлав штабĕ патнелле пăрăнчĕ, пуçри йывăр шухăша пула хуллен кăна утса пычĕ. «Нивушлĕ тава тивĕçлĕ ятшăн е кĕнекешĕн чăваша пулăшас тивĕçе, таса чыса çапла сутмалла вара. Тепĕр тесен тата çав тахçан çырнă кĕнеке вăл хальхи вулавçа тивĕçтереес те çук. Авторне курсанах паллă ĕнтĕ, ĕлĕкхи шухăшлав капкăнĕнчен çăлăнса паянхи пурнăçа тĕрĕс ăнланса сăнарласа параяс çук».

Юрать-ха, пурнăç пĕр тĕслĕ мар, хурипе юнашар шурри те пур. Таланов паян тепĕр пултаруллă та хăюллă чăвашпа паллашрĕ. Нумай вăхăт хушши Çĕпĕрте пурăннă хыççăн аттесем пилленĕ çĕр çине каялла килнĕскер, Нил Гаврилов ятлă.

Пурнăç çулĕ унăн такăр пулман, ялта çуралса ӳснĕскер хăй шăпине хăех майлаштарса пынă, вĕреннĕ, ĕçленĕ, йывăрлăхран хăраман. Газ кăларнă çĕре лексессĕн тавçăруллă чăваш каччи ĕçе çăмăллатмалли сĕнӳсем пама тытăнать, премисем те илет. Кĕçех ăна ертсе пыракансен ушкăнне илеççĕ. Çапла майĕпен ӳссе пырса пысăк начальникех çитет, çĕршыва усăллă пысăк ĕçсемшĕн патшалăх преми илме те тивĕçет. Шалăвĕ

те пĕчĕкех пулман ĕнтĕ, лайăх тупăш паракан акцисене илме те тавçăрулăх çитернĕ. Пĕр сăмахпа каласассăн, тăван яла пушă алăпа килсе кĕмест; малтан вăл ашшĕ килне çĕнетет, унтан пĕччен пурăнакан ватăсен шăпине кăштах çăмăллатас тесе вĕсем валли хăтлă çурт лартса парать, каярах вара чиркӳ те парнелет, пĕр çынах ял пурнăçне чун кĕртет.

Халĕ Нил Гаврилов хăйĕн пархатарлă ĕçне Шупашкарта туса пырать. Тӳрех каламалла, çак хулара халĕ тĕнчере мĕн пурри пурте пур. Асăрханулăрах пулмасан тĕлĕнмелли те, кулянмалли те часах сиксе тухать.

– Мĕн тери пысăк йăнăш тунă иккен эпĕ, – терĕ Гаврилов суйлав штабĕнче ларакансен умĕнче, – çыравçăсене ĕненнĕ эпĕ, наци юхăмне ертсе пыракансен шутĕнче пуль тесе хисепленĕ, май килнĕ таран укçапа та пулăшнă. Икĕ питлĕскерсем иккен вĕсем: чăвашлăх пирки калаçаççĕ, кĕнекесем çыраççĕ, пурнăçра вара пачах урăхла, укçашăн, чапшăн амăшне те сутма хатĕр. Çакăнта килсе ĕçе кӳлĕнес вырăнне, мĕскĕнсем, теприн патне кĕшĕлтетсе кайнă вĕт-ха вĕсем, хăйсенчен култарса çӳреççĕ. Хамăрăн та урăхларах ĕçлемелле. Çавна шута илсе хаçат кăларма пуçлас тетĕп. Эсир вара ăна халăх хушшине сарассине йĕркелĕр.

Таланов кун пек хăюлăха пĕрремĕш хут курать. Пăхма Нил Гаврилов лутраскер кăна, шухăшпа, хастарлăхпа пуринчен çӳллĕ тăрать. Уçăмлă ĕç çынни иккен вăл, кун пеккисем наци конгресĕнче те сахал.

Чăнах та, тепĕр темиçе кунтанах Таланов аллине çĕнĕ хаçат лекрĕ. Мĕн тери савăнăç! Ăна вăл пĕр сăмах сиктермесĕр вуласа тухрĕ те тӳрех мĕнле тиражпа тухнине пăхрĕ. Ба! Шупашкарта тухакан хаçатсенчен пуринчен те нумайрах иккен. Статйисем тата... Пĕри тепринчен çивĕчрех, хулан тепĕр енлĕ пурнăçне уçса параканскерсем. Пиртен нумай япалана пытарса усраççĕ иккен, бюджет укçи ăçта кайнине те, çĕр айĕнчи трубасене паянах ылмаштарма пуçламасан çитес вăхăтрах мĕн кĕтнине те, хула администрацийĕн ăшăпа çутă паракансен умĕнчи парăмĕ çур миллиарда яхăн пулнине те...

Анчах пичет вăйĕпе лешсем те питĕ ăнăçлă усă кураççĕ, уйрăмах хула хаçачĕпе. Акă, паянхи номерте паллă çынсем чĕнсе каланине пичетленĕ. Пĕри республикăри коммунистсен ертӳçи, вăл та чăваш. Паллă ĕнтĕ, кусем асли мĕн хушнинчен пăрăнас çук, Ефремовшăн сасăлас çук. Ку çеç те мар, ватăскерсем килтен киле хальхи мэршăн сасăламалла тесе çӳреççĕ. Тепри Мускавра пурăнакан паллă генерал, ку та чăваш, Шупашкара шăрттан çиме килкелесе çӳрекенскер,

кунти лару-тăрăва пачах та пĕлменскер. Тахăшĕ ун патне çитсе алă пустарса килнĕ вĕт-ха. Виççĕмĕшĕ вара Мускав хулин пуçлăхĕ, кунтисемшĕн питĕ сумлă хăна шутланать. Вăл килсе çӳрени пирки темĕнле сăмах та çӳрет, анчах тĕрĕсреххи Шупашкарти пысăк заводсене Мускав аллине çавăрса илессиех ĕнтĕ. Ахальтен кунти пурлăх комитечĕн пуçлăхне Мускав çыннине лартмарĕç пуль. Майне пĕлеççĕ вĕсем, мĕншĕн Шупашкар мэрне пулăшас мар.

Çук, кун пек юрамасть. Таланов хăйĕн юлташĕсене пухрĕ те лару-тăрупа паллаштарчĕ. Вара вĕсем çĕнĕ хаçата кашни общежитие, кашни пӳлĕме çитерме тĕллев лартрĕç, хаçат уйăрса панă çĕре кĕчĕç. Ира та пĕрлех пулчĕ, фирмăри çынсене тĕрĕслесе пăхма тесе çирĕм хаçат кăна илчĕ. Кăштах шикленӳ те пур, директор курсан мĕн калĕ-ши? Вара вăл тепĕр кунне ĕçе иртерех кайрĕ те хаçатсене рабочисем иртсе çӳренĕ çĕрти кантăк саккисем çине хурса тухрĕ, каярах тĕрĕслерĕ, цеха та кĕрсе пăхрĕ, лешсене илсе пĕтернĕ иккен. Тĕрĕс тăваççĕ, ку хаçат шăпах ахаль çынсем валли, вулаччăр, тен, шухăш-кăмăлне çырса пĕлтерекенсем те тупăнĕç.

Хаçат салатасси те çăмăл ĕçех мар, чăрмав кӳрекенсем тупăнсах тăраççĕ. Ав, пĕр общежитинче икĕ студент хаçат чĕрки йăтса кĕнине комендант курать те тытса чарать, ку хаçата салатма юрамасть тесе туртса илме хăтланать. Лешсем парасшăн пулман, тавлашса тытăçсах каяççĕ, вахтерĕ милицие шăнкăравлама пуçлать. Кусен вара тухса тармалли кăна юлать, çапах та хаçатне пĕрлех илсе тухаççĕ. Хăйне майлă урок ĕнтĕ, чеерех пулмалла, хĕве е дипломата чиксе илсе кĕмелле.

Тĕнче вăрттăнлăхне питĕ тимлĕ асăрхама пĕлекенсем уçса пани паллă ĕнтĕ. Юрать-ха, çавсем пур. Енчен те Исаак Ньютон панулми мĕншĕн хăй тĕллĕн татăлса ӳкнине сăнаман пулсан пире валли физика законĕ çырса хăвараймастчĕ.

Асăрхамалли, сăнамалли вăл кулленхи пурнăçра та темĕн чухлех. Акă паян Таланов хаçат салатма пынисен шутĕнче пĕр арçын пуринчен те ытларах илнине асăрхарĕ. Чим-ха, çак çынах ĕнер хальхи мэрăн суйлав штабĕнчен тухатчĕ мар-и? Тен, вăл та мар, пĕр пек çынсем пулаççĕ вĕсем. Çапах та лешĕ кайсанах камăн хăш урамра салатмаллине çырса хунине пырса пăхрĕ: Иван Франко урамĕшĕн яваплă иккен. Чăтса тăраймарĕ, чупса тухса леш арçын ăçталла кайнине пăхрĕ. Васкамасть иккен, тухнă-тухманах пирус чĕртсе ячĕ, хуллен çулăн тепĕр енне каçрĕ те сăра сутнă çĕре кĕрсе çухалчĕ. Таланов çаплипех пăхса тăчĕ.

– Улатимĕр! Эпир кайрăмăр, – илтĕнчĕ арçын сасси. Университетрисем хаçат илсе каяççĕ иккен, каччăпа хĕрача. Шăп çав самантра леш арçын тухрĕ те пачах тепĕр еннелле утрĕ.

– Атьăр манпа пĕрле, – терĕ Таланов студентсене.

– Ăçта каймалла вара? – ыйтрĕ хĕрачи.

– Кайран веçех каласа парăп. Халь шăп пырăр.

Ак тамаша, леш арçын кĕлли чалăшнă пушмакне сĕтĕрсе утса теприсен штабĕ патне çывхарса пычĕ. «Лешсене кĕртсе парать ĕнтĕ, – тавçăрса илчĕ тинех Улатимĕр. – Ахаль мар ĕнтĕ, сăра ĕçмелĕх тӳлеççех». Мĕн тумалла-ха? Сумкине туртса илсен кăшкăрашма тытăнĕ. Çук, урăхларах тумалла. Таланов пĕрле пыракан хĕрача сумкине илчĕ те васкарах утса леш арçынпа танлашрĕ, штаб патне çитсессĕн: «Кунта мĕн чухлĕ тӳлеççĕ вара?» – ыйтрĕ лешĕн умĕнче пĕр хаçатне силлесе кăтартса.

– Пĕриншĕн вунă пус. Эсĕ мĕншĕн питĕ сахал илнĕ вара? Кунта сан пĕр бутылкăлăх та пулмасть.

– Э-э, çук. Бутылкăлăх пулатех. Эпĕ тепĕр çĕре паратăп.

– Унта миçе пус тӳлеççĕ вара?

– Çирĕм.

– Çирĕм пус? Мана та пĕрле илсе кайăр-ха, – тархаслама тытăнчĕ арçын чарăнса тăрса.

– Хăвăн кăмăлу. Ут эппин пĕрле, кунтан инçех мар, – терĕ Таланов. Каласса каларĕ те-ха, ăçта каймаллине тӳрех тавçăрса илеймерĕ. Тен, Ефремов штабне илсе каймалла мар-и? Алăкĕ çинче ун сăнĕ çакăнса тăнине курсанах тавçăрса илĕ те... Вара вăл çак çынпа Нил Гаврилов офисне çул тытрĕ. Çула май кăштах калаçкаласа та илчĕç, миçешер хаçат илнине те пытармарĕç.

Нил Гаврилов хăй патĕнчех. Таланов пĕчченех кĕчĕ те мĕнле тĕллевпе килнине кĕскен кăна ăнлантарса пачĕ. Нумай калаçса тăмалла мар, ĕçе хăвăрт туса ирттермелле. Гаврилов тӳрех тавçăрса илчĕ. Лешне чĕнсе кĕртрĕ.

– Санăн миçе хаçат вара? – ыйтрĕ Гаврилов.

– Пилĕкçĕр аллă. Анчах пурне те памастăп эпĕ, аллăшне Франко урамĕнчи хваттерсене çитермелле, почта ещĕкне пăрахмалла. Ман хыççăн тĕрĕслекенсем çӳреме пултараççĕ.

– Лар-ха эсĕ, кăштах калаçар, – терĕ Гаврилов сигарет сĕнсе. – Мĕн ятлă пулатăн-ха?

– Алексей.

– Алексей, ку вăл пирĕншĕн çав тери сахал. Ытларах кирлĕ.

– Ыран татах илсе килме пултаратăп.

– Çук, ыттисене те пĕлтересчĕ, ячĕсене калаймăн-ши? – ыйтрĕ Гаврилов. – Хăвна тата кам ăс пачĕ?

– Кӳршĕ арăмĕ суйлав штабĕнче урай тата савăт-сапа çăвать. Лайăх çĕре лекнĕ вăл, кашни каçах питĕрĕнсе ларса ĕçеççĕ тет. Юлашки юлни веçех ăна тивет. Мăшăрĕ валли те илсе тухать. Мана та хăналарĕç. Çав хĕрарăм упăшки сĕнчĕ. Вăл çак ĕçе унччен пуçланă иккен.

– Тусу мĕн ятлă вара санăн?

– Иван-и? Ванька Свеклов.

– Ыттисем мĕн ятлă тата?

– Сăнран паллатăп-ха. Пĕри Нинăччĕ пулас. Ыттисене пĕлместĕп. Пĕр вăхăтра пыман та.

– Алексей, итле. Акă сана çĕр тенкĕ. Ыран та çĕр тенкĕ пулĕ, енчен те ыттисемпе паллаштарсан.

– Мĕншĕн паллаштарас мар, – терĕ Алексей хĕпĕртесех.

Çапла турĕç те. Тепĕр кунне Талановпа Алексей кунĕпех хаçат пайланă çĕрте ларчĕç. Сутăнчăксем хаçат илсе тухнă чухне коридорта вĕсене Гавриловпа юлташĕсем кĕтсе тăчĕç, юнашар пӳлĕме чĕнсе кĕртсе калаçрĕç, интервью илнĕ пек çырса та илчĕç, сăнӳкерчĕксем те турĕç, паллах, пушă алăпах кăларса ячĕç. Пурĕ пилĕк çын тупăнчĕ.

Хаçатăн çитес номерĕнче вара хула пуçлăхĕн команди мĕнле ĕçленине тăрă шыв çине кăларакан паха статья пичетленсе тухрĕ. Çавăнтах тата тепĕр лайăх материал та пулчĕ. Чечеков тăрăшнипе культурăпа искусство çыннисем Ефремовшăн сасăлама чĕнсе каланине пичетленĕ. Чечековпа пĕрле тата пиллĕкĕн алă пуснă, пурте чăвашсем пĕлекен паллă çынсем. Анчах алă пусакансене тупма çăмăлах пулмарĕ, пĕри ав прописка хулара мар тесе пусмарĕ, тепри суйлав вăхăтĕнче командировкăна каятăп терĕ, виççĕмĕшĕ хăй тепĕр кандидатшăн пуснине пĕлтерчĕ. Çапах та хăюллисем тупăнчĕç. Таланов çакăншăн питĕ хĕпĕртерĕ.

Суйлав участокĕнче асăрхаса ларакансен шутĕнче пăлхарçăсем те пулчĕç. Çакă вăл вĕсемшĕн вуншар лекцирен те усăллă ĕç пулчĕ, пурнăç шкулĕ тесессĕн те юрать. Çамрăксем куç умĕнчех улшăнса пычĕç, хăйсене мăнаçлăрах тытни сисĕнчĕ.

Пилĕк кандидатран иккĕмĕш тура хальхи мэрпа Ефремов тухрĕç. Çакă вара лешсемшĕн пач кĕтмен хыпар пулчĕ. Вĕсем пĕрремĕш туртах çĕнтересси пирки пачах та иккĕленмен. Ĕç тухмарĕ. Пĕр виçĕ кун хыççăн шок текеннинчен тухсассăн ĕç

мелӗсене пачах улӑштарчӗҫ. Гаврилов йӗркеленӗ хаҫата Шупашкарта пичетлеме чарчӗҫ, пӗр типографи те илмест, Йошкар-Олана кайма тиврӗ; Ефремова халӑхпа тӗл пулса калаҫма йывӑрланса ҫитрӗ, культура керменӗсене кӗртесшӗн пулмарӗҫ, хаҫат саракан икӗ студента тытса хӗнерӗҫ; Ефремов сӑнӳкерчӗкне темӗн чухлӗ ҫаксан та ирхине тӑнӑ ҫӗре сӗвесӗве пӑрахрӗҫ; хулара хальхи мэр сӑнӗ кӑна тӑрса юлчӗ, ун майлӑ радиопа, телевиденипе правительствӑри пысӑк чинсем туха-туха калаҫрӗҫ, Нил Гаврилов патне темиҫе хутчен те пырса хаҫата пачах хупассипе хӑратрӗҫ, хӑш-пӗр статьясемшӗн суда та пачӗҫ, ӗҫ тухмарӗ.

Гаврилов вӑл нумай калаҫаканскер мар, анчах вӑл ҫырнӑ сӑмах вара питӗ ҫивӗч иккен, тӗрӗссине калать, ӑна ниепле те саваласа пӑрахаймӑн. Ун хаҫатне халӑх йышӑнчӗ. Чечеков пулӑшӑвӗ те питӗ вырӑнлӑ пулчӗ, уйрӑмах радиопа темиҫе хут та чӑвашсене чӗнсе калани, паллах, тӳлевлӗ мелпе ӗнтӗ. Халӑх ӑна пӗлет, ун сӑмахне хаклать, ма тесессӗн Чечеков вӑл ӑсчах кӑна мар, паллӑ ҫыравҫӑ та, чи лайӑх юрӑсен авторӗ. Ун юрри радиопа янӑраман кун иртмест. Тӗрӗссипе каласан, Ефремов майлӑ ӗҫлекен ҫыравҫӑсенчен Чечеков пӗчченех тӑрса юлчӗ, ыттисене е илӗртсе, е хӑратса пӑрса ячӗҫ. Шурӑ ҫуртрисем Чечековпа та калаҫса пӑхрӗҫ, Ефремовшӑн тӑрӑшнине сивӗлерӗҫ, анчах лешӗ хӑй ҫулӗнчен пӑрӑнмарӗ, Шупашкар мэрӗ чӑваш пулмалла тесе статья ҫырчӗ.

Иккӗмӗш турта Ефремов кӑшт кӑна выляса ячӗ. Чылай ҫӗрте, уйрӑмах рабочисем пурӑнакан участоксенче, выляса та илчӗ. Чи пысӑк кӑтарту студентсен хулинче пулчӗ. Таланов тӑрӑшни сая каймарӗ. Эх, енчен те чӑвашсем пайланса кайман-тӑк, пӗр ушкӑнпа Ефремовшӑн тӑрӑшнӑ пулсассӑн... Наци конгресӗ те хӑй шухӑшне уҫӑмлӑн калаймарӗ; чӑваш ҫыннишӗн йӗркеленӗччӗ вӗт-ха ӑна!

Ҫапах та чӑн-чӑн чӑвашсен ӗҫӗ уссӑр пулмарӗ, самай курӑмлӑ ҫитӗнӳ тесен те юрать. Чылай ҫыннӑн куҫне уҫрӗ вӑл, президент пулма ӗмӗтленекенсен карттисене те пӑтраштарса ячӗ. Ефремов майлисем ҫакӑ суйлавран вӑйланса, ӑсланса тухрӗҫ, мӗнле ӗҫлемеллине те вӗренчӗҫ. Апла эппин Шупашкарта чӑн-чӑн чӑвашсем пӗтмен-ха, тен, малашне нумайрах та пулӗҫ.

Таланов вара урӑхларах пӗтӗмлетӳ турӗ: пӗтӗм вӑя ҫамрӑксем еннелле ямалла, ача пахчинчен пуҫласа аслӑ шкула ҫитиччченех наци туйӑмне вӑйлатса пымалла, вӗрентекенсене те пулӑшмалла, чылайӑшӗ кивӗллех ӗҫлеҫҫӗ-ха. Суйлав кунӗ Таланов Ирӑпа курса калаҫасчӗ тесе хӑй вӗреннӗ шкула

кӗнӗччӗ. Паллă ӗнтӗ, Ирина суйлав мӗнле иртнине Ефремов майлисен шучӗпе асăрхаса ларать, тепӗр сӗтел хушшинче вара Улатимӗре вӗрентнӗ ватă учитель, вăл та чăваш, анчах коммунист пулнăран Ефремова хирӗççисен шутӗнче. Вăт çапла, чăвашшăн чăваш хурăнташах мар çав. Мӗншӗн çапла пулса тухать-ха, мӗншӗн кӳршӗри тутарсем пек туслă мар-ха эпир? Пирӗн чуна, пирӗн юна çапла кам пăсса янă-ши вара?

Таланов хăй тусӗсене пухрӗ. Суйлавра мӗнле ӗçленине сӳтсе явнă хыççăн çӗнӗ тӗллевсем палăртрӗç. Вӗсенчен пӗри районти çамрăксемпе ӗçлесси, тепри вара пуçа ыраттараканскерех.

Таланов хăй сӗнӗвне çапла ăнлантарса пачӗ.

– Эпир чăваш ӗçчен çын пулнине палăртма юрататпăр, ыттисем те мухтаççӗ. Ăçтан мухтамăн-ха: чи хура та йӳнӗ ӗçе тăваканӗ шăпах çавă пулать те. Урам шăлать, çурт купалать, выльăх ӳстерсе парать, хулари йывăççене, чечексене шăварса тăрать, начальниксене урай çуса парать... Юрласса та «алран кайми аки-сухи» тесе юрлать. Çитменнине çак юрра конгресс гимнӗ тесе йышăннă. Аса илӗр-ха, мӗнле сăмахсемпе вӗçленет-ха вăл?

– «Ай ӗçер-и, ай çиер-и», – терӗ пӗри.

– Вăт çапла, ӗçнӗ-çинӗ чухне пӗрле-ха эпир, пӗрне-пӗри хӳтӗленӗ чух вара туслах мар, чунра та мăнаçлăх сахал. Чăваш арçыннин хăюлăхӗ в ăл арăмӗпе хирӗçнӗ чухне çеç çивӗч, çапса пăрахма та хатӗр. Тата тепӗр япала, хăй телейне пӗччен шырать. Заводсенче ӗçлекенсен шутне кӗскетнӗ чухне те çӗршер чăваш кар! пухăнса: «Эсир мӗншӗн чăвашсене ӗçрен кăларса яратăр. Çакă завод пирӗн мăн асаттесем пурăннă çӗр çинче ларать. Пирӗн пурин те кунтах ӗмӗр вӗçлемелле. Эсир юриех пире кăларса тӗрлӗрен варягсене ырлăх туса парасшăн. Пăхăр-ха, завод управленинче те чăвашсем çукпа пӗрех. Пирӗн чухăнлăха пула малтан акцисене сăптăрса илтӗр, халӗ хамăра кутран тапатăр. Çук! Эпир ниçта та каймастпăр! Кирлӗ пулсассăн ыттисене кӗскетӗр!» – теме хăюллăх çитерейместӗ вӗсем. «Ах, мана тӗкӗнмерӗç-ха», – тет те лăпланать, ыттисемшӗн хыпăнмасть.

– Аплах мар ӗнтӗ, Улатимӗр, – терӗ пӗри, – тăвансемпе йӗркеллех пурăнаççӗ вӗт-ха.

– Çук, эп ун пирки мар, çак ырă туйăм наци шайне çити çӗкленейменнине каласшăн. Чăваш чӗлхине суд тунă чухне те ăна хӳтӗлеме пилӗк çын кăна пынă теççӗ. Йывăр пурнăç чăваша хăй камне мантарса пынă. Ӗлӗк-авал вăл пӗр аллипе ӗç хатӗрӗ тытнă-тăк, тепринче чукмар е хӗç пулнă. Хӗç тытма маннă арçын ăçтан хăйне харсăр та хăюллă тыт-

калатăр-ха. Пăхăр-ха эсир, Кавказра пурăнакансем уява мĕнле тумланса тухаççĕ, кинжалсăр пĕр арçын та çук. Чăваш арçынĕ вара тĕрленĕ кĕпе тăхăнать те Шупашкар урамĕпе ташлам пекки тукаласа сиккелесе пырать. Атьăр-ха çакăнта пĕр çĕнĕлĕх кĕртер, хамăр камне уçăмлăрах кăтартар.

Вара вĕсем республика кунне уявланă чухне чăваш çамрăкĕсен колоннине йĕркелесси пирки тавлаша-тавлаша пĕр чĕлхе тупрĕç, хатĕрленме тытăнчĕç...

* * *

Пĕрре çапла Улатимĕрпе Ира троллейбусран тухса «Шанхай» еннелле пăрăннăччĕ кăна, юнашарах машина кăшкăртни илтĕнсе кайрĕ, кăшкăртать те кăшкăртать. Кусем çаврăнса пăхрĕç. Кадеров иккен. Тӳрех çамрăксем патне утса пычĕ.

– Ира, юлташупа паллаштар ĕнтĕ.

– Таланов Владимир, – пĕлтерчĕ хĕр.

– Кадеров, Ира ĕçлекен фирма директорĕ.

– Питĕ аван, сирĕн ята илтнĕччĕ-ха, хăвăр çуралнă яла пулăшни çинчен çырнине те вуланăччĕ.

– Вăл нимех те мар-ха, Ира, ăçталла çул тытнă вара эсир? – ыйтрĕ именнине пула хĕрача сăнран кăштах улшăннине асăрхаса. – Чим-ха, Таланов... Леш çамрăксен ертӳçи мар пуль те?

– Çавă вăл, – хĕпĕртесех пĕлтерчĕ Ира.

– Ну Ира, именсе ан тăр, кун пек каччăна алăран ан вĕçерт, – кулса илчĕ Кадеров. – Халĕ вара ăçталла?

Ира текех пытарма шутламарĕ, хăйсем ăçта пурăннине тĕрĕссипех калас терĕ.

– Ав çав «хулара» пурăнатпăр эпир, – терĕ толь витнĕ лутра çуртсем еннелле тĕллесе кăтартса.

– Атьăр-ха, ларăр, кĕрсе курам сирĕн поселока, – терĕ директор машина алăкне уçса. – Эсир вара экскурсовод пулăр.

Лешсем килĕшрĕç.

Малтан вĕсем хурал пӳрчĕ патĕнче чарăнса тăчĕç, кĕрсе те тухрĕç. Тасалăх тĕлĕшĕнчен япăх ĕнтĕ, табак сĕрĕмĕ те сывлăша самаях йывăрлатнă. Чи пахи те телефон пурри кăна. Унччен вăл та пулман вĕт-ха.

– Ку пӳрте хамăр вăйпа лартнă, Владимир тăрăшнипе,– терĕ Ира хăй каччине директор умĕнче кăштах та пулин ырласа илес кăмăлпа. – Вăл халĕ кунта староста шутланать.

– Питĕ аван, эсир мана хăвăр пурăнакан килсене

кăтартаймăр-ши? Нивушлĕ тĕп хула сăнне пăсакан вырăна пĕтерме май çук? Ĕçлекен çынсемех пурăнаççĕ-и вара кунта?

– Унччен пурте тенĕ пекех хулара ĕçленĕ, халĕ апла мар,– пĕлтерчĕ Таланов. – Чылайăшĕ шабашкăна çӳрет.

– Ку та Шупашкарах вĕт-ха, – тĕлĕнчĕ çĕнĕ чăваш.

– Пурте тенĕ пекех чăвашсем пурăнаççĕ, – хушса хучĕ Таланов. – Акă, хĕрринчен иккĕмĕшĕ Ирăсен килĕ.

Чăваш йăлипе хĕрĕн хăнасене кĕрсе тухма сĕнмеллеччĕ ĕнтĕ, анчах хăяймарĕ, ашшĕ ӳсĕр пулсан тата...

– Сире хамăр пата чĕнĕттĕм, тин çеç урай сăрланă та йывăр сывлăш тухса пĕтмен-ха, – терĕ Ира.

– Атьăр пирĕн пата, кунтан инçех мар, – сĕнчĕ Таланов аллипе айккинчи урама кăтартса.

Елена Ивановна килтех иккен, хапăл тусах кĕтсе илчĕ, тĕпеле иртме сĕнчĕ те газ плити патĕнче тăрмашма пуçларĕ, хăйне пулăшма Ирăна чĕнсе илчĕ. Кадеров вара Таланов пирки ыйтса пĕлме тăрăшрĕ: ăçта ĕçленине, шалу мĕн чухлине, «Пăлхар» пĕрлешӳ çинчен те пĕлесшĕн пулчĕ.

– Аслисем шурă çурта чĕнсе илсе калаçрĕç, мĕнле тĕллевпе чăмăртаннине ыйтса пĕлчĕç, хăйсемпе канашласа ĕçлеме сĕнчĕç, укçапа пулăшма та сăмах пачĕç, – пĕлтерчĕ Таланов.

– Вăл çапла пуль те-ха, анчах кунта пĕр иккĕленӳ пур. Вĕсемпе ыталашса кĕрсе кайсан эсир хăвăр сăн-сăпата çухатма пултаратăр. Астăвăр, чăвашлăха аталантарас тĕллевпе лава кӳлĕннĕ çынсем пысăк шалу илекен чиновниксем хушшинче питĕ сахал. Пулсассăн та хăйсене хăравçă мулкачсем пек çеç тыткалаççĕ. Укçа вăл питĕ ултавлă япала, ăна пуринчен те илме юрамасть. Чечеков калашле, укçа вăл вăлтари ăман пекех. Куртăмăр ĕнтĕ, наци конгресĕпе мĕн туса хучĕç вĕсем. Малтан мĕнлеччĕ-ха? Мĕнле çивĕч заявленисем тăваттăмăр, пикетсемпе митингсем ирттереттĕмĕр, президент та чутах конгресс çынни пулатчĕ. Халĕ вара пачах урăхла.

– Тен, паян çитменлĕхсем сахалрах.

– Халĕ те пайтах вĕсем. Кĕçех республика аллинче нимĕн те юлмасть ак, веçех сутса пĕтереççĕ. Пĕлтĕрхи вăйлă тырпула та алла илеймерĕмĕр, çĕршер гектар юр айне юлчĕ. Никам та нимĕн те шарламарĕ, ятлакан та тупăнмарĕ. Пуçлăхсемшĕн хут купăс, хĕрсе тыră вырнă вăхăтра вунă пин çухрăма çити олимпиада курма каяççĕ. Наци конгресĕ вара шыв сыпнă пек ларать.

– Иртнĕ суйлавра та хăй сăмахне уçăмлăн калаймарĕ-ха

вăл, – терĕ Таланов Кадеровпа пĕр майлă шухăшланине палăртса. – Мĕншĕн çапла пулса пырать-ха?

– Эх, шăллăм, çӳлтисен политикине, кам кампа калаçса татăлнине эпир нихăçан та пĕлес çук.

– Пире Чечеков яланах наци конгресĕ вăл пуçлăхсем çывăрса каясран пăван лашана çыртса тăнă пек çыртма кирлĕ тетчĕ.

– Питĕ тĕрĕс калать вăл. Правительствăн ун пурте пур, укçи те, министрсем те, çавсене лайăхрах ĕçлеттермелле, халăх укçине халăхшăн тăкаклама хистемелле. Шăллăм, эсĕ вĕсен укçине илме ан васка-ха, укçаллăрах чăвашсемпе калаçса пăхам, тен, пӳлĕм те тупса парăпăр.

– Эй, политиксем! Çитĕ сире унта тавлашса, – терĕ Елена Ивановна, – килĕр-ха, сĕтел хушшине ларăр. Нимех те çук та-ха, çăкăртан аслă пулма хушман теççĕ вĕт.

Калаçу вара сĕтел хушшинче урăхларах çулпа кайрĕ. Кăмăла уçаканни светофор вырăнне кăнтарса ларакан эрех кĕленчи ĕнтĕ. Йăли çапла, хăна килсессĕн сĕнсе пăхмаллах. Кил йĕкĕчĕ кĕленчине уçрĕ те черккесене тултарчĕ.

– Ира каласа пачĕ-ха, кун пек сумлă хăна пире чыс туни пулманччĕ-ха. Атьăр-ха тĕлпулушăн ĕçсе парар, – сĕнчĕ Елена Ивановна черккине ыттисемпе шаккама тесе сĕтел варринелле тăсса. – Ырă çынсем килсех тăччăр.

Кил хуçи çур черкке ĕçсе пачĕ, Ирăпа Таланов тута патне кăна тытса илчĕç, Кадеров та ĕçмерĕ.

– Ĕçсе парăр ĕнтĕ, – хăналасшăн пулчĕ Елена Ивановна.

– Çук, çук, эпĕ машинăпа-ха, – терĕ хăна. – Владимир, эсĕ тата мĕншĕн ĕçместĕн?

– Вăл урă чăвашсен ушкăнне çырăннă, – Кадерова пӳлсех пĕлтерчĕ Ира.

Юратăва пытарма май çук, калаçура та, сăн-питре те паллă. Хăйсем кăна сисмеççĕ вĕсем, юратакансем.

– Чимĕр-ха, Елена Ивановна, çамрăксен шăпине татса парасси вăраха кайман-и-ха сирĕн? Мĕне кĕтеççĕ вара вĕсем? – кулса илчĕ Кадеров.

– Хам та çаплах шутлатăп-та-ха, шарламаççĕ вĕт.

– Йĕкĕт, асту, шăхăртса хăвараççĕ ак сана. Ĕçрисем те суккăр мар.

– Мĕскер эсир... Мана урăх никам та кирлĕ мар, – хĕрелсе кайрĕ чиперкке пичĕ.

– Ну юрĕ, – пăхса илчĕ сехечĕ çине директор, – ман кайма вăхăт ĕнтĕ. Туя чĕнме ан манăр, тен, хăйматлăх та пулăп. Эсир хирĕç мар-тăк Ирăна хам фирмăрах хăварасшăн-

ха эпĕ. Тĕрĕслесе пăхрăмăр ĕнтĕ, ĕçрен хăрамасть, хăйне йĕркеллĕ тытать, ыттисем пек çăмăлттай мар. Кун пирки каярах калаçăпăр тата. Вăхăт тупса пĕрле кĕрсе тухăр-ха эсир. Халĕ кайрăм. Çăкăр-тăваршăн тавах сире, – терĕ Елена Ивановна çине пăхса илсе.

Çамрăксем Кадерова алă сулса ăсатса ячĕç те каялла таврăнчĕç, Елена Ивановнăшăн савăнăçлă хыпар илсе килчĕç, Хĕрпе каччă амăшне иккĕшĕ пĕрлешме шутлани çинчен пĕлтерчĕç. Ĕнтĕ Талановсен килĕнче кĕçех пысăк улшăнусем пулса иртмелле.

* * *

Паян Шупашкарта иртенпех юрă-кĕвĕ янăрать, республика кунне уявлама хăнасем йышлăн килсе çитнĕ. Чăваш чунĕ кунталлах туртăнать çав. Тĕрлĕ çĕртен килнĕ хăнасем ĕнер наци конгресĕнче пулчĕç, хăйсем патĕнчи чăвашсем мĕнле пурăнни çинчен каласа пачĕç. Паян вара вĕсем республика площадĕнче кашни районтан килнĕ юрă-ташă ăстисем иртсе пынине пăхса тăраççĕ. Кунтах республика президенчĕпе Мускавран килнисем, хула мэрĕ те пур.

Кĕтнĕ уяв пуçланчĕ. Малтан историри паллă тапхăрсене аса илчĕç. Акă, Хаяр Иван хăй çарĕпе килсе çитрĕ. Лаши çинчен анчĕ те хирĕç тухнă чăвашсен аллинчен çăкăрпа сăра тутанса пăхрĕ. Апла-и, капла-и, историксем çапла çыраççĕ те, кăтартас пулать ĕнтĕ. Чăвашсем хӳтлĕх шыраса Мускава элчĕсем янă текен сăмах та çӳрет те-ха, анчах камсем кайнине, кампа тĕл пулса калаçнине, мĕнле хут çине алă пуснине лайăххăн никам та пĕлмест.

Акă, чĕнтĕрлесе илемлетнĕ капăр урапа çинче питĕ мăнаçлăн Кĕтерне патша ларса пырать. Эх, мăнтарăн, макăрса ярас килет! Хĕрарăм патша тумĕпе халăх умне халĕ те общежитире пурăнакан чăваш артистки тухнă иккен. Пултарулăхĕ Кĕтерне патшана сăнарласа памалăх та çитет, анчах мăнтарăн пикен пурăнмалăх аванрах кĕтес çук.

Кăшт каярах Ехрем хуçапа виçĕ ывăлĕ утса пыраççĕ. Аслипе кĕçĕнни хула пуçлăхĕ пулнăскерсем. Атăл хĕрринелле тунсăхлăн пăхса хăйсен çурчĕсем патнелле анса кайрĕç. Юратьха çавсем лартса хăварнă, атту кивĕ хулара куçа илĕртекен çурт та тупăнас çук.

Чăваш автономине тунă çула та манман. Владимир Ульянов алă пуснă декрета шултра саспаллипе çырса йăтса тухнă. Кăшт каярах капăр тумлă артистсем пĕрисем юрлаççĕ, теприсем

ташлаççĕ, купăссăсем те йышлăн. Вĕсем хушшинче республика тулашĕнчен килнисем те пур иккен. Пурин питĕнче те савăнăç çиçет.

Акă, инçетре питĕ çӳле çĕкленĕ чăваш ялавĕсем курăнса кайрĕç. Тĕреклĕ утсем çинче ларса пыракан каччăсем йăтса пыраççĕ иккен. Тумĕсем пурин те пĕр евĕрлĕ, сарлака чĕн пиçиххинчен чукмар çакнă. Лашасен иккĕмĕш ретĕнче капăр тумлă амазонкăсем, кашниех кăкăр урлă ухă çакнă. Сулахай енче йĕпписем, пурте тухьяпа. Кусем спорт шкулне çӳрекен юланутçăсем пулчĕç. Вĕсем хыççăн вуншарăн тăрса тухнă çамрăксем: каччăсен пĕрречĕ йăлтăртатса тăракан вăрăм хĕçпе, тепри – чукмарпа, виççĕмĕш ретĕнче ухă çакнă хĕрсем. Талановпа юлташĕсем çине тăнипе кашни районтанах килнĕ иккен. Улатăр енчи чăваш ялĕсенчен те пур. Пăрачкавсем кăна çук. Паллă ĕнтĕ, чăваш хĕç тытнине ырламарĕç пулас. Пачах çĕнĕлле япала вĕт, ку таранччен Шупашкар кун пеккине курманччĕ-ха. Мĕнле ăнланса илмелле, мĕнле хак памалла – никам та татăклăн калаймасть «пăлхарçăсемсĕр» пуçне. Кусемшĕн пурте паллă. Суха тунисĕр, кирпĕч хунисĕр, пир тĕртнисĕр, противогаз тăхăнса хими хĕç-пăшалĕ тунисĕр пуçне чăваш хĕç тытма та пултарать иккен. Улăпсемпе амазонкăсем мăнаçлăн утса пынине курсассăн чупса çывхарса ыталаса илес килет. Айккинче пăхса тăракан Чечеков капланса çитнĕ куççульне тытса чараймарĕ, сăмса тутрипе шăлса илчĕ. Кун пеккисем татах та курăнчĕç. Темиçе çĕр çул хушши пулман япала мар-и-ха çакă!

Каярах вара ятарласа хатĕрленĕ вырăнсенче юрă-ташă пуçланчĕ. Каçченех кĕрлерĕ хула. Тĕттĕмленсен вара тупăран пĕлĕтелле тĕрлĕрен тĕслĕ вут-хĕм сирпĕтрĕç, пиншер çын ахлатса кăшкăрса пăхса тăчĕ. Чылайăшĕ киле çурранах таврăнчĕ, вĕсен шутĕнче пĕрне-пĕри алăран тытса пыракан Талановпа Ира та пулчĕç. Çакă каç савнисем чуп тусах уйăрăлчĕç. Чĕрере çĕкленӳ, уяври мăнаçлăх халĕ те сивĕнмен-ха, тен, малашне те çаплипех юлĕ.

Тепĕр кунне çынсемпе калаçса пăхнă хыççăн çакă паллă пулчĕ: ĕнерхи уяври чи вăйлă самантсенчен пĕри вăл çамрăксен колонни пулнă иккен. Кун пирки тĕрлĕрен калаçу çӳрет, тавлашусем те пулкаласа иртеççĕ курăнать. Вырăссем кăмăлсăр иккен. Йывăçран тунă хĕç те хăрататть вĕсене. Чăвашлăха уçăмлăрах кăтартма тăрсанах национализм! тесе кăшкăраççĕ. Вырăсла хаçатсенче шăл йĕрсе çырнă статьясем те тухкаларĕç, «Пăлхар» пĕрлешĕве президент ятласса кĕтрĕç. Анчах лешĕ нимĕн те шарламарĕ.

Таланова тав тăвакансем те тупăнчĕç. Нил Гаврилов вара, улăпсемпе амазонкăсене хăй укçипе тумлантарнăскер, малашне те пулăшса пыма сăмах пачĕ.

Ира кĕçех Кадеров Таланова хăй патне кĕрсе тухма хушнине пĕлтерчĕ. Малтан шăнкăравласа пăхмалла иккен; ĕçлĕ чăваша тытма çăмăлах мар, кабинетра нумай лармасть.

Калаçу лайăх хыпартан пуçланчĕ: Кадеров «пăлхарçăсем» валли пĕр пĕчĕк пӳлĕм тупнă иккен, арендăшăн тӳлессине те хăй çине илнĕ. Тепĕр çĕнĕ чăваш телефон лартса пама сăмах пачĕ тет.

– Шанчăк çамрăксенче, çавсене пулăшмалла, – терĕ Кадеров. – Ман кăштах кунти ĕçсем пирки те калаçса пăхас килет. Малтан аплах марччĕ, халĕ вара ĕçлекенсен йышĕ ӳссе пынăçемĕн унчченхи пек туслăх çуккă пек туйăнать. Темĕскер çитмест. Те урăхларах çынсем тупăнчĕç, харкашса илесси те пулкалать. Эсĕ педагог вĕт-ха, психологипе çырнă кĕнекесем те тыткаласа курнă ĕнтĕ, мĕнле те пулин тишкерӳ тума май çук-ши?

– Питĕ тĕрĕс шухăш. Паян урăхла юрамасть. Социологи мелĕсене чухлатăп-ха. Анчах çакна тума манăн коллектива лайăхрах тишкермелле, ĕç йĕркисене тĕрĕслемелле, çынсемпе паллашмалла. Анкетăри ыйтусене те тĕрĕс лартма пĕлмелле, – пĕлтерчĕ хăй шухăшне Таланов.

– Тен, сана çур ставкăпа ĕçе илмелле? Уроксем нумай-и вара санăн? – ыйтрĕ хуçа.

– Вĕсем çителĕклех-ха, анчах кун пек тусан çамрăксемпе ĕçлеме вăхăт пачах та юлмасть вĕт-ха.

– Апла-тăк урăхла тăвăпăр. Тен, сан учитель ĕçне пăрахсах кунта куçмалла, укçи те ытларах пулĕ. Калăпăр, пĕтĕмĕшле ыйтусемпе ĕçлекен пулăшуçă. Хам командировкăна кайсан тилхепене çирĕп тытса пыракан шанчăклă çын кирлĕ. Вобщем, шухăшласа пăх, ытлашши васкатмастăп.

Пачах кĕтмен сĕнӳ ĕнтĕ ку. Чечекова кафедра пуçлăхне суйланă хыççăн наука еннелле туртăнас кăмăл та пурччĕ. Кунта куçсан вара урăхла çулпа утма тивет. Укçа енчен япăх пулас çук-ха, секретарь те учительтен нумайрах илет. Хваттер ыйтăвĕ те канăç памасть, Елена Ивановна салтак амăшĕсен комитетне çӳренĕ хыççăн черет кăштах шунăччĕ-ха. Анчах темле çав, Талановсен хушамачĕ халĕ хула ертӳçисен пуçĕнче яланлăхах çирĕпленсе ларнă ĕнтĕ. Черет çитсен те пăрса хăварас хăрушлăх пур. Мэр хушнă пек тунă пулсан, тен, çак ыйту татăлнă та пулĕччĕ. Таланов ун пек çулпа каймарĕ.

– Ман пĕр ыйту пур-ха, – терĕ Улатимĕр Кадеров теле-

фонпа калаçса пĕтернине кĕтсе илсе. – Авлансан уйрăм кĕтес кирлĕ пулать вĕт-ха.

– Малтанлăха общежити парăпăр. Хăвна ĕçре лайăх кăтартсан урăхла мелсем те пулĕç. Сан умра халĕ пĕр тĕллев – фирмăна усăллă çын пуласси. Урăхларах кĕнекесем вуласа пăх. Акă кунтах мĕн чухлĕ вĕсем, – тĕллесе кăтартрĕ çӳлĕк çине, – ют чĕлхерен куçарнăскерсем те пур. Хамăр вара ку енĕпе пĕчĕк ача шайĕнче кăна-ха. Саншăн тата кунта тепĕр пикантлă япала пур. Ира çакăнтах юлсассăн ăна комплимент калакансем те, чечек паракансем те тупăнĕç, йĕрки çапла. Санăн вара çакна тĕрĕс ăнланма тăрăшмалла. Юратура пĕрне-пĕри шанни кирлĕ. Енчен те кĕвĕçӳ кăварĕ хыпса илсен кунти пуласлăх хупăнать.

– Юрать. Кăштах вăхăт парăр-ха шухăшлама, – терĕ те сывпуллашса пӳлĕмрен тухрĕ.

– Мĕн пирки чылайччен калаçса лартăр вара? – ыйтрĕ тӳрех Ира.

– Пурнăç пирки, Ира, пурнăç пирки. Каçпала калаçăпăр-ха, халĕ ман Чечекова курмалла.

Хыпар çине хыпар тенĕ пек Нил Гаврилов та Чечеков патĕнче иккен. Таланова хаваспах кĕтсе илчĕç, хăйсемпе пĕрле кофе ĕçме сĕнчĕç. Кафедрăри йĕркесем халĕ самай улшăннă, пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнусем те ăшăрах пек, çынлăх пур пек туйăнать. Калаçу мĕн пирки пынине пытармарĕç. Патшалăх Канашне суйланнă çын арăмĕпе ачисем çине тăнипе Израиле тухса каять иккен. Шăпах Восточнăй поселокри участокран, Шанхай та çавăнта кĕрет. Чечеков шучĕпе çав таркăн вырăнне депутата Нил Гаврилова тăратмалла. Пурин те пĕр майлă ĕçлесе çавна пулăшмалла. Çĕнтермелле.

– Таланов, санран та нумай килет, – асăрхаттарчĕ Чечеков. – Поселок старости вĕт эсĕ, чăваш «хулин» пуç-лăхĕ, – терĕ йăл кулса илсе.

– Шанхая пĕтĕмпех хам çине илетĕп.

– Ахалех иккĕленетĕн эсĕ, – терĕ Чечеков Гаврилова. – Унта ытларах чăвашсем пурăнаççĕ, Ефремовшăн та лайăх сасăланăччĕ вĕт-ха.

– Çапла, вăл та пулăшма хирĕç мар ĕнтĕ, – хавхалансах каларĕ Таланов.

– Хула пухăвне суйлама вăхăт çитсессĕн вара, Владимир, сана тăратăпăр.

Çапла алă çапсах калаçса татăлчĕç виçĕ пултаруллă чăваш.

Нил Гаврилова депутата суйлавçăсен пухăвĕ тăратрĕ, ертсе пыраканĕ Таланов хăй пулчĕ. Ефремов та тухса калаçрĕ, иртнĕ

суйлавра хӑйшӗн сасӑланисене тав турӗ. Политикӑри этикет ҫапла пулмалла та ӗнтӗ. Теприсем, ав, депутата тухсан тав тума та пӗлмеҫҫӗ, пырса та курмаҫҫӗ. Чылайӑшӗ хӑйсен депутатне палламасть те. Гаврилов та, Ефремов та ун пеккисем мар ӗнтӗ.

Пуху йӗркеллех иртсе пычӗ. Ӳсӗрпе кӑшкӑрашакансем пулчӗҫ-ха, анчах халӑх вӗсем хыҫҫӑн каймарӗ. Пӗри тата, каярах юлса пынӑскер, ҫине тӑрсах мӗншӗн каллех Патшалӑх Канашне суйланине ыйтса пӗлме тӑрӑшрӗ. Сӑлтавне тепӗр хут каласа пама тиврӗ. Леш ҫын Израиле кайнине пӗлсессӗн: «Ҫавӑ кирлӗ те ун пек чӑваша, арӑмӗ хыҫҫӑн сулланса ҫӳретӗр», – терӗ.

Тепӗр темиҫе кунтан Шанхайра ырӑ хыпар сарӑлчӗ, Владимирпа Ира мӑшӑрланнӑ.

Тем тума та вӗренсе ҫитрӗмӗр ӗнтӗ, чӑваш тӑвайман ӗҫ ҫӗр ҫинче ҫеҫ мар, космосра та ҫук пуль. Чӑваш ҫуратса ӳстерессине кӑна йӗркеллӗ тытса пырасчӗ. Ҫакна шӑпах чӑвашпа чӑваш пӗрлешнинчен пуҫламалла та ӗнтӗ. Апла эппин ҫамрӑк мӑшӑра иксӗлми телей, иккӗн выртса виҫҫӗн тӑма хӗрӳллӗ юрату тата ҫирӗп сывлӑх сунар.

Пӗр шухӑшлӑ ҫынсемпе тӑрӑшса ӗҫлесен депутата тухма пулатех иккен. Команда кирлӗ. Таланов ҫакна лайӑх астуса юлчӗ. Нил Гаврилов ҫӗнтерни вара савӑнӑҫпа пӗрлех ҫирӗп шанчӑк та ҫуратрӗ: Талановӑн депутата тухмаллах. Тӗллев лартнӑ-тӑк – пулатех ӗнтӗ. Ӑнӑҫу сунар ӑна, пултаруллӑ чӑваша.

*2002, кӑрлач.*